Б23
158968



ВИКТОР БАНЫКИН

# ЧАПАЕВ ÇИНЧЕН

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1953





Б28

ВИКТОР БАНЫКИН

# ЧАПАЕВ ÇИНЧЕН

Калавсем

158968



*Н. Евстафьев куçарнă*

Чувашской Республиканской БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
*ШУПАШКАР — 1953*

ПРОВЕРЕНО
2007, 2014

## ТУПМАЛЛИ

Тӗлӗк . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Мосолик ҫаранӗсем . . . . . . . . . . . . . . 14
Осиновка патӗнче . . . . . . . . . . . . . 20
Николаевска илни . . . . . . . . . . . . . 32
„Эпӗ—Чапаев“ . . . . . . . . . . . . . . 53
Кӑвайт умӗнче . . . . . . . . . . . . . . 59
Ҫул ҫинче . . . . . . . . . . . . . . . . 65
Стӗпка . . . . . . . . . . . . . . . . . 70
Хаклӑ хӑна . . . . . . . . . . . . . . . 83
Хваттерте пурӑнакан . . . . . . . . . . . 91
Тӗлпулу . . . . . . . . . . . . . . . . 97
Разведкӑна . . . . . . . . . . . . . . . 103
Пианино . . . . . . . . . . . . . . . . 108
Аташ . . . . . . . . . . . . . . . . . 115
Юмах . . . . . . . . . . . . . . . . . 123

---

*Обложка художника Ф. Осипова.*

Редактор С. *Павлов.* Худ. редактор *М. Силкина.*
Тех. редактор *И. Григорьев.* Корректор *Г. Петров.*

НТ 01071. Подписано к печати 15-IV-53 г. Бумага 84X108 $^{1}/_{32}$. Объем 6,56 печ. л.
Уч.-изд. 4,95 лис. Тираж 5000 экз. Заказ № 398. Цена 2 руб.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров Чувашской АССР.
*Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

Урал тăвĕ çийĕн,
Хир тӳремĕ тăрăх
Ушкăн кайăк евĕр
Вĕçсе иртнĕ май,
Отрядсем хаваслă
Юрă янратаççĕ,
Ылттăн хĕç çĕкленĕ
Чи малти—Чапай.

*Халăх юрринчен.*

Хыткан та шурă çӳçлĕ Вася ачасем хушшинче чи хăюлли пулнă. Шыв урлă пуринчен малтан ишсе каçма та, лаша утланса пуринчен хытă вĕçтерсе çӳреме те, хăйĕнчен вăйлăрах ачасем юлташне тапăнсан унăн хутне кĕме те хăраман вăл.

Анчах та унăн ачалăхĕ питĕ ир пĕтнĕ. Вĕсен çемйи нушаллă пурăннă, çапла вара Васьăн сакăр çултах ĕçлеме тытăнмалла пулнă. Çулла вăл кĕтӳ кĕтнĕ, хĕле кĕрсен ашшĕпе вăрмана вутă турттарма çӳренĕ, амăшне валли пусăран шыв йăтнă, картишне тирпейлесе тăнă.

Пăртак пысăклансан Васьăна пуян купца магазинĕнче ĕçлеме панă.

Вара вăрăм та савăнăççăр кунсем пуçланса кайнă. Вася магазинра урай çунă, приказчиксене пулăшнă, тавар илме пыракан „ятлă" çынсене алăк уçса кĕртнĕ, складран тавар çĕклесе килнĕ.

— Тăрăш, Васька, тăрăш!—тенĕ ачана купца, хăйĕн пĕчĕкçĕ куçĕсене чеен хĕссе.—Хуçуна сума суса ĕçлесен—сутă тума лартăп. Приказчик туса хурăп. Çын шутне кăларăп. Эпĕ пурне те тума пултаратăп!

Купца хăйĕн сăмахне чăнах та пурнăçланă: вăл Василие приказчика куçарнă.

— Суту-илӳ тăвасси темĕнех мар,—тенĕ вăл кулкаласа.—Унăн пĕр секрет çеç—илекенсене ултала. Улталамасан сутаймастăн та!

Анчах Василий тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫамрӑк пулнӑ, вӑл ҫынсене улталама пултарайман. Магазинра вӑл пурне те—ӗмӗтсӗр те хыткукар хуҫине те, ҫынсене улталакан унӑн тарҫӑ-приказчикӗсене те курайман. Ҫавӑнпа та Василий ҫине тӑрсах купца патӗнчен кайма шут тытнӑ.

Хуҫинчен уйрӑлнӑ чух, аллисене чӑмӑрласа вӑл ҫапла каланӑ:

— Пурне те тума пултаратӑп тесе ахалех мухтантӑн. Манран пурпӗр жулик тӑваймарӑн! Ӗҫ тухмарӗ!

Унтан, урса кайнӑ купца ҫине йӗрӗнсе кӑна пӑхса илнӗ те, алӑкне шалт! хупса тухса кайнӑ.

Вара каллех хӗн-хур курса ҫӳресси пуҫланнӑ. Василий платник пулса ашшӗпе пӗрле Саратов кӗпӗрнинчи ялсенче ҫуртсем туса ҫӳренӗ. Ӗҫлессе нумай ӗҫленӗ, анчах усси сахал пулнӑ.

1914 ҫулта империализмлӑ вӑрҫӑ пуҫланса кайнӑ. Фронталла салтаксем тиенӗ эшелонсем йышлӑн иртме пуҫланӑ.

Василий Чапаева та вӑрҫа хӑваласа кайнӑ. Уйӑхсем, ҫулталӑксем иртнӗ, анчах вӑрҫӑ пӗтесси курӑнман.

„Кама кирлӗ юн тӑкни?—ыйтнӑ Чапаев хӑйӗнчен.—Мӗн пирки ҫакӑн чухлӗ ҫын вилет?.. Ӗлӗкхи пекех фабрикантсемпе улпутсем ырӑ курса пурӑнччӑр тесе-и? Яланах ҫапла пулӗ-шим? Ӑҫта-ха чӑнлӑх?“

Фронтра Чапаев пӗр салтакпа—Питӗр рабочийӗпе—большевикпа паллашнӑ. Ҫавӑ Василие пурнӑҫ ҫине тӗрӗс пӑхма вӗрентнӗ те.

— Господа-буржуйсемшӗн ҫапӑҫнипе пире ним усси те ҫук,—тенӗ Питӗр ҫынни, Чапаевпа ҫывӑх паллашса ҫитсен.—Рабочисемпе хресченсен пӗр тӗллев пулмалла—патшапа улпутсене тапса

сирпӗтмелле те влаҫа хӑйсен аллине илмелле. Вара вӑрҫӑ та пӗтӗ.

Большевиксем простой, чухӑн ҫынсене хӳтӗленине Чапаев халь пӗлнӗ ӗнтӗ: вӗсем халӑх телейӗшӗн кӗрешеҫҫӗ.

Октябрьти Аслӑ социализмла революци хыҫҫӑн, 1917 ҫулхи кӗркунне, Чапаев тӑван Атӑл хӗррине таврӑннӑ.

Килне ҫитсен пирвайхи кунсенчех Чапаев большевиксен партийӗн Николаевск уездӗнчи комитетне пынӑ. Уезд комитечӗн секретарьне вӑл ҫапла каланӑ:

— Большевика кӗрес тетӗп.

Кӑшт тӑрсан, татах хушса хунӑ:

— Большевиксем ҫинчен эпӗ фронтра чухнех илтнӗ. Большевиксен партийӗ халӑхшӑн ҫирӗп тӑрать, ҫавӑнпа та вӑл ман кӑмӑла каять. Эпӗ хам та—халӑхран!—тенӗ.

Чапаева парти ретне илнӗ.

Часах Николаевскра уездри хресченсен съезчӗ пухӑннӑ. Съездра питӗ кирлӗ ыйту сӳтсе явнӑ: уездра буржуйсемпе кулаксем хуҫа пулса тӑнине пӗтерсе лартмалла, вӗсен сӑпса йӑвине—земски пухӑва—салатса ямалла.

Ҫав вӑхӑтрах хулари чи лайӑх ҫуртсенчен пӗринче земски пуху ларӑвӗ пынӑ. Хресченсен съезчӗ: буржуйсемпе кулаксене хӑваласа ярас, уезда ертсе пыма халӑх комиссарӗсен советне тӑвас,—тесе йышӑнать.

Ҫар комиссарӗ пулма Василий Чапаева суйлаҫҫӗ. Съезд ӑна хушнӑ та ӗнтӗ халӑх ирӗкне пурнӑҫлама.

Тӗтреллӗ те сивӗ кун. Чапаев ертсе пыракан отряд купцасем, фабрикантсем тата кулаксем пуҫтарӑннӑ ҫурт умне ҫитсе чарӑнать.

Халӑх комиссарӗсен совечӗн председателӗ

зала кĕрсе совет влаçĕ ячĕпе земски пухăва са-латса яни çинчен пĕлтерсен, урса кайнă пуянсем чышкисене чăмăрласа ун çине ыткăннă.

Çав вăхăтрах зала Чапаев вĕçтерсе кĕрет. Сĕтел çине хăпарса тăрать те вăл, хăюллăн çапла кăшкăрса ярать:

— Чарăнăр! Мана итлĕр!.. Президиума арест-летпĕр. Ыттисем—халех саланнă пулăр,—тет.

Çавăнтах вăл револьверĕпе сулкаласа илет.

Анчах çĕршыври революци тăшманĕсене пĕ-тĕмпех аркатса пĕтерейменн пулнă-ха. Çамрăк совет влаçне тăшмансенчен хӳтĕлемелле пулнă. Çакна тума Хĕрлĕ гварди отрячĕсем организа-циленĕ. Отрядсенчен пĕрне Чапаев ертсе пынă. Часах çав отряда кӳршĕ ялсенчи кулаксен пăл-хавĕсене пусарса лартма ыраççĕ.

Çиллĕ-тăманлă çанталăк та, кулаксен засади-сем те Хĕрлĕ гварди отрядне хăратайман. Боец-сем хăйсен харсăр командирне—Чапаева çав тери юратнă, унпа пĕрле чи хăрушă походсене кайма та шикленмен.

Çапла пуçланса каять те пултаруллă полко-водецăн боевой çулĕ.

Граждăн вăрçи çулĕсенче Совет республикин тăшманĕсене аркатса пырса, Чапаев нихçан манми чаплă та хăюллă ĕçсемпе хăйне мухтава кăларнă. Василий Ивановича Боевой Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Легендăсене кĕрсе юлнă геройăн ячĕ пирĕн халăхшăн хаклă та çывăх. Чылай хуласемпе ял-сене, колхозсемпе заводсене Чапаев ятне панă. Чапаев çинчен легендăсем, юрăсем хунă.

Ку кĕнекере мухтавлă полководец Василий Иванович Чапаев пурнăçĕнче пулса иртнĕ хăш-пĕр ĕçсем çинчен çырса кăтартнă.

———



## ТӖЛӖК

Çулӑм тӗксӗммӗн курӑнакан кӑвакрах таса тӳпенелле çӗкленсе çухалать. Вӗçе-вӗçе ӳкекен вут хӗлхемӗсем çап-çутӑ пысӑк çӑлтӑрсем пек курӑнса каяççӗ.

Ял варринчи площадьре чӗртнӗ кӑвайт тавра çынсем таччӑн карталанса тӑнӑ. Ункӑ варринче пилӗкӗсене тӑла пиçиххисемпе туртса çыхнӑ икӗ йӗкӗт ташлаççӗ. Чӗтресе çунакан вут вӗсен урисем айӗнчи çӗре çутатать, çавӑнпа та вӗсем урисене епле пускалани, лакӑмланса юлакан кӗле йӗрри лайӑхах курӑнса тӑрать.

Кӑвайт патне çӳлӗ çӗлӗкне хӑяккӑнрах лартнӑ Чапаев юланутпа килсе тухрӗ. Куçӗсене кӑштах хӗссе, ташлакансем çине тимлӗн пӑхрӗ. Унӑн чӑп тытнӑ çӳхе тутисем ӑшшӑн кулкалаççӗ.

Халăх алă çупса ячĕ, йĕкĕтсене ырласа кăшкăрни илтĕнет, лешсем пуçĕсене тая-тая ункăран тухаççĕ.

— Эй, туссем-юлташсем, çул парăр!—кăшкăрса ячĕ тахăшĕ.

Кăвайт патне пыракан вăрăм мăйăхлă, кукша пуçлă çын Василенко иккенне пурте палласа илчĕç.

— Пăхатăп та сирĕн çине, çамрăксем, хамăн та çамрăк пулас килсе каять,—тет Василенко.— Ан тив, кулччăрах ачасем, тетĕп хам,—эпĕ вĕсене юрă юрласа парам. Тепрехинче, тен, чун çĕкленсе кайсан, гопак та ташласа парăп... Илтетĕр-и?

— Яра пар, асатте!.. Ыйтатпăр!—тенĕ сасăсем пур енчен те илтĕнсе кайрĕç.

— Эпĕ сире пирĕн Украинăра юрлаканнине юрласа парăп...

Василенко ӳсĕркелесе илчĕ те юрласа ячĕ:

Розпрягайте, хлопці, коні
Та лягайте спочивать...

Чапаев куçĕсене хупнă; майĕпен юхакан, пăртак салхуллăрах юрă ăна килентерсех янă иккен, чĕри патнех çитнĕ.

Вийшла, вийшла дівчинонька
В сад вишневий воду брать,
А за нею козаченко
Веде коня напувать...

Шуррисем нумаях пулмасть касса вĕлернĕ ывăлне пытарнă хыççăн, Василенко ун вырăнне хăй Чапаев отрядне пынă. Халĕ вăл, сӳннĕ чĕлĕмне аллине тытса, кăвайт умĕнче тăрать. Хăй чĕринчи мĕнпур хурлăхĕпе салхуллăхне вăл юрăпа кăтартса парасшăн тăрăшнă пек туйăнать...

Ункăран вăл çара пуçне пĕксе тухрĕ. Пурне те ун юрри шухăша ячĕ, площадьре вара пĕр-икĕ минут хушши пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмерĕ.

Василий Иванович сасартăк учĕ çинчен сиксе анчĕ те, çынсене икĕ еннелле сирсе, ункă варринелле, сӳнме пуçланă кăвайт патнелле утрĕ:

— Комаринскине калăр! – терĕ.

Темиçе хут купăс пĕр харăс комаринскине тăсса ячĕç, тахăшĕ вутта тата кăвайт пырса пăрахрĕ. Чапаев çав тери çăмăллăн, аллисене саркаласа, урисемпе кăшт çеç çĕре лектерсе, ункă тăрăх çамрăк йĕкĕтле çаврăнма пуçларĕ.

... Боецсем площадьрен çĕр кaçма хаваслăн саланчĕç.

— Эсĕ, Василий Иваныч, пит шеп ташларăн вара, — кулкалать Чапаев ординарецĕ Петька Исаев, хăйĕн командирĕпе пĕрле хваттере таврăннă чух.

— Çамрăкрах чухне лайăхрах та пултараттăм... Фронтра тепĕр чух тĕмеске çине сиксе тухатăн та — виççĕр метрта тăшман окопĕсем — пуçлатăн вара ура хуçса ташша çапма...

Василий Иванович йăл кулса илчĕ, унтан тусне хулĕнчен тытса малалла каларĕ:

— Çапла-а, Петька... Вăрçă пуçлансанах эпĕ пачах тĕттĕм çынччĕ. Фронтра вулама вĕренсе çитрĕм. Суворов çинчен вуларăм, Разин, Пугачев çинчен... Унтан пирĕн полкра пĕр большевик тупăнчĕ. Хăй çӳлех мар, лутакаскер. Аллисем пысăк, ĕçре хытнă йĕрсем палăраççĕ. Пĕрре пăхсах рабочи иккенĕ паллă: сăн-пичĕ кăмăллă, хăрăмланса пăртак тĕксĕмленнĕ пек. Куçĕсем вара мĕн тери çутăччĕ! Мĕнпур тĕрĕслĕхе унран пĕлтĕм. Эпĕ унпа туслашса кайрăм. Мĕн тери лайăх çынччĕ вăл! Пĕлтĕр кĕркунне эпĕ Николаевска таврăнтăм та — çийĕнчех большевиксен партине

кётём... Пурнăçăм манăн, каласа парам сана... кётўçё те пултăм, купца патне тара кёрёшсе те ёçлерём. Пурне те йёркипе калама пуçласассăн...

Чапаева тимлён итлерё Исаев.

— Пёр тумлам чухлё те пулин сан пек пуласчё, Василий Иваныч... Ак мён çинчен ёмётленетёп эпё,—терё ординарец, лешё каласа пётерсен.

Чапаев Петька каланине илтмен пек пулчё.

Сасартăк вăл тарăн шухăшлăн, хытах мар сасăпа çапла каласа хучё:

— Пысăк ёмёт пур, Петька. Эпё нихçан та Ленина курман. Çав тери курас килет ăна, вăл калаçнине илтес килет!

Исаев çул çинчи пысăк мар чула атă сăмсипе тапса ывăтса ячё, унтан хăйён командирё енне çаврăнса ăна чавсинчен тытрё те хумханса чарăнса тăчё:

— Туршăн та куратăн, Василий Иваныч! Ленин сан çинчен илтетех. Урăхла пулма пултараймасть. Илтсенех вара вăл: „Ман пата Чапаева, Василий Иваныча, чёнсе илёр", тесе приказ парать. Тёрёсне калатăп.

— Эй, санпа!—терё те Чапаев, хёçне аллипе тытса, васкавлăн малалла утса кайрё.

Пўрте вăл хуллен кёчё. Кил хуçи арăмне вăратас мар тесе, çутă çутмарё. Çывăрма—урай варрине сарнă кёççе çине выртрё.

Часах килкартинчен Исаев та кёчё. Командирёпе юнашар выртрё те вăл, шăхăрттарсах харлаттарма пуçларё. Чапаев енчен енне çаврăнкаласа чылайччен выртрё, минтерне тўрлеткелерё, вăраммăн сывла-сывла илчё.

Тёлёкре Василий Иванович Ленина курнă: Владимир Ильич унпа туслă калаçать пек. Чапаев тухса кайма хатёрленсен, Ленин унăн аллине хытă чăмăртарё пек.

Чапаев вăранчĕ те йĕри-тавра—çутăлас умĕнхи сивĕре шупкарах кăвак курăнакан кантăк çине, урайне çитиех усăнса аннă сехет тукмакки çине пăхса илчĕ. Ленин халĕ те унăн куçĕ умĕнчех пек, Ленин чăмăртаса ăшăтнă алли те сивĕнме ĕлкĕреймен пек туйăнать.

Çак ир Василий Иванович вырăн çинчен хаваслă та уçă кăмăлпа тăчĕ. Сивĕ шывпа çăвăнчĕ те вăл, хĕрелсе кайнă питне алшăллипе тăрăшсах сăтăрса, Исаева харсăррăн кăшкăрчĕ:

— Петька, тăр!

Василий Иванович кунĕпех хаваслă çӳрерĕ. Тахçанах ĕмĕтленнĕ ĕмĕт ак халĕ шăпах пурнăçа кĕнĕ пек, уяв чухнехи евĕр лайăх туйăм ун чунĕнчен каймарĕ. Кампа та пулин калаçса пăхасси, çав тери лайăх тĕлĕк çинчен каласа кăтартасси килчĕ ун, анчах вăл хăйĕнчен куласран шикленчĕ. Каçалапа Чапаев пурпĕрех тӳссе тăраймарĕ.

— Эпĕ паян Ленинпа калаçрăм...

— Телефонпа-и, Василий Иваныч?

Чапаев кăштах тăхтаса тăчĕ те, килĕшнĕ пек, пуçне сулчĕ:

— Тӳрĕ проводпа.—Унтан вăл хĕрсе кайсах хăй тĕлĕкре Ленинпа тĕл пулни çинчен калама пуçларĕ:

— Тĕрлĕрен буржуйсемпе шуррисене коммунизм çĕнтеричченех аркатма хушрĕ. Юлашкинчен сан çинчен те сăмах каларĕ. „Исаев Петĕр хăйĕн ĕçĕсене еплерех туса пырать“, тет. „Пит лайăх, Владимир Ильич, ятлама çук“, тĕрĕм.

— Ман çинчен те ыйтнă!—терĕ те савăнса ӳкнĕ Исаев, темиçе çĕртен сапланă йывăр аттине çĕре ӳкерчĕ.—Ăçтан пĕлет-ха вăл ман çинчен?

— Ак тата!—чеен кулса илчĕ Василий Иванович. Унтан вăл, хăйĕн кăпăшка мăйăхĕсене шăлкаласа, мăнаçлăн çапла хушса хучĕ:—Ленин пĕлмест пулать-и!



## МОСОЛИК ÇАРАНĔСЕМ

Шпанин, ял çинче Мосолик тесе чĕнекен пĕр çӳлех мар, лара-тăра пĕлмен мужик çине ывăннăн пăхса илчĕ те, çапла ыйтрĕ;

— Сана, Прокофий, мĕнле çыраççĕ?

— Хушаматăм ман — Çыранкин. Çыран хĕрринче эпир тăхăр килĕ пурăнатпăр.

Мосолика списока çырнă хыççăн, Шпанин виçĕ ураллă пукан çинчен тăчĕ те çырса пĕтернĕ хут татăкне гимнастеркин карăлса тăракан кĕсйине чикрĕ. Сĕтел тавра кĕпĕрленсе тăнă çынсем еннелле çаврăнса, çирĕппĕн:

— Кайрăмăр, — терĕ.

Ял Совечĕ умĕнче, лаша кăкармалли çĕрте, темиçе лав тăрать. Лашисем хӳрисемпе хаяррăн çапкаласа шăна-păвансене хăвалаççĕ.

Çынсем урапасем çине ларса вырнаçрĕç те çула тухрĕç. Малти лавĕ çинче Мосолик пырать,

унпа юнашар пĕр хыткан старикпе хуратутлă пит-куçлă йĕкĕт ларнă.

— Кăçал курăк аван,—терĕ те старик вăрăммăн сывласа илчĕ.—Пĕр инкек çеç тарăхтарать: ниепле те вăрçа пĕтерейместпĕр.

— Çавă касать те,—терĕ Мосолик шухăшлăн.

Хуратутлă йĕкĕт кулса илчĕ. Шӳт тумасăр, шухăшлăн калаçни Мосолика пĕрре те килĕшмест. Вăл кулăшларах çын, мыскараçă пулнине пурте пĕлеççĕ.

— Эсĕ пĕр-пĕр истори каласа кăтарт,—терĕ Мосолика йĕкĕт.

Мосолик сăмах пуçласа яма хатĕрленсе куçĕсене хĕскелесе илчĕ, йĕкĕт вара, итлеме хатĕрленсе, ун çумне çывхарах куçса ларчĕ. Старик тем кăмăлсăррăн пуçне сулкаларĕ те каллех тарăннăн сывласа илчĕ. Лашасем çăмăллăн юртаççĕ.

Тепĕр лав çинче Шпанин ларса пырать, унта Чапаев çинчен калаçаççĕ.

— Василий Ивановича эпĕ хам та пĕлетĕп,—тет хресченсенчен пĕри.—Хĕлле вăл пирĕн ялта пулчĕ те, эпĕ унпа юнашарах лартăм... Хăюллă çын вара—хăйĕн пурнăçне те шеллесе тăмасть!

— Вăл çапласкер!—çирĕплетсе хучĕ Шпанин.

Çул хурăнлăх еннелле каять, хурăнлăх леш енче çарансем пуçланаççĕ. Калаçу утă çуласси, тырпул çинчен, тырă хакĕ çинчен пуçланса кайрĕ.

Лавсене хирĕç вăрмантан икĕ юланут вĕçтерсе тухрĕ.

— Аван-и, тăвансем!—кăшкăрчĕ пĕрремĕш юланутçă, хăйĕн юлташĕнчен иртсе.

Пурте Чапаева палласа илчĕç.

Мосолик лашине чарчĕ те урапи çинчен анчĕ.

— Семеновкăран-и? Ăçта каятăр?—ыйтрĕ Василий Иванович, хĕрсе кайнă утне чĕлпĕрĕнчен туртса чарса.

— Ҫаран валеҫме пуҫтарӑнтӑмӑр, Чапаев юлташ,—терӗ Мосолик.—Эпир опчествӑ уйӑрнӑ пӑлнамучийсем.

Хресченсем урапасем ҫинчен анчӗҫ те Чапаева хупӑрласа илчӗҫ.

— Асли сирӗн хӑшӗ?—ыйтрӗ каллех Василий Иванович.

— Эпӗ.—Шпанин маларах тухса тӑчӗ.—Ҫӗрӗҫ пайӗнчен, ял Совечӗн членӗ.

— Шпанин? Пӗлетӗп! Эппин ҫаран валеҫме каятӑр? Апла иккен.—Василий Иванович мӑйӑхне чӗпӗткелесе илчӗ те татса калаҫма тытӑнчӗ:—Акӑ мӗнле ӗҫ, хресченсем. Грачевкӑра шурӑ казаксен отрячӗ ҫапкаланса ҫӳрет. Сирпӗтсе кӑларас пулать. Каҫалапа вӗсем патне пулӑшу ҫитме пултарать, вара ӗҫ начара каять... Манӑн кунта халӑх сахалтарах та, эпӗ сирӗнтен пулӑшу ыйтас терӗм. Малтан шуррисене ҫапса сирпӗтӗпӗр, унтан ҫаран валеҫӗпӗр. Килӗшетӗр-и?

Таврара шӑпах пулчӗ. Хресченсем, пӗр-пӗрин ҫине пӑхмасӑр, пӗр ура ҫинчен теприн ҫине пускаласа тӑчӗҫ.

— Каятпӑр-и вара?—ыйтрӗ Шпанин.—Атту ҫарана ҫулса пӑрахӑпӑр та, ҫав юнӗҫенсем килсе тухӗҫ...

Хуратутлӑ йӗкӗт сурчӗ те, йӗрӗнчӗклӗн кулкаласа, хресченсем ҫине пӑхса илчӗ:

— Мӗн калаҫса тӑмалли пур, каятпӑр!—терӗ.

Пӗри йӑвӑррӑн сывласа илчӗ, тепри ӗнсине хыҫкаларӗ, анчах пурте урапасем патне утрӗҫ.

— Нумайранпа алла пӑшал тытман ӗнтӗ,—кулкаларӗ старик,—Япун вӑрҫиренпех.

— Хамӑрӑннисем патне вӗҫтер,—хушрӗ Чапаев хӑйӗн ординарецне.—Силантьева винтовкӑсемпе патронсем хатӗрлесе хума кала.

Тепĕр çур сехетрен чапаевецсен отрячĕ тата винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă хресченсем, лашисене чĕлпĕртен çавăтса, лапам тăрăх Грачевка патне сисĕнмелле мар çывхарчĕç.

— План çакăн пек,—терĕ Василий Иванович хресченсене: — эсир пурте, Силантьев командир ертсе пынипе, поселока каякан çул патне çитетĕр те хӳтлĕх хыçĕнчен пеме пуçлатăр. Тăшмана хăвăр еннелле илĕртетĕр. Эпир çак вăхăтра ăна хыçалтан пырса çапăпăр та, — Чапаев аллипе сулса илчĕ, — шурă казаксене турама пуçлăпăр!

Çĕр çумне лăпчăнса, улăм ури патĕнчен арпалăх патне чупса, Силантьев отряда çул патнелле ертсе кайрĕ. Укăлча хапхи çывăхĕнче кантăр ани ăшне кĕрсе, вĕсем пĕр ишĕлчĕк арпалăх мĕлки ӳкнĕ çĕре йĕркеленсе выртрĕç.

— Пурте авăрларăр-и? — ыйтрĕ хуллен Силантьев.

— Пурте,—терĕ те Мосолик, пуçне сулчĕ.— Сыхланăр, казаксем!

Пăшалпа икĕ-виçĕ хутчен персенех поселокри шурă казаксем хыпăнса ӳкрĕç. Вĕсем пĕр пӳрт патĕнчен теприн патне чупа-чупа курăк ăшне, тислĕк куписем хыçне выртни курăна пуçларĕ.

Малтанах перкелешӳ сайра çеç пулкаларĕ, кĕрешĕве питех хутшăнасшăн мар пек хăтланчĕ тăшман. Анчах акă хĕрĕнчи пӳрт çывăхĕнчи тополь хыçĕнчен пулемет шатăртаттарма пуçларĕ, çавăнтах тепри те унпа пĕрле пеме тапратрĕ. Пульăсем хресченсен пуçĕсем урлă шăхăрса иртеççĕ те, арпалăха çитсе çапăнса, тусан кăлараççĕ.

— Пăх-ха вĕсене, епле переççĕ!—терĕ Мосолик Силантьева.—Патронĕсене те хĕрхенмеççĕ.

— Пулеметсемпе хытăрах пеме пуçларĕç,— тавăрчĕ те лешĕ ирĕксĕррĕн, малалла тинкерсе:



библиотека им. М. Горького
158968

„Мĕскер пирĕннисем халĕ те çук?“ — тесе шухăшларĕ.

Çак вăхăтра шуррисем курăнса кайрĕç. Вĕсем, винтовкисене аллисенче хатĕр тытса, пĕр виçеллĕ утăмпа чупаççĕ.

— Пĕтрĕмĕр!—кăшкăрса ячĕ хуратутлă йĕкĕт, хăй çавăнтах сиксе тăчĕ те хыçалалла, лапам еннелле чупрĕ.

Ун хыççăн тата иккĕн тăрса чупрĕç.

— Мужиксем! Тăвансем!—сасартăк кăшкăрчĕ Мосолик, сиксе тăчĕ те шурă казаксене хирĕç чупа пачĕ:—Малалла, ачамсем!..

Темиçе утăм кайсан вăл сасартăк чарăнчĕ, унтан аллисемпе хăлаçланса çĕре персе анчĕ.

Çак вăхăтра кĕтмен япала пулса иртрĕ. Шурă казаксем, такам çавапа меллĕн çулса тăкнă пек, ÿкме пуçларĕç. Пулемечĕсем пеме чарăнчĕç. Поселок енчен чапаевецсем „урра“ кăшкăрса вĕçтерсе тухрĕç...

— Пире пулăшнăшăн питĕ пысăк тав сире, атьсем,—терĕ çапăçу пĕтсен Чапаев, хресченсен аллисене чăмăртаса.

Мосолика урапапа турттарса пычĕç. Пурте, çĕлĕкĕсене хывса, лав тавра пуçтарăнса тăчĕç.

Халĕ Мосолик çамрăкрах та пăртак вăрăмрах пек курăнать. Унăн пăчăртаса чăп тытнă тутисем сивĕнсе хытнă, пĕчĕк ачанни пек вичкĕн куçĕсем чарăлса кайнă та темле тĕлĕннĕ пек пăхаççĕ.

Василий Иванович çăварне чăмăрĕпе хупласа ÿсĕрсе илчĕ те:

— Чăн-чăн этемччĕ,—терĕ.

Хуратутлă йĕкĕт, хăйĕн тусанланнă çăпатисем çине, ури айне пăхса, аллинчи картузне лутăркаса тăчĕ.

... Килелле хресченсем шăппăн таврăнчĕç. Лашисем майĕпен утса пычĕç. Çаран патĕнчен иртсе

кайнă чух Шпанин вĕсене чарăнма хушрĕ. Вăл урапа çинчен çава илсе курăк çулма утрĕ. Ун хыççăн тата темиçе çын кайрĕ.

Урапа çине сĕткенлĕ те тутлă шăршăллă курăк хучĕç, ун çине вара, тӳшек çине вырттарнă пек, Мосолика вырттарчĕç.

— Лайăх курăк!—терĕ те старик, ик-виçĕ курăк пĕрчи илсе шывланнă куçĕсем патнех çывхартса тытрĕ.

— Курăкĕ — ытарма çук, — çирĕплетрĕ унăн сăмахĕсене Шпанин. Симĕс тинĕс пек сарăлса выртакан çаран çине пăхса илчĕ те:—Мосолик çаранĕсем,—терĕ вăл...

Ку ĕç тахçанах, пин те тăхăрçĕр вунсаккăрмĕш çулхине çулла, Атăл тăрăхĕнче шурă казаксен пăлхавне путарса лартнă чухнех пулнă. Анчах çав çарансене халĕ те Мосолик çаранĕсем теççĕ.



Василий Иванович куҫӗсем тавра ырӑ пӗркеленчӗксем пухӑнчӗҫ.

— Философ эсӗ манӑн, Петька! — тесе хучӗ вӑл туслӑн. — Чӑн-чӑн философ!

Штаб тӑватӑ чӳречеллӗ лутра пӳртре вырнаҫнӑ, унӑн хӗрлӗ крыльцине касса эрешленӗ хӑмасемпе илемлетнӗ. Хапхи умӗнче ординарецсемпе связнойсем хӗвӗшеҫҫӗ. Тутӑ лашасем чӗрнисемпе ҫӗр чавса тӑраҫҫӗ.

Чапаев крыльца ҫине хӑвӑрт хӑпарчӗ те, ҫенӗхе иртсе, яриех уҫнӑ алӑкран пуҫне пӗксе кӗчӗ.

Пӳртре тӑвӑр, чӗлӗм туртса тултарнӑ. Сӗтелсем ҫинче—карттӑсем, полевой сумкӑсем, ҫӑкӑр чӗллисем, сӗт чӳлмекӗсем. Телефонсем пӗр вӗҫӗмсӗр шӑнкӑртатаҫҫӗ.

Кӗтесри пӳлӗм стенисем ҫинчи тӗссӗрленсе юлнӑ шпалера ҫуркаласа, хӑйпӑтса пӗтернӗ; ҫак пӳлӗме кӗрсе Василий Иванович ҫӗлӗкне хыврӗ те чӳрече ҫине пӑрахрӗ.

Унччен пӗр-пӗринпе сассисем тытӑнicченех тавлашнӑ командирсем вӑл кӗрсен шӑпах пулчӗҫ, табак туртаканӗсем, айӑпа кӗнӗ пек, васкасах цигаркисене сӳнтерме пуҫларӗҫ.

— Пурте пухӑннӑ-и? — ыйтрӗ Чапаев, канашлӑва пухӑннисем ҫине пӑхса. — Пуҫлар.

Ҫилпе хӗвел ҫинче хуралса пиҫӗхнӗ пит-куҫлӑ, тӗссӗрленнӗ гимнастеркӑллӑ командирсем сӗтел тавра, стенасем ҫумӗнче тӑракан саксем ҫине ларса тухнӑ. Пурте шӑпах.

Василий Иванович аллине ҫыхнӑ марлӗне тӳрлетрӗ те, суранӗ ыратнипе кӑштах питне пӗркелентерсе илсе, сӗтел хушшине ларчӗ; унӑн алли вӑхӑчӗпе ыратма чарӑннӑ, вӑхӑчӗпе тепӗр хут сурма тытӑннӑ.

— Пирĕн Иваныч хытă чирлет, — хĕрхенсе каларĕ утлă разведчик Семен Кузнецов хăйĕн кӳршине.

— Петька, сумкăна пар!—хыттăн та çилĕллĕн кăшкăрчĕ Чапаев.

Василий Иванович: юлташĕсем хăйне хытах чирленĕ, уншăн ытла та пăшăрханаççĕ, ытла тимлĕн тăрăшаççĕ, тесе шутланă, вăл çавăншăн çиленнĕ.

Исаев полевой сумка илсе, циркульпе кăранташ кăларса пачĕ, сĕтел çине карттă сарса хучĕ.

Сĕтел патнерех куçаракан саксем чĕриклетме пуçларĕç. Çынсем пĕр-пĕрин çумне тачăрах хĕсĕнсе ларчĕç, çапах та вырăн çитмерĕ, нумайăшне ура çинче тăрса, лараканнисен пуçĕсем урлă сĕтел çине пăхма тиврĕ.

— Çапăçу вăйлă пулать. Тăшманăн çарсем те, хĕçпăшал та пирĕннинчен виçĕ хут ытла, — терĕ те Чапаев, тимлĕн итлесе ларакан командирсене пăхса çаврăнчĕ.—Вырăнĕ те, Осиновка патĕнче... йĕри-тавра пушă хир çеç. Шуррисемшĕн мĕскер! Вĕсем çӳлĕ вырăнта, тĕм хыçне пытанса ларнă та, пире ывăç тупанĕ çинчи пекех лайăх кураççĕ.—Вăл кăранташĕпе карттă çине кăтартрĕ те, шăпланса, пĕр кана тем çинчен шухăшларĕ.— Осиновкăна çĕрле илес пулать. Кăнтăрла май килмест... çĕрле çеç.—Чапаев аллине нумай пулмасть Пугачев ячĕпе тăракан полк командирĕ пулма уйăрса лартнă çӳлĕ те сарлака çамкаллă Лоскутов хулĕ çине хучĕ:—Сана яла атакăлама хушатăп. Пулăшма Степан Разин полкĕнчен пĕр батальон пехота тата икĕ эскадрон кавалери парăп. Ăнланмалла-и?

Лоскутов çăварне чăмăрĕпе хупласа хăйăлтирехххĕн ӳсĕрсе илчĕ:

— Ăнланмалла, йăлтах ăнлантăм!

— Эсĕ вара, Соболев,—терĕ Василий Иванович Лоскутова хирĕç ларакан Разин полкĕн командирне,—тăшман çине тылран пырса тапăнăн.

Соболев чĕнмесĕр пуçне сулчĕ.

— Халĕ ĕнтĕ наступлени планне туса хатĕрлер.—Чапаев аллине циркуль илчĕ те сулахай енне, сывă аллипе юнашар, таса хут листисем сарса хучĕ.

Командирсем сĕтел патне тата çывăхрах пырса çырмалли кĕнекисене хатĕрлерĕç.

Шурă казаксене Осиновка районĕнче аркатма Василий Иванович чăрсăр та хăюллă план туса хатĕрленĕ. Лоскутов полкĕ умне шуррисене ялта атакăласа тăшманăн мĕнпур вăйне хăй çинелле туртса тăрас задача лартнă. Пугачев полкĕ пĕрремĕш хут артиллерирен залп парсанах, тĕп вăйсем тăшмана флангран та, тылран та атакăлама пуçламалла. Хăйĕн çарĕсем çак йывăр операцие пурнăçласса, вĕсем пурпĕрех çĕнтерессе Чапаев шансах тănă.

Канашлу пĕтсен Василий Иванович, пукан хыçĕ çине ывăннăн таянса, çапла каларĕ:

— Халлĕхе урăх ĕç çук. Ир еннелле эпир Осиновкăра пулмалла.

— Ан иккĕлен, Василий Иваныч,—терĕ Лоскутов хăйĕн хытă сухалне чĕпĕткелесе:—Осиновка пирĕн пулĕ.

— Ай-яй, мунчари пекех пăчă!—терĕ эскадрон командирĕ Зайцев, штабран урама тухнă май.

— Кăнтăрла шăрăх,—терĕ Кузнецов, гимнастерка тӳмисене вĕçертсе,—çĕрле тăлăп тăхăнсан та чухах. Çапах: çутçанталăк, теççĕ!

— Паян çĕрле те шăрăх пулать,—кулкаласа илчĕ тахăшĕ разведчиксен çурăмĕ хыçĕнче.

Лоскутовпа Соболев малти линие кайма хатёрленсен, вĕсене Чапаев чарчĕ:

— Тăхтăр-ха, пĕрле кайăпăр.

— Василь Иваныч, санăн тăхтамаллаччĕ-ха,— терĕ ăна Соболев хытăрах кăмăлпа шеллесе.— Тăхта кăшт, аллу сываличчен ан çӳре...

— Çитĕ сана! Пĕчĕк ача-им эпĕ? — хăтăрса илчĕ те ăна Чапаев, хăй пуринчен малтан алăк патнелле утрĕ.

Петька ăна йĕнер çине утланма пулăшрĕ, вара вĕсем тăваттăн фронт çывăхне тухса кайрĕç.

* * *

Шăрăх çанталăк тата йĕнер çинче чĕтренсе пыни Чапаева питĕ ывăнтарчĕ; каç енне унăн суранĕ уçăлчĕ, çавăнпа унăн яла таврăнмалла пулчĕ.

— Малтанах каларăм сире: ик-виçĕ кун сирĕн вырăнтан хускалмасăр канмалла,— терĕ хăйăлти сасăпа полкри врач, çӳлĕ старик, Чапаевăн аллине тепĕр хут çыхса янă май.—Хускалас пулмасть... Тата бинт парăр. Çапла, çапла... Кăштах йĕркерен кăларса ярсанах е ывăнсанах суранăр хăрушланса кайма пултарать... Акă пĕтрĕ те. Халех вырăн çине выртăр.

Сестра бинтсене, иод кĕленчине саквояжа майлаштарса хума тытăнчĕ, врач аллисене çума кайрĕ. Исаев, ăшă та кăштах юшкăн шăрши кĕрекен шыва куркапа врачăн вăрăм та хыткан пӳрнисем çине ярса тăнă вăхăтра, вăл хушнине тимлĕн итлерĕ.

— Чирлĕ çын патне никама та яма юрамасть. Унпа калаçас пулмасть,—кууншăн çа-ав тери сиенлĕ.

Врача ӑсатса янӑ хыççӑн, Петька шалти пӳрте кӗчӗ. Ординарецне курсан, Чапаев хаяррӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Шуйттан пӗлет-и вӗсене! Каçхине наступлени пуçламалла, кунта ак...

Çавӑнтах вӑл стена еннелле çаврӑнса выртрӗ те пуçӗ çийӗнченех простыньпе пӗркенчӗ.

— Çимелли хатӗрлес-и, Василий Иваныч? Эсӗ иртенпе те апатланман-çке.

Чапаев чӗнмерӗ. Исаев тарӑннӑн сывласа илчӗ, унтан уçӑ чӳречесене хупса, крыльца çине тухрӗ. Унӑн çывӑрасси килет. „Кӑштах ларам-ха эпӗ. Ларатӑп çеç",—терӗ те вӑл пусма картлашки çине ларчӗ. Куçӗсем хупӑнаççӗ. Петька чавсаланнӑ аллисем çине пуçӗпе таянчӗ те тӗлӗрсе кайрӗ.

Уçӑлтарса яракан каçхи сулхӑн ӗнтӗрӗк çитрӗ. Килкартинче ӗне сунӑ чух витре тӗпӗ çине сӗт шӑрӑлтатса юхни илтӗнсе кайрӗ.

Тӗттӗм пулса çитсен, шалти пӳлӗмӗн уçӑ алӑкӗнчен Чапаев сасси илтӗнчӗ:

— Петька!.. Ӑçта тата эсӗ унта, Петька!

Исаев вӑранчӗ, алӑк янахӗнчен тытса, чӑлаххӑн пускаласа çенӗхелле кӗчӗ.

— Çутӑ çутса ярасчӗ сан... Вилес пек кичем,—терӗ Василий Иванович вырӑн çинче çаврӑнкаласа.

Исаев кӗсйинче шӑрпӑк шыраса тупрӗ, çурта çутса ярса, ӑна сӗтел çине, чирлӗ çыннӑн пуçӗ вӗçне лартрӗ, хӑй кровать çывӑхӗнче тӑракан йӗнер çине ларчӗ.

Чапаев килте тӗрлесе тунӑ кавир çине пӑхрӗ, Петька—сиксе çунакан çурта çути çине; иккӗшӗ те чӗнмерӗç. Унтан Чапаев пӳрте темле канӑçсӑррӑн пӑхса çаврӑнчӗ те, кӗтмен çӗртен:

— Миçемӗш сехет?—тесе ыйтрӗ.

— Вуниккĕ иртрĕ пулмалла ĕнтĕ,—тавăрчĕ Исаев, кичеммĕн анаслакаласа.

Таçта кĕтесре эрешмен картине лекнĕ шăна вăраммăн сĕрлеме пуçларĕ. Унтан каллех шăпах пулчĕ. Çав шăплăха сайра хутран çурта çатăртатса çунни сирсе ярать.

Сасартăк ял леш енче инçетре тупăран пĕрре пени, унтан тепре, унтан каллех тепре пени кĕрлесе кайрĕ. Пĕр самантлăха таврара шăпах пулчĕ, унтан каллех тупăсем йывăррăн ахлатма пуçларĕç.

— Пуçланчĕ, Петька!—терĕ те Чапаев, малалла туртăнчĕ, анчах çавăнтах ахлатса минтер çине йăванчĕ.

— Лоскутовпа Соболев патне... кама та пулин яр,—тесе пăшăлтатрĕ вăл темиçе минутран.

Исаев тухрĕ, анчах часах таврăнса Чапаев кровачĕ патне паçăрхи вырăннех ларчĕ.

— Çынна хăвна шаннă пек шанатăн,—ерипен калаçма тытăнчĕ Чапаев, ординарецĕ енне çаврăнса.—Тума хушнине тăвасса пĕлсех тăратăн... Пурпĕрех ак пăшăрханатăн: сасартăк мĕнле те пулин чăрмав килсе тухсан?

— Çитĕ сана, Василий Иваныч, лăплан. Соболевпа Лоскутов мĕн хушнине йăлтах тăвĕç,—терĕ Петька.—Вĕсем коммунистсем-çке! Комиссарĕсем те вĕсен полкĕсенче хăюллă, пултаруллă çынсем.

Чапаев сывă аллипе куçĕсене хупларĕ.

„Тĕрĕс, вĕсем, паллах, çирĕп командирсем, хăйсем тĕллĕнех çапăçма пĕлеççĕ,—тесе шухăшларĕ вăл.—Лоскутова паçăр Кузнецов хыççăн лайăхрах сăнама хушма маннă. Йĕкĕт пуçне çухатма хатĕр. Ялан хăрушлăха сĕкĕнет, нимĕнрен те хăрамасть... Акă Зайцев—ку вара маттур. Ăна чи йывăр çĕре яр—вăл ĕçе, хут çине çырни тăрăх тунă пек, тĕрĕс тăвĕ“.

Тата чылайччен вăл хăйĕн çыннисене аса илчĕ, вĕсем унăн умĕнче чĕррĕн курăнса тăчĕç. Юлашкинчен Чапаев ĕшенчĕ. Унăн нимĕн çинчен те шухăшлас килми пулчĕ. Пуçĕ çаврăнма пуçларĕ, хăлхисенче тем кашласа тăчĕ.

— Петька, мĕн те пулин каласа кăтарт,— тесе ыйтрĕ Чапаев, тусне куçĕнчен пăхса илсе.— Ху çинчен каласа пар, пурнăçу çинчен...

Шухăша кайнă ординарец сасартăк шарт сиксе кулса илчĕ, çамки çине усăнса аннă çемçе те сарă çӳç пайăркисене хыçалалла тӳрлетсе шăлчĕ.

— Мĕн çинчен каласа парас, Василий Иваныч? Мĕнле пурнăç пулнă манăн?—тесе, аллисене сарса ярса, именсереххĕн калаçма пуçларĕ вăл.—Ача-пăча пулнă, унтан вăрçа кайнă. Санăн патăнта ĕнтĕ акă мĕн чухлĕ вăхăт службăра тăрatăп... Çеçенхирсем, ялсем тăрăх, пуçа сĕрĕм тивнĕ пек, терт курса çӳретпĕр... Пĕтĕмпе çакăнта вăл, манăн пурнăçăм, йăлтах куç умĕнче,— терĕ те Исаев, пĕшкĕнсе атти çумне çыпăçнă улăм пĕрчине илсе пăрахрĕ.—Манăн пĕр çывăх тусăм пурччĕ. Иксĕмĕр пĕрле йĕмсĕр чупса çӳренĕ, пĕрлех кĕтӳ кĕтме кайрăмăр. Ырă чунлă, юлташла ачаччĕ... Революци тапрансан, кулаксем советсене хирĕç çĕкленчĕç, вара эпир, Гришкăпа,—ăна Гришка тесе чĕнетчĕç,—партизана кайрăмăр. Хăюллă ачаччĕ, пăркаланса тăмастчĕ. Анчах пĕррехинче, сан патна отряда куçас умĕн, пирĕн вăйлă çапăçу пулчĕ. Шуррисен бандипе. Эпир—виçĕ пĕрчĕ, вĕсем—михĕри пăрçа чухлĕ.

Исаев çунакан çурта çине пăхса илчĕ, унăн çуннă çиппине илес тесе сĕтел патнелле туртăнчĕ, анчах хăй мĕн тăвас тенине çавăнтах манса кайрĕ.

— Шуррисем пире ун чух аркатса тăкрĕç. Сахалăш анчах сывă юлтăмăр,—терĕ малалла хăй

çине Чапаев тинкерсе пăхнине сиссе тăракан ординарец. — Гришкăпа вара çавăн пек инкек пулса тухрĕ... Ăна çапăçу пуçламăшĕнчех хырăмĕнчен вилмеллех амантрĕç...

Çак самантра алăк уçăлчĕ, пӳрте фронтран вĕçтерсе килнĕ вестовой кĕрсе тăчĕ.

Вăл савăнăçлă хыпар илсе килнĕ: шурă казаксем Осиновкăран тараççĕ.

* * *

Ир хĕвеллĕ те ăшă пулчĕ. Вĕсем хир тăрăх, утлă çарпа пехота таптаса пĕтернĕ ыраш пусси урлă иртсе пыраççĕ. Лаша урисем айĕнченех тенĕ пек, путенесем вĕçсе тухаççĕ те, инçе те мар вĕçсе, юнашарах кайса лараççĕ.

— Атя-ха, Петька, сиккипе!—кăшкăрчĕ Чапаев.

— Василий Иваныч,—çиленчĕ ăна ординарецĕ,—аллу вара?

Чапаев куçне хĕссе илчĕ те, хаваслăн кăшкăрса, чăпăрккипе сулчĕ.

Осиновка ялĕн укăлчи патĕнче вĕсене Лоскутовпа Соболев кĕтсе илчĕç. Чапаев вĕсене ним чĕнмесĕр сывă аллипе ыталарĕ те типсе кушăрканă тутисенчен чуптурĕ. Унтан Лоскутова çурăмĕнчен лăпкаса:

— Маттурсем, юрататăп кун пеккисене!— терĕ.—Ну, мĕнле, трофейсем тытса илтĕр-и? Каласа кăтартăр-ха, командирсем.

— Трофейсем те пур, Василий Иваныч,—йăл кулчĕ Соболев.—Пур. Снаряд тиенĕ лавсем икçĕр аллă тытса илтĕмĕр, сакăр пулемет, виçĕ тупă, тата пине яхăн винтовка пăрахса хăварчĕç.

Пысăк та пуян ялăн вăтаçĕр урамне çитрĕç вĕсем. Чапаев ирĕке кăларнă Осиновка çыннисене сывлăх сунать, таракан тăшмана хăвалама приказсем парать. Сайра хутра çеç вăл куçхаршине пĕркелентерет тата аялти тутине çыртать: суранлă алли çав-çавах хăй çинчен аса илтерет-ха.

— Чим, итле, Василий Иваныч,—çине тăрсах калама тытăнчĕ ку таранччен Чапаевпа юнашар шăппăн пынă Лоскутов.—Пĕчĕкçĕ кăна истори пулса тухрĕ. Вăхăт çутăлас енне кайнăччĕ. Тăшман чаçĕсем Осиновкăран йĕркесĕр тарма тытăннăччĕ ĕнтĕ. Пирĕн отрядсем яла виçĕ енчен кĕреççĕ. Вăтаçĕр урама чи малтан разинецсем кĕрсе кайрĕç. Сасартăк пусă пури хыçĕнчен пулемет пеме пуçларĕ. Ачасем—каялла. Чăрмав сиксе тухрĕ. Пăхатăп та, хыçалтан пилĕк юланут çитсе пыраççĕ. Ирĕк çĕре ĕрĕхтерсе тухрĕç те хайхисем, тӳрех пусă патне вĕçтерчĕç. Куç хупса илме те ĕлкĕреймерĕм, вĕсем пулеметчиксене тураса тăкрĕç те хушлăхалла вĕçтерсе кĕрсе кайрĕç. Ăçтан пулчĕç кун пек хăюллăскерсем?—тетĕп. Кайран пĕлтĕм: вăл Кузнецов пулнă иккен, хăйĕн йĕкĕчĕсемпе... Обозне вĕсем ярса илнĕ. Пиллĕкĕнех.

— Тĕрлĕ мыскарасем тума ăста вăл пирĕн,—тесе çирĕплетрĕ Зайцев.

— Эсĕ те вут-çулăмра пулса куркаланă какйăк çав,—терĕ ун енне пăхса Чапаев.—Кузнецов вара маттур! Снарядсем пире питех те кирлĕ.

Сасартăк Василий Иванович ординарецĕ еннелле çаврăнчĕ:

— Мĕн шухăша кайрăн, философ? Тен, чăнах та Жигули тăвĕсем хушшине ылттăн шырама çынсем ярар мар-и, э?

Исаев хăйĕн командирĕ çине пăхса илчĕ. Чапаев куçĕсене кăштах хĕснĕ, вĕсенче чуна илĕртекен чее кулă çиçет.

— Кирлех-ши вара, Василий Иваныч?—сăмах çинех ыйтрĕ те Петька, пуçне силлесе, ахăлтатсах кулса ячĕ.





## НИКОЛАЕВСКА ИЛНИ

Чӳрече енне çурăмĕпе çаврăнса, Лоскутов пӳлĕм тăрăх васкамасăр утрĕ.

„Мĕн тумалла-ха? Йывăрлăхран епле тухмалла?“ — çĕрĕммĕш хут ĕнтĕ ыйтать хăйĕнчен хăй Пугачевски полк командирĕ. Йывăр шухăша кайнă Лоскутов капан пек купаланса тăракан хытă çӳçĕсене тăтăшах тăрмалантарать. Çамки тирĕ пĕркеленнĕ.

Тĕп ĕçпе çыхăнса тăман кирлĕ мар ыйтусем пăшăрхантарнă ăна. Темĕншĕн ăна, бригада Уральск хулинелле кайнă походран таврăннăранпа хăй пĕрре те Селезнихăна кайса ачисемпе курнăçманни аса килчĕ, чĕрине темле чĕпĕтсе ыраттарчĕ çак шухăш. Пĕррехинче тепле, пĕр кунлăха арăмĕ килсе кайрĕ, ăна та вăл ачисене курма пыма сăмах панăччĕ, анчах хăйĕн сăмахне çаплах пурнăçлаймарĕ.

Лоскутов тарăннăн сывласа илчĕ те йĕри-тавра пăхкаларĕ.

Пӳлĕмĕ пысăк та кичем. Урамалла тухакан уçă чӳречесенчен пăшалсемпе перкелешни, пулеметсенчен черетлесе пени тата штаб умне кăкарса тăратнă лашисем тулхăркалани илтĕнет. Çӳхе хăмаран тунă пӳлĕм леш енче пĕр вĕçĕмсĕр телефон шăнкăртатать. Такам, трубкăна илсе, çирĕммĕш хут ĕнтĕ хăрăлтатакан сасăпа кăшкăрать:

— Атăл итлет! Кам чĕнет?

Чӳречерен хĕвел çути кĕчĕ. Махорка тĕтĕмĕнче сăрă тĕслĕ курнаканскер, вăл сĕтел çине сарса хунă карттă çине ӳкрĕ те, чи кĕтесре выртакан циркуль куçпа пăхма çук çуталса кайрĕ.

Лоскутов, аллисене хыçалалла тытса, сĕтел патне пычĕ. Шăпăрт ларакан командирсем çине пăхса, темле янăравсăр сасăпа:

— Ну, мĕн тăвăпăр?—терĕ.

— Çап-ла, ĕçсем начар-ха...—вăрăммăн тăсса каларĕ те Силантьев карттă çине тата хытăрах пĕшкĕнчĕ.

Чӳрече янаххи çинче ларакан Демин нимĕн те чĕнмерĕ.

Ĕçсем чăнах та питĕ йывăр килсе тухнă.

Самарта шурă гвардеецсен правительстви хуçаланать. Кăнтăралла, Атăл тăрăх аналалла, Саратовпа Царицын еннелле, чехословаксен тыткăна лекнĕ çар çыннисенчен тăракан корпусĕн чаçĕсем шуса пынă. Тыткăна лекнĕ çав чехсене совет правительстви хăйсен çĕршывне тухса кайма ирĕк парсан, вĕсене Англипе Франци капиталисчĕсем социализмла çамрăк республикăна хирĕç пăлхава çĕкленĕ.

Августăн 20-мĕшĕнче чехословаксен чаçĕсем Николаевск хулине тытса илнĕ. Хĕрлĕ Çаршăн

ку пысăк çухату. Николаевскран Саратова тӳрĕ çул уçăлать. Совет çарĕсем вутлă унка лекрĕç.

Мĕнле пулин те Николаевска ирĕке кăлармаллах. Çапла вара Чапаев бригадин Порубежкăпа Карловкăра вырнаçнă полкĕсене, Давыдовка ялĕ урлă кайса, тăшмана хирĕç тухса атакăлама приказ панă.

Анчах, Лоскутовăн Порубежкăра тăракан полкĕ халĕ те чехословаксен отрядне хирĕç çапăçать пулсан, мĕнле пурнăçламалла-ха çак приказа? Тăшман Мăн Иргиз шывĕ урлă каçмалли кĕперсене тытса илнĕ те халĕ çине тăрсах Порубежка патне тухма тапаçланать.

— Сиксе тухать вĕт ирсĕр япала... Нумай пулмасть кăна-ха Василий Иваныч темиçе кунлăха отпуска кайнăччĕ—акă сана, инкек çитсе те тухрĕ!— терĕ пуçне сулкаласа Силантьев, карттăран уйрăлнă май.—Приказ приказах ĕнтĕ. Пурнăçлас пулать!

Лоскутов сарлака куçхаршийĕсене пĕрчĕ те хуллен калаçма пуçларĕ:

— Эпир тăшмана Николаевскра атакăлама Давыдовка еннелле чакма тытăнсан... мĕнле шухăшлатăн эсĕ, чехсен отрячĕ пире кансĕрлеме пăрахĕ-ши?

— Кĕтсех тăр!—кăшкăрса ячĕ Демин; унтан чӳречерен тулалла уртăнса çиллессĕн сурчĕ. Вара сасартăк чӳрече янаххи çинчен сиксе анчĕ те, алăк патнелле ыткăнчĕ.

— Василий Иваныч вĕçтерсе килет!—тесе кăшкăрчĕ вăл.—Тупата та çавă!

* *
*

Тăрантасăн хура лакпа сăрланă, анчах та халь тусанпа витĕнсе сăрă тĕслĕ пулса кайнă çунаттисем пĕр вĕçĕмсĕр шакăртатса пыраççĕ.

Çанталăк шăрăх тăнипе çĕр çуркаланса пĕтнĕ. Шăтăк-путăклă çул урапа кустăрмисем чупнă чух, чугунран шăратса тунă пек, кĕмсĕртетет. Хыçалтан вĕрекен вĕри çил, çăра сăрă тусана çĕклесе, урнă пек вĕçтерсе пыракан тройкăран малалла хуса каять.

Порубежка патнелле çывхарса пынă май, Чапаев пушшех те васкатма пуçларĕ: часрах, хăвăртрах штаба çитес! Василий Иванович час-часах хăй выранĕнчен тăрать те, ларкăч çинче ларса пыракан Исаевăн хыткан хулĕнчен ярса тытса, умри çул çинелле тинкерсе пăхать.

— Хăвала, Петька! Хăвала!—тет вăл.

Тăрантас хыççăн темиçе юланут вĕçтерсе пыраççĕ, Чапаев çурăмне ывăннă та тарланă лашасем хашлатса сывлани пырса перĕнет.

Çырма енчен пулеметсем шатăртатни, винтовкăсенчен тĕлсĕр-йĕрсĕр перкелени илтĕнет.

— Хăвала, Петька! Хăвала!—васкатать Василий Иванович, ординарецне хулĕнчен турткаласа.

Акă ĕнтĕ ял та. Кивĕ, юхăнса кайнă арпалăхлă анкартисем, алăксăр кĕлет вĕлтлетсе юлчĕç, виçĕ лаша кӳлнĕ тăрантас пушанса юлнă урама вĕçтерсе пырса кĕчĕ. Çулăн икĕ еннелле таракан чăхсем кăтиклетме пуçларĕç, пĕр килкартинче çинçе сасăллă йытă вĕрсе ячĕ.

Площадь урлă иртсе пынă чух Чапаев пожарнăй сарай патне кĕпĕрленсе тăнă халăх ушкăнĕ çине тĕлĕнсе пăхрĕ. Çара пуçсем, аялтан тăхăнмалли шурă кĕпесем, çара çурăмсем курăнса кайрĕç.

— А ну-ка, çавăр-ха,—хушрĕ Василий Иванович Исаева.

Лашасем çул çинчен пăрăнчĕç те, тăрантас кустăрмисем типсе ларнă курăк тăрăх çемçен кусма пуçларĕç.

— Кунта мĕскер тата... мĕнле цыгансен таборĕ?—хыттăнах кăшкăрчĕ Чапаев.

Ун умĕнче нумай пулмасть организациленнĕ ротăна хăйсен ирĕкĕпе çырăннă çамрăксем пуçĕсене пĕксе тăраççĕ. Бригада начальникĕн ыйтуне хирĕç никам та пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

Куçĕсене хĕссе, Василий Иванович кăштах тăхтаса тăчĕ, унтан васкамасăр калаçма пуçларĕ.

— Эпĕ сире, маттурсем, малтанах паллаймарăм та. Пăхатăп та аякран—эсир боецсем пек те мар. Мĕнле çынсем кусем?—тесе шухăшларăм... Мĕн тăваççĕ?—тетĕп.

Пурте, хытса тăнă пек, пĕрре те хускалмарĕç.

Чапаевăн симĕсрех, хăвăрт куçĕсем аптраса ӳкнĕ çынсен пичĕсене сăнаса тухрĕç. Пожарнăй сарай алăкĕ патĕнче, таччăн кĕпĕрленсе тăнă йĕкĕтсем хыçĕнче, начбриг куçĕсем пĕр боеца асăрхарĕç: ăна вăл эрне маларах, хăй полка çырăннă чухнех астуса юлнăччĕ.

— Э, кунта манăн тус та пур мар-и? Çаçе хам йышăнсаттăм!—терĕ те Василий Иванович, йăл кулчĕ.—Атя-ха, Аксенкин, çывхарах кил, калаçса пăхăпăр.

Пурте çав боец еннелле çаврăнса пăхрĕç, ăна çул парса икĕ айккинелле пăрăнчĕç, вăл вара вăраххăн, урипе хыпашласа утнă пек, тăрантас патне çывхарчĕ. Вăл вунçичĕ çулсене çитнĕ çамрăк, унăн çӳлти тути çинче кăштах сăрăрах тĕслĕ мамăк шăтса тухнă. Тулли пичĕсем, хĕрачанни пек, ачашшăн хĕрелсе тăраççĕ.

Чапаев: „Каласа пар-ха, боец юлташ, мĕнле ырă ĕç тăватăр эсир кунта?“ тесе ыйтсан, Аксенкин пĕр секундлăха пуçне çĕклерĕ те начбрига питĕнчен пăхрĕ. Çамрăкăн пысăк та таса кăмăллă куçĕсем сасартăк шывланчĕç, куç

хупаххисем хăвăрт мăчлатма пуçларĕç. Айăпа кĕнĕ пек хуллен каласа хучĕ вăл:

— Çавăн пек пулса тухрĕ...

Кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн, малалла каларĕ:

— Хам акă... халĕ ĕнтĕ çын куçĕнчен пăхма та намăс!.. Çапла пулса тухрĕ-ха вăл... Тăшман пирĕн çине атакăна тухрĕ те, эпир... Тӳссе тăраймарăмăр. Кĕпер патне чупрăмăр—ăна лавсемпе пӳлсе лартнă. Вара йăлтах пуçсене çухатрăмăр. Хăшпĕрисем винтовкисене çеç мар, тумтирĕсене те, пĕтĕмпех тенĕ пек, пăрахса хăварчĕç... Хăйсем, паллах вара, шыва... Çапла калатăп-и, атьсем?

— Мĕн унта, йăлтах тĕрĕс...—терĕ ирĕксĕррĕн пĕр вăрăм сăмсаллă, шатрарах питлĕ йĕкĕт.

Начбриг мăйăхĕсене чĕпĕткелесе çапла ыйтрĕ:

— Эпĕ хăвна полка епле йышăннине астăватăн-и, Аксенкин? Эсĕ ун чухне мĕн каларăн, астăватăн-и? „Хăюллă, паттăр пулăп...“ Пĕр эсĕ çеç те мар,—терĕ Чапаев çинçерех сасăпа ытти боецсем çине пăхса.—Пурте эсир, маттурсем, Совет влаçĕн тăшманĕсене хирĕç пурнăçăра та хĕрхенсе тăмасăр кĕрешме пултăр! Халĕ мĕн... Халĕ мĕскер пулса тухрĕ-ха? Мана улталарăр, Хĕрлĕ Çара намăс кăтартрăр пулать?

Аксенкин хăюллăн пуçне çĕклерĕ те тăрантас патне таччăнах пырса тăчĕ. Вăл хĕрӳллĕн те мĕнпур таса кăмăлтан:

— Каçар пире, Чапаев юлташ!—терĕ.—Урăх нихçан та... нихçан та кун пек намăс курмалла тумăпăр!

Ытти йĕкĕтсем те шавлама, кĕрлеме пуçларĕç.

— Ĕмĕрне те пулмĕ тек!

— Каçар, Чапаев юлташ!

Василий Иванович ура çине тӳрленсе тăчĕ.

— Иккӗрен пӗри: е килӗрсене кайӑр—мана хӑравҫӑсем кирлӗ мар,—терӗ те начбриг, аллине ҫӗклесе чӑмӑрне чӑмӑртарӗ,—е сирӗн хӑюллӑ, паттӑр хӗрлӗармеецсем пулмалла... сирӗн ҫинчен халӑх ырӑ сӑмахпа ҫеҫ асӑнмалла пултӑр. Ыранах вара боецсен мӗнле пулмалла, ҫавӑн пек форма тӑхӑннӑ пултӑр, кашниех хӗҫпӑшаллӑ пултӑр... Хӑвӑр суйлӑр!

Боецсем каллех шавлама, пӗр харӑс кӑшкӑрашма тытӑнчӗҫ:

— Ӳлӗмрен нихҫан та улталамӑпӑр!

— Ҫитӗ... Халӗ ӗнтӗ эпир мар, ылттӑн погонлисем пиртен тарӗҫ!

— Хамӑр айӑпшӑн ытлашшипех тӳрре тухӑпӑр!

Хӑйсене ротӑна таврӑнма ирӗк парсан, ҫамрӑксем пӗринчен пӗри иртсе кайса тӑкӑрлӑк еннелле чупрӗҫ. Аксенкин никамран малта вӗҫтерсе пырать.

Исаев лашисене тапратрӗ. Темиҫе минутран виҫӗ лаша кӳлнӗ тӑрантас штаб умне ҫитсе чарӑнчӗ. Чапаева хирӗҫ крыльца ҫинчен чунтанах хӗпӗртесе кайнӑ Демин чупса анчӗ. Ун хыҫҫӑн Лоскутовпа Силантьев аран ӗлкӗрсе пыраҫҫӗ.

* *
*

— Василий Иванович... вӑт кӗтменччӗ!—терӗ хумханса Лоскутов, ансӑр коридор тӑрӑх Чапаев хыҫҫӑн утса пынӑ май.—Мӗнле килме шут тытнӑ-ха эсӗ? Эпир вара сансӑр...

Начбриг хӑвӑрт ҫаврӑнчӗ те, ҫиленнипе тӗксӗмленсе кайнӑ куҫӗсемпе Пугачевски полк командирӗ ҫине шӑтарасла пӑхрӗ:

— Эсир кунта Николаевска пама шухӑш тытнӑ та, эпӗ вара, сирӗн шухӑшӑрпа, пӳрне витӗр пӑхса лармалла-и?

Пӳлӗме кӗчӗҫ. Ҫамки ҫинчи тарне шӑла-шӑла, Лоскутов ӗҫсем епле пыни ҫинчен каласа пачӗ.

Начальникӑн сӑн-питӗнче вӑл ҫиленни палӑрчӗ: унӑн ҫӳхе сӑмси шӑтӑкӗсем пӗрре сарӑлса, тепре пӗрӗнкелесе илеҫҫӗ, ҫинҫе куҫхаршийӗсем сӑмса патӗнче пӗрлешрӗҫ, анчах полк командирне вӑл шӑппӑн, сӑмах калама пачах та пӳлмесӗр итлерӗ.

Лоскутов каласа пӗтерсен, Василий Иванович, мӑйӑхне пӗтӗркелесе, шӑппӑн асӑрхаттарчӗ:

— Хӑлха таранах путса ларнӑ.

Пӗр вӑхӑт чӗнмесӗр тӑнӑ хыҫҫӑн:

— Доброволецсен ҫӗнӗ ротин командирӗ халӗ те ҫав... юха сӑмса Коробовах-и?

— Коробовах,—терӗ Силантьев.

— Вӑл вырӑна Демина уйӑрса лартатӑп. Ротӑна халех йышӑнмалла.—Чапаев Силантьев ҫине пӑхса илчӗ:—Эсӗ те халех хӑвӑн батальонна кай та атакӑна хатӗрлен. Порубежкӑран ан чакнӑ пултӑр. Епле пулсан та, Мӑн Иргиз урлӑ каҫмалли кӗперсене каялла туртса илмеллех пирӗн.

Приказсем парса пӗтерсен, Чапаев ӗҫлеме чӑрмантаракан хӗҫне вӗҫертсе хучӗ те, сӗтел патне тенкел куҫарса лартрӗ.

Начбриг ларчӗ, карттӑ ҫине пӗшкӗнчӗ. Унӑн хул лапаткисем гимнастерка витӗрех палӑрса тӑраҫҫӗ. Унпа юнашар, пӗр сывламасӑр тенӗ пек, Лоскутов тӑрать.

— Халӗ итле,—пуҫларӗ юлашкинчен Чапаев, полк командирне карттӑ тӑрӑх сӑнама аллипе кӑтартса.—Бригадӑн икӗ полкӗ те наступлени пуҫласа ямалла. Татӑклӑ наступлени. Тӑшмансене тылран, чи вӑйсӑр вырӑнтан пырса ҫапӑпӑр... Ҫав господасене пӗрре тӑн кӗртмеллех пулать!.. Санӑн полк кӗперсене каялла туртса илет. Карловкӑна вара, Соболев патне, приказпа халех

ординареца ярăпăр. Разински полк Гусиха урлă чехсен тылне тухать те, вĕсене санăн йĕкĕтӳсемпе пĕрле Таволжанкăра атакăлать.

Пугачевски полк командирне пулас операци планĕ çинчен каласа панă хыççăн, Василий Иванович циркульпе сĕтеле шаккаса ыйтрĕ:

— Ăнлантăн-и?

Пăртак чĕнмесĕр тăнă хыççăн, шанчăклăнах çапла каларĕ:

— Ĕçе ăнăçлă туса пырсан, шурă бандитсенчен Николаевска хăтарма та, тăшмана вăйсăрлатса хăварма та пулать.

Юлашки приказсем çине алă пусса ординарецне Карловкăна пакетпа янă хыççăн, Чапаевпа Лоскутов малти лини патнелле кайрĕç.

* *
*

Пугачевски полк хирте, çырман кукăр-макăр çыранĕ патĕнчен çур километрта, позици йышăннă.

Батальонсемпе ротăсем кĕпер патĕнче, çырман ку енче çирĕпленсе ларнă тăшманпа перкелешеççĕ. Сылтăм енчен, тепĕр енчи хăваллă чăнкă çырантан, чехсем пирĕн хĕрлĕармеецсене пулеметсемпе переççĕ.

Икĕ пĕртăван Кузнецовсем—Семĕнпа Тихон—пĕр тĕмеске хыçĕнче выртаççĕ. Сайра хутра çеç переççĕ—патронсене перекетлеççĕ. Вĕсен гимнастеркисем, çурăмĕсем тĕлĕнче, тăварлă тарпа касăлса хуралса ларнă, хĕрелсе кайнă пичĕсем тăрăх таса мар тумламсем юха-юха аннă.

— Хĕвелĕ те пулин часрах анса ларинччĕ, пĕреххут,—терĕ Тихон çиллессĕн. — Ха, епле ăшалаççĕ! Канма та памаççĕ!

Семĕн картузне çамки çинерех пусса лартрĕ. Çуркаланса пĕтнĕ тутисене çуласа илчĕ те:

— Кунта нумаях тăраймастпăр пулĕ çав...— терĕ сÿрĕккĕн.

Тихон чĕнмерĕ. Пуçне тата та аяларах пĕкрĕ, нумайччен хускалмасăр, тарăн шухăша кайса выртрĕ.

Тĕмеске çине пысăк симĕс саранча сиксе ÿкрĕ те, хырăмĕпе çĕр çумне лăпчăнса, пытанса ларчĕ. Семён, аллине хуллен çĕклесе, саранчана ывçипе хупласшăн пулчĕ, анчах лешĕ сикрĕ те, хĕрлĕрех çÿхе çунаттисене сарса, вĕçсе кайрĕ.

Çак вăхăтра Семёна сылтăм енчи кÿрши— Василенко старик чĕнчĕ. Семён çаврăнса пăхрĕ кăна, Василенко хăлхи таранах елпĕрсе кулса ячĕ, унăн мăйăхĕ айĕнчен саралса кайнă сайра шăлĕсем курăнчĕç.

— Василь Иваныч вĕçтерсе çитрĕ!—терĕ вăл.

Чапаев килнĕ хыпар темиçе секундранах мĕнпур боецсем патне çитрĕ. Хĕрлĕармеецсем, начбрига хăвăртрах курас тесе, каялла çаврăна-çаврăна пăхаççĕ. Пурте хаваслăрах, чĕрĕрех пулса кайрĕç. Пĕр-пĕринпе калаçкалама пуçларĕç.

— Халĕ, атьсем, ан хуйхăрăр!

— Паян чехсем рак ăçта хĕл каçнине курĕç-ха!

Операцие ертсе пырас ĕçе начбриг хăй çине илчĕ.

Чапаев халех салтаксене запаслăх патронсем валеçсе пама тата шыв ĕçтерсе тухма приказ пачĕ.

— Астутаратăп: атакăна пурте хатĕр пулмалла,—терĕ Василий Иванович командирсене.

Чапаев тачанка çине хăпарса тăчĕ те, бинокльпе тăшманăн позицийĕсене чылайччен пăхса, пулеметсем лартмалли вырăнсене палăртрĕ. Шăхăра-шăхăра пульăсем вĕçсе иртеççĕ, анчах вăл нимĕн те асăрхаман пек тăрать.

Шура кайăк чăмăркки пек пĕр пĕчĕк пĕлĕт татки йăсăрланса хăпарчĕ те хĕвеле хупласа хучĕ, вара сасартăк çеçенхирте çил тапранчĕ, хура тусан айĕнче боецсем те курăнми пулчĕç.

Начбриг, çĕре сиксе анса, хăш тĕле пулеметсем ытларах лартмаллине кăтартрĕ.

Исаев пĕр кружка сивĕ шыв илсе пычĕ.

— Ĕçессӳ килмест-и, Василий Иваныч?—терĕ вăл куларах.

Чапаев ĕçсе тăранчĕ, унтан, сылтăм аллин шĕвĕр пӳрнипе мăйăхĕсене якаткаласа, утса кайрĕ. Ординарецĕ ун хыççăн пычĕ.

Йĕркеленсе выртнă боецсен пĕрремĕш ретне çитрĕç. Боецсем кăштах пăрăнса вырăн панă хыççăн, начбригпа ординарец çĕр çине выртрĕç.

Команда пулчĕ: „Перебежкăпа чупа-чупа, малалла куçма хатĕрленĕр!“ Пурте, халь тесен халь сиксе тăрса малалла чупса кайма хатĕрленсе, шăпланса выртрĕç. Çак шăплăх пĕр минут е икĕ, виçĕ минут тăсăлчĕ пулĕ. Пурте „перебежка“ тенĕ кĕске те çивĕч сăмаха кĕтсе тăнă пулин те, вăл кĕтмен çĕртенех янăраса кайнăн туйăнчĕ:

— Перебежка! — кăшкăрчĕ Чапаев. Боецсен ĕречĕ пĕр çын пек çĕкленчĕ.—Хăвăртрах!

Пурте малалла ыткăнчĕç.

Хĕçне сулахай аллипе тытса, начбриг ыттисемпе пĕрле чупрĕ: вăл пĕрре малалла тинкерет, тепре—штыкĕсене малалла тăснă боецсен ĕречĕ çине çаврăнса пăхса илет.

Чехсен пулемечĕсем шатăртаттарма пуçларĕç.

— Выртăр!

Кашни тăрса чупмассерен кĕпер патне çывхарса пычĕç. Мăн Иргиз леш енчи çыранти хăмăшсем те лайăххах курăнакан пулчĕç ĕнтĕ.

Семĕн Кузнецов асăрхансарах пуçне çĕклесе

пăхрĕ те, тĕлĕннипе унăн куçĕсем чарăлса кайрĕç.

Кун каçиччен вăл Иргиза пĕрре çеç мар курчĕ ĕнтĕ, анчах çапах та ачаранах пĕлекен çеçенхир тăрăх юхса иртекен çак кукăр-макăр та ăшăх çырма халĕ темле урăхла пек туйăнса кайрĕ, унăн чунне хумхантарса ячĕ.

Ыйхăласа, пуçĕсене пĕксе ларакан хăмăшсем те, тăмлă чăнкă çыран та, шурăрах-кăвак çулçăллă вĕтĕ хăвалăх та, тĕпсĕр сенкер пĕлĕт те çак лăпкăн юхакан шыв çине, хăйсене такам тухатнă пек, тĕлĕнсе пăхаççĕ. Пĕр самантлăха Семĕн вăрçă çинчен те, пуç урлă вĕçсе иртекен пульăсем çинчен те, ăнсăртран хăй те часах вилсе выртма пултарни çинчен те мансах кайрĕ.

Ача чух лашасемпе выртмана кайни, шурăмпуç килнĕ чух пулă тытни, тата тем те пĕр, мĕн чĕрине çывăх, мĕн тăван—çавă пурте Семĕнăн асне килчĕ.

Сасартăк темскер ши! шăхăрса илчĕ, Кузнецовăн малалла тăснă аллипе юнашар çĕр пăртак мăкăрăлса тухрĕ.

— Пуçна чик! — тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ Семĕна. Çак паллаймми, хушса каланă пек сасă— Василенко сасси пулчĕ иккен.

„Ку пуля кĕçех мана тиветчĕ вĕт",—шухăшласа илчĕ Семĕн; çывăх хăрушлăха туйни унăн пĕтĕм алли-урине хытарса лартрĕ.

Боецсем пĕр сас-чĕвсĕр, шăппăн кĕтсе выртаççĕ. Халех атака пуçланмалла... Акă, юлашкинчен, ĕмĕр тăршшĕн туйăннă çак пилĕк минут хушшинче кĕтни тинех çитрĕ:

— В атаку-у!.. Ур-ра-а!..

Боецсем сиксе тăчĕç те, хăватлăн, пĕр вĕçĕмсĕр „урра" кăшкăрнипе сывлăша кисретсе, малалла ыткăнчĕç.

Семён ыттисемпе пěр ěретрех чупса пычě. Ыттисем пекех, вăл „урра“ кăшкăрчě, хăй пěр минут каярах шикленме пултарнинчен халě хăй тěлěнчě. Унăн пěртен-пěр ěмěчěпе туйăмě—малалла чупасси. Малаллах, малаллах! Хăвăртрах тăшмана аркатса-ирсе тăкас! Кашни самантрах унăн пурнăçне татма пултаракан вилěм çинчен текех шухăшламарě вăл.

Семён Чапаева курчě. Начбриг хěçěпе сулкаласа, чупакансен ěретěнчен çур утăм маларах пырать.

„Акă вăл, пирěн тăван, пирěнпех“,—шухăшларě Семён, чупакан урасен сассине итлесе пынă май хыçалалла, юлташěсем çине çаврăнса пăхса. Çав самантрах вăл Тихон шăллěн тăнлавě çинче сарăлса кайнă хěрлě йěр курчě.

„Шăллăма мěн пулнă? Аманчě-шим?“—тесе шухăшлама та ěлкěреймерě Семён, Тихон тайăлса кайрě те, аллинчи винтовкине ӳкерсе, çěре тěшěрěлсе анчě.

Çак вăхăтра пирěн ěретсем хыçěнче пулемётсем пеме пуçларěç. Чехсен темиçе салтакě, окопěсенчен тухса, кěпер патнелле чупрěç.

Хěрлěармеецсем тата хытăрах „ур-ра“ кăшкăрса ячěç.

Тăшман тӳсеймерě, чакма тытăнчě. Винтовкисене пăраха-пăраха, салтаксем кěпер çинелле кěпěрленсе чупма пуçларěç. Офицерсем вěсене чарма хăтланчěç, анчах вěсене хăйсене таптама тытăнчěç. Сехре хăпнă офицерсем йывăç кěпер тăрăх аттисемпе кěмсěртеттерсе кайрěç.

Кěпере туртса илсен, Чапаев полка Таволжанка патнелле ертсе кайрě. Разведка пěлтерчě: тăшман хăйěн мěнпур вăйěпе Пугачевски полка хирěç çапăçма хатěрленет иккен.

— Пире çавă кирлě те,—терě начбриг разведка начальникě каланине итлесе пěтернě хыççăн.

Чылай тĕттĕм пулсан, полк çĕр каçма чарăнчĕ. Каçхи апат хыççын Чапаев хуралсене тĕрĕслерĕ, унтан Лоскутовпа пĕрле канма чарăннă стан тăрăх кайрĕ. Сылтăм енчен те, сулахай енчен те çывăрма выртнă салтаксем шăппăн калаçни, кулни илтĕнет-ха, таçта юнашарах пĕри хуллен мăкăртатса юрлать.

— Илтетĕн-и?—шăппăн ыйтрĕ Василий Иванович, полк командирне аякĕнчен хуллен тĕртсе. Çавăнтах ÿпкелешме тытăнчĕ: — Мĕнле-ха эсĕ çакăн пек ăмăрткайăксемпе тăшмана çĕнеймен? Е эсĕ: „тăшмана яланах аркатмалла, хамăрăн унран нихçан та тармалла мар"—текен заповеде мантăн-и?

Василий Ивановича такам чĕнчĕ. Пĕр тĕле пухăнса ларнă хĕрлĕармеецсен ушкăнĕнчен вăрăм йĕкĕт уйрăлчĕ. Кăмăллă та палланă сасăпа вăл çапла каларĕ:

— Эпир кунта сире валли те яшка хăвартăмăр. Ĕçе пула Василий Иваныч çиме те манса кайĕ, терĕмĕр. Тен, çисе пăхатăр?

— Семĕн Кузнецов-и?—ыйтрĕ начбриг.

— Шăпах çавă!—тавăрчĕ лешĕ.

— Тавтапуç. Эпĕ çикелерĕм.—Начбриг боец патне çывхарчĕ те, аллине унăн хулĕ çине хучĕ:— Санăн хуйхă, теççĕ?

— Шăллăма... Тихона вĕлерчĕç...—терĕ Кузнацов йывăррăн.

— Эсĕ вара епле?

— Гусихăна каласа ятăм. Ыран атте килет.

— Отпуск ил... пĕр-ик кунлăх; шăллуна пытарма. Эсĕ маттур çапăçнă тет. Мана каласа пачĕç ĕнтĕ.

Кăштах шухăшласа тăнă хыççăн Семĕн таранăн сывларĕ те пуçне пăркаласа илчĕ:

— Кирлĕ мар, Василий Иваныч. Кун пек вăхăтра... юлташсене пăрахса кайсан...

Тата кăштах чĕнмесĕр тăчĕ те аран илтмелле каласа хучĕ:

— Эпĕ Тихонпа сывпуллашрăм ĕнтĕ... Халĕ мĕскер...

* * *

Тепĕр кун, августăн 21-мĕшĕнче, Степан Разин ячĕпе тăракан полк тăшманăн тылне тухни çинчен донесени илсен, Чапаев атака пуçласа яма приказ пачĕ.

Тăшман хăйĕншĕн вилĕмле хăрушлăх килсе тухни çинчен сисмен те. Хăйĕн мĕнпур туппиcемпе пулемĕчĕсене вăл Пугачевски полка хирĕç тăма хатĕрлесе хунă.

Вĕри çапăçу пуçланмалла.

Василий Иванович патне доброволецсен ротин командирĕ Демин пычĕ.

— Начбриг юлташ, калама ирĕк парăр,—терĕ вăл.—Мана шанса панă рота çапăçăва тухма пур енчен те хатĕр. Хĕрлĕармеецсем хăйсене малти ĕрете куçарма ыйтаççĕ.

Чапаев пĕртак шухăшласа тăчĕ, тусанланнă атă сăмси çине пăхса илчĕ, унтан ротăна сулахай енчи фланга пĕрремĕш ĕрете куçарма хушрĕ.

Чехсен батарейи хаяррăн пеме пуçларĕ. Снаряд хыççăн снаряд çурăлать. Тусанлă, тăпраллă, хĕрлĕ вут-хĕмлĕ юпасем çӳлелле, уяр та таса пĕлĕт патнелле сирпĕнсе хăпараççĕ.

Окопсем чавса лайăх çирĕпленсе ларнă тăшман пĕр атака хыççăн тепĕрне каялла хуса ярать... Анчах акă вăл юлашкинчен „хĕскĕче“ лекрĕ. Чехсем асăрхаман та: Разински полк, вĕсен тылне кĕрсе кайса, хыçалтан пеме тытăнчĕ. Пăлхавçăсем хăраса ӳкрĕç, арпашса кайрĕç.

Часах батарея шăпланчĕ. Пулемётсем те сайрарах пеме пуçларĕç: чылайăшне тăшман малти линирен илсе васкавлăн хăйĕн тылне куçарчĕ. Таволжанка тăрăх ниçта кайса кĕме пĕлмен обозсем каллĕ-маллĕ вĕçтерсе çӳреççĕ.

Çак вăхăтра пугачевецсем юлашки атакăна çĕкленчĕç. Боецсен ĕречĕсем хыçĕнче хăла лаша утланнă Чапаев çил пек вĕçтерсе çӳрет.

— Хăюллăрах, ăмăрткайăксем!—тесе кăшкăрса хавхалантарать вăл боецсене.—Халĕ ĕнтĕ тăшман тӳссе тăраймасть!

Унтан, пынă çĕртех çĕнĕ приказсем парса, малалла вĕçтерсе каять.

Начбриг Силантьев батальонĕ патĕнчен ĕрĕхтерсе пынă чух, ăна ула-чăла сайра сухаллă пĕр лутрарах боец винтовкипе сулласа кăшкăрчĕ:

— Василь Иваныч! Анкă-минкĕ пуля ухмах вăл... сыхланарах çӳресчĕ!

Чапаев хаваслăн кулса илчĕ те алхаснă пек сасăпа кăшкăрчĕ:

— Мана нимĕнле пуля та лекмест! Мана— тухатнă!

Пуриншĕн те савăнăçлă пулса кайрĕ. Урасем çирĕпреххĕн пусма пуçларĕç, сайра хутран çеç кам та пулин пуçне пĕксе илет.

Тăшман окопĕсем инçе те мар ĕнтĕ, çывăхрах. Çак вăхăтра сулахай енчи фланга çитсе тухнă Василий Иванович лаши çинчен сиксе анчĕ те, хĕçне йĕннинчен туртса кăларса, çĕнĕ ротăри доброволецсен ĕречĕ умне чупса тухрĕ:

— Ур-ра, атьсем!

— Ур-ра-а!—тесе харăссăн ответлерĕç боецсем начбриг сассине хирĕç.

Тарăн мар окопсемпе чехословак салтакĕсен кăвакарса кайнă пичĕсене те лайăхах курать ĕнтĕ Аксенкин, анчах сасартăк унăн хулĕ касса ыратса

кайрĕ. Хăйне хуса иртсе каякан юлташĕсенчен юлас мар тесе, çав-çавах чупнă май: „Амантрĕçех-шим?"—тесе шухăшларĕ вăл. Çавăнтах хăй ун çинчен манса кайрĕ.

Кĕтмен çĕртенех Аксенкин умне Чапаев çитсе тăчĕ. Вăл хăйĕн пĕвĕпе çамрăк боеца, ăна хирĕç чупса пыракан пысăк пуçлă лутака салтакран хўтĕлерĕ тейĕн.

— Чикĕр вĕсене, атьсем!—тесе кăшкăрчĕ те начбриг аллипе сулчĕ.

Ансăр кăна хĕç çивĕччĕшĕ ялтăртатса илчĕ, çав самантрах лутака салтак месерле кайса ўкрĕ.

Халĕ Аксенкин çинелле тепĕр салтак çинçе те хăйăлти сасăпа кăшкăрашса чупса пырать. Унăн хăранипе чалăшса кайнă ырханкка пичĕ çинчи тикĕс кастарнă мăйăхĕ темле кулăшла шăртланса тăрать.

„Мĕскер-ха эпĕ капла?—шухăшласа илчĕ Аксенкин; унăн чĕри хăвăрт та хытă тапма пуçларĕ.—Вăл мана халех... халех чиксе пăрахать вĕт..."

Кăшт пăрăнсарах тапса сикрĕ те Аксенкин, хăйне хирĕç пыракан салтака айккинчен штыкпа тăрăнтарчĕ. Лешĕ епле ўкнине те курмарĕ вăл,— малалла, ял еннелле таракан офицер хыççăн чупрĕ.

Пушă окоп урлă çăмăллăнах сиксе каçрĕ Аксенкин. Йывăррăн хашкаса чупакан хĕрлĕ-хăмăр ĕнселлĕ самăр офицера хуса çитес чух, лешĕ сасартăк çаврăнчĕ те револьверпе персе ячĕ.

Боец пуçĕ çинчен, çил вĕрсе ўкернĕ пек, картузĕ вĕçсе юлчĕ. Пĕтĕм вăйран сиксе ўкрĕ те вăл офицера штыкпа чикрĕ.

— Мĕн? Лекрĕ-и?—савăнса кăшкăрса ячĕ Аксенкин, офицер унăн урисем патне йывăррăн тĕшĕрĕлсе ансан.

— Мишка, эсӗ аманнӑ!—кӑшкӑрчӗ Аксенкина, ун ҫумӗнчен чупса иртсе каякан хуратутлӑ вӑрӑм йӗкӗт.

Боец сулахай хулӗ ҫине пӑхса илчӗ. Ҫанни пӗтӗмпех юнпа хӗрелнӗ. Тӗлӗнмелле тата: хулӗ юнпа вараланса пӗтнине курсан тин вӑл йывӑрланса кайнӑ алли сурма пуҫланине туйса илчӗ.

„Нимех те мар! Йӑлтах иртсе каять!“—йӑпатрӗ хӑйне хӑй Аксенкин, вара каллех Таволжанкӑналла таракан чехословаксем хыҫҫӑн чупрӗ.

* *
*

Тӑшмана ҫапса сирпӗтрӗҫ. Каҫ пуласпа Пугачевски полк, Чапаев ертсе пынипе, яла йышӑнчӗ. Чапаевецсем тӑватӑ йывӑр тупӑ, утмӑл пулемӗт тата тӗрлӗ ҫар хатӗрӗсем тытса илчӗҫ.

Таволжанкӑра чарӑнса тӑмарӗҫ. Начбриг приказӗ тӑрӑх, полксем Николаевска каякан ҫулпа малалла кайрӗҫ.

Интервентсенчен ирӗке кӑларнӑ ял умӗпе чапаевецсем илемлӗ те тикӗс ӗретсемпе утса иртрӗҫ. Вӗсене хирӗҫ килкартисенчен хӗрарӑмсемпе хӗрсем чупса тухса, пӗр-пӗрне пӳлсе кӑшкӑраҫҫӗ:

— Ҫул ҫине ҫӑкӑр илӗр, тӑвансем!

— Чӑкӑт илӗр, чӑкӑт!

— Пӗр татӑк сало... Сирӗншӗн юлашкине пама та шел мар!

Укӑлча патӗнче типшӗм те курпунтарах карчӑк тӑрать, аллинчи тӑм чӳлмекне вӑл таса шурӑ тутӑрпа витнӗ.

Шывлансарах тӑракан тӗссӗрленнӗ куҫӗсемпе куларах пӑхса, юнашар иртекен боецсенчен вӑл ӑшшӑн ыйтать:

— Ачамсем, чи аслине, Чапаев начальнике курасчӗ манӑн? Мӗнле-ши?..

Карчăка çапла ответлерĕç:

— Вăл, асанне, юланутпа пырать. Çӳлĕ çĕлĕк тăхăннă, мăйăхлă çынна курсан—çавă вара Чапаев!

Акă начбриг пырать. Ун тавра—командирсем. Вĕсем укăлча патне çитеспе карчăк хумханса ӳкрĕ, юланутсем патне васкарĕ:

— Калăр-ха, ачамсем, сиртен хăшĕ Чапаев?

Василий Иванович карчăк умне çитсе лашине чарчĕ:

— Мĕн пулчĕ, асанне?

Ватă хĕрарăм пуçне çĕклерĕ те, Чапаев çине тимлĕн пăхса:

— Эсĕ мĕн тери хăюллă та хитре!—терĕ.— Ĕç-ха, чунăмçăм, сĕт ĕç-ха. Ан тирке—ирхи сĕт... Манăн ывăлăм та тăшмансене хирĕç çапăçать. Тен, пĕлетĕн те пулĕ ăна? Варламов Иван ятлă?

— Çук, пĕлейместĕп,—кулса илчĕ Чапаев, карчăкран сивĕ чӳлмек йышăннă май.—Ăçта службăра тăрать вара вăл?

— Ăçта хурçă машинăсемпе çӳреççĕ, манăн Ванюк та çавăнта... Пĕлместĕн-и? Çапла пуль çав... Карчăк йывăррăн сывларĕ те пуçĕпе сулласа илчĕ.—Нумайранпа ывăлăмран çыру илмен ĕнтĕ. Чĕре вăл чул мар вĕт, ыратать...

Каç пуличченех тӳпере хĕрлĕрех таса мар пĕлĕтсем пуçтарăнма пуçларĕç. Таса та çутă кăвак вырăнсем сахалтарах та сахалтарах юлса пычĕç. Тĕттĕм пулнă çĕре пĕтĕм тӳпене сăрă пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Тĕттĕм те пĕр сас-чĕвсĕр çĕр çитрĕ.

Çурçĕрте бригада полкĕсем Николаевскран темиçе километрта вырнаçнă Пузаниха ялĕ патне çитрĕç. Малалла кайма май килмерĕ: икĕ утăмран та нимĕн те курăнмасть. Василий Иванович канма чарăнма хушрĕ.

Ывăннă боецсем стройран саланмасăрах канма

вырнаçрĕç. Пĕр виçĕ минутран пĕтĕм лагерь çывăрса кайрĕ.

Хуралсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Соболевпа Демин лагерь патнелле çул тытрĕç. Сасартăк çул енчен лаша ури сасси тата урапа кустăрмисем чĕриклетни илтĕнсе кайрĕ. Командирсем чарăнса итлерĕç.

Сасă вăйлансах пычĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук: çул тăрăх темле пысăк обоз пырать.

— Ман хыççăн шăппăнрах,—тесе пăшăлтатрĕ Соболев, Демин патне пĕшкĕнсе, çул еннелле чупрĕ.

Малтанхи лав патне пырса, Разински полк командирĕ кам пыни çинчен ыйтрĕ.

Урапа çинче, хыçаларах, тĕттĕмре курăнсах кайман мĕлке хускалчĕ, плащпа чăштăртаттарса илчĕ те, вырăсла начартарах калаçаканскер çиллессĕн:

— Эпĕ чехословаксен полковникĕ. Эпĕ хамăн полкпа Николаевска каятăп,—терĕ.

Соболев аптраса ӳкмерĕ, вăл „во фронт" тăрса аллине картузĕн сăмси патне тытрĕ те, уççăн, ăнланмалла каларĕ:

— Полковник господин, союзниксем килни çинчен халех хамăн полковнике, доброволецсен шурă отрячĕн командирне пĕлтерме ирĕк парăр.

Чехсен полковникĕ, кăштах çемçелсе йăвашшăн тавăрчĕ:

— Пĕлтерĕрех.

Соболев Демина штаба ячĕ, хăй хаваслансах доброволецсен отрячĕ кĕçĕр Чапаева çĕнтернĕ пек туса каласа кăтартма пуçларĕ.

Шăпах çак вăхăтра Демин начбрига тăшман çинчен пĕлтернĕ.

— Тĕрĕсех калатăн-и эс?—ĕненмесĕр ыйтрĕ Чапаев рота командирĕнчен.—Соболевпа иксĕр эсир çакна йăлтах тĕлĕкре курмарăр-и?

— Тĕп-тĕрĕсех калатăп, Василий Иваныч!.. Пăх-ха авă çул çине. Çутăсем куратăн-и?

Чапаев Демин тĕллесе кăтартнă еннелле пăхрĕ. Çул тăрăх, таçта аякка çитиех, çĕршер цигарка çутисем, сӳнсе пĕтмен кăвар пек, йăлтăртатаççĕ.

Начбриг приказсем пама тытăнчĕ. Пĕтĕм лагерь харăсах çĕкленчĕ. Тепĕр чĕрĕк сехетрен тупăсене чехсен колонни çине тĕллесе лартрĕç. Икĕ батальон ĕречĕпе саланса, никам туйми шуса, лавсем патнех çывхарчĕç.

Нимĕн те пĕлмен хаваслă полковник Соболева пирус парса сăйлать. Çак вăхăтра кĕтмен çĕртен пирĕн енчен тупă кĕрĕслетрĕ, винтовкăсемпе пени илтĕнчĕ.

Тăшманăн аркатса тăкнă полкĕнчен бригада хĕçпăшал, снарядсемпе патронсем, çар тумтирĕ нумай туртса илчĕ.

Çутăлнă чух вăл малалла кайрĕ.

Чехословаксен Николаевскри чаçĕсем, Чапаев полкĕсем хула хĕррине çывхарсанах, хуларан хăраса тухса тарчĕç.

Чапаев бригади Николаевска кĕчĕ, ăна савăнăçлă халăх хаваслanса кĕтсе илчĕ. Кăнтăрла хулара нумай çынлă митинг пулчĕ. Чапаев сĕннипе, Николаевск хулине çĕнĕ ят—Пугачев ятне пачĕç.





## „ЭПĔ—ЧАПАЕВ!"

Чӳрече умĕнче саралма пуçланă пилеш ларать. Витĕр касакан çил унăн йăлтăртатса тăракан йĕпе çулçисене татса таçта аякка, каç пулнă чухнехи тĕтреллĕ ĕнтĕрĕк ăшне вĕçтерсе кайса çухалать. Пĕр саралнă çулçи чӳрече кантăкĕ çумне çыпçăнса юлнă.

Василий Иванович, тăтăшах урама пăхса, çанталăк çине тарăхать. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ пĕр чарăнмасăр вĕтĕ те сивĕ çумăр пĕрĕхсе тăрать.

Хăйĕн умĕнчи пиçнĕ шултра çĕрулми чашăкне тĕртсе куçарчĕ те Чапаев, сĕтел çине чавсисемпе таянса, икĕ аллипе пуçне çупăрларĕ.

Кăштах вăхăт иртсен, вăл кăмака çинче выртакан Исаев ординарец çине пăхса илчĕ те:

— Мĕншĕн анмастăн? Улма сивĕнсе каять, кайран тути пĕтет,—терĕ.

— Ху тата мĕншĕн çиместĕн, Василий Иваныч? — ыйтрĕ лешĕ ăна хирĕç, хăй каллех минтер çине тăрăнчĕ.

— Çиес килмест, — аллине сулчĕ те Чапаев, каллех чӳречерен пăхма пуçларĕ. — Пуçра йăлтах урăххи, Петька...

Вăл каласа пĕтереймерĕ — алăк уçăлчĕ; хытă калаçса, Лоскутовпа Демин командирсем штаба кĕчĕç.

Сарлака хулпуççиллĕ, кĕрneклĕ Лоскутов сĕтел патне пычĕ те Чапаев умне таса мар симĕсрех тĕслĕ лучăрканнă хут татăкĕ хучĕ.

— Вуласа пăх-ха, Василий Иваныч, мĕн çыраççĕ шурă казаксем, — терĕ вăл, унтан айккинелле пăрăнса, картузĕ çинчи йăлтăркка тумламсене силлесе тăкма пуçларĕ.

— Çанталăкĕ те вара... ывăнма пĕлмесĕр юхтарать! — терĕ Демин та, çумăр тумламĕсенчен силленсе.

Чапаев йĕпе хута тӳрлетрĕ те сĕтел çине пĕшкĕнчĕ.

Шурă казаксен штабĕ хĕрлĕармеецсене контрреволюцилле „халăх çарĕ“ еннелле куçма чĕнет.

„Халăх çарне куçма васкăр, çапла тусан эсир турă умĕнче хăвăрăн пысăк çылăхăра каçарттарăр, — вулать Василий Иванович. — Эпир хĕрлĕ мура пĕтĕмпех пĕтерсе лартасси инçе мар ĕнтĕ, чĕрипе парăннă коммунист-антихриста, Христоспа унăн амăшĕ — таса турамăшĕ ылханнă шуйттан тусне Чапаева вара чи пирвай тĕл пулнă юпа çинех çакса вĕлерĕпĕр“.

Василий Иванович листовкăна чăмăртаса печĕ, унтан тăчĕ те пӳлĕм тăрăх уткаласа çӳрерĕ.

— Тупăннă сочинительсем! — тĕксĕмленнĕ куçĕсемпе ялтăртаттарса кулса илчĕ вăл. — Вĕсен штабĕнче никам та мар, монахсем лараççĕ пул-

малла. Хӗрлӗ боецсем-чапаевецсем камсем иккенне вӗсем таҫтан илткеленӗ тӑрӑх ҫеҫ пӗлкелеҫҫӗ пулас... Акӑ каярахпа эпӗ вӗсене ӑс парӑп-ха!

Пӳрт варрине чарӑнса, Чапаев пиҫиххине икӗ аллипе тытса чӑмӑртарӗ, куҫӗсемпе Лоскутова чӗнчӗ.

Полк командирӗ пычӗ, тӳрленсе тӑрса кӗске аллисене пӗҫҫисем ҫумне ҫат тытрӗ.

— Хӗрӗх-аллӑ чи хӑюллӑ ҫын суйласа ил,— терӗ Чапаев, вара сехечӗ ҫине пӑхса малалла каларӗ:—Тепӗр сехетрен разведкӑна яр.

— Юрӗ, Василий Иваныч!—Лоскутов, сак ҫинчен картузне илсе, алӑк патнелле утрӗ.

Василий Иванович полк командирне сасартӑк чарчӗ:

— Боецсене суйласа ҫитерсен, мана чӗн. Вӗсемпе пӗрле хам каятӑп.

Лоскутов Чапаева куҫӗнчен пӑхрӗ:

— Хӑвӑр кайни кирлех-и вара, Василий Иванович? Ҫывӑх кунсенчех ак пысӑк наступлени пулмалла... Санӑн унсӑрах та ӗҫ нумай.

— Шӑпах ҫавӑнпа ӗнтӗ, тӑшман мӗн тума хатӗрленнине пӗлмелле... Эсӗ — кай! — терӗ те Чапаев сӗтел патнелле утрӗ.

Лоскутов тухса кайрӗ.

Исаев васкаса кӑмака ҫинчен анчӗ. Разведкӑна каймалли ҫинчен илтсен, ординарец йӑлтах урӑхланса илемленсе кайрӗ. Ҫур кун кӑмака ҫинче выртнӑ кичем те юлхав йӗкӗтрен нимӗн те юлмарӗ. Чипер те яка тумланса, йӑлтӑртатса тӑракан пуличчен тасатнӑ аттине тӑхӑнсан, Исаев, утнӑ ҫӗртех хӗҫне ҫакса, Чапаев умне пырса тӑчӗ.

— Василий Иваныч,—терӗ вӑл,—мана Лоскутовпа кайма юрать-и? Пурне те хатӗрлесе ҫитерсессӗн, эпӗ сана чӗнме килӗп.

Ординарецне Чапаев пуҫӗнчен пуҫласа урисем таран пӑхса илчӗ те, ӑшшӑн кулчӗ:

— Каях!

Пӗлӗте кӗрхи хӗрлӗрех-кăвак ӗнтӗрӗк хупласа илчӗ, кашни секундранах штабра тӗттӗмленсе пычӗ. Çил кассăн-кассăн пырса лекет те, чӳрече кантăкӗсем салхуллăн чăнкăртатса илеççӗ.

Демин лампа çутса ячӗ. Урамра сасартăках çӗрлехи пек тӗттӗм пулчӗ.

— Мана та хупа пӗрле разведкăна пыма ирӗк пар, Василий Иваныч,—терӗ Демин, лампа хăюне пăрса кăларса.

Василий Иванович пăртак шухăшларӗ те пуçӗпе сулчӗ:

— Пуçтарăн!

Тепӗр хӗрӗх минутран Чапаев разведкăна кайма уйăрнă боецсем патне пырса çитрӗ. Пӗр вăхăт Василий Иванович нимӗн те чӗнмерӗ, вăл кашни чапаевеца куçран пăхса сăнарӗ. Унтан, аллипе сулса, хыттăн каларӗ:

— Ӗç, атьсем, тен, пит йывăр пулӗ... Çавăнпа та мана хăюллисем çеç кирлӗ. Кам шикленет—айккинелле пăрăн!

Боецсем хускалса илчӗç. Пӗр харăсах темиçе сасă илтӗнсе кайрӗ:

— Эпир нимӗнрен те хăрамастпăр!

— Пирӗн хушăра хăравçăсем çук!..

Çурçӗрте Чапаев отрячӗ тăшман йышăннă ял çывăхне çитрӗ, çак ял çине хăюллăн тапăнма палăртнă. Анчах та ял патне çитесси тепӗр километр пек юлсан, Василий Иванович çурма сасăпа юлашки приказсем парса пӗтернӗ вăхăтра, чи çывăхри тӗмеске хыçӗнчен юланутсен мӗлкисем курăнчӗç. Куçран чиксе те курмалла мар тӗттӗмлӗхре пӗлме çук—пирӗннисем-и ку çынсем, тăшмансем-и?

Исаев кăшкăрса ячӗ:

— Хăш полкран?

— Хăвăр хăш полкран?—тавăрчӗç лешсем.

Тавлашса пĕр-икĕ минут иртрĕ.

— Йĕркеленсе вырнаçăр, хатĕр пулăр,—шăппăн команда пачĕ те Василий Иванович Демина, хăй малалла вĕçтерчĕ.

Тĕмеске çинче пухăнса тăнă юланутсем патне çывхарсан вăл хăй умĕнче шурă казаксене курчĕ. Чапаевецсен отрядĕнчен вĕсем икĕ хут йышлăнрах пек курăнчĕ Василий Ивановича. Чапаев аптраса ӳкмерĕ, наганне кăларчĕ те кăшкăрчĕ:

— Эпĕ—Чапаев! Пăрахăр хĕçпăшалăра! Эсир ункăра!

Чапаевецсем хăйсен командирне пулăшма васкарĕç.

Тыткăна парăннă казаксенчен иккĕшĕ—офицерсем пулнă. Офицерсем çумĕнче кирлĕ документсем—карттăсем, приказсем, донесенисем тупрĕç.

— Мана çакă кирлĕ те,—терĕ Чапаев, Исаевран шурă офицерсен сумкисене йышăнса.

Подшибаловкăна тул çутăлнă чух таврăнчĕç. Малтанхи пекех сивĕ çумăр пĕрĕхсе тăрать пулин те, çил çав-çавах алхасать пулин те, чапаевецсем пурте хаваслă, кăмăллă пулчĕç.

Штаб умне çитсен, Чапаев пуринчен малтан хăйĕн лаши çинчен сиксе анчĕ. Ура айĕнче пылчăк лачăртатать. Василий Иванович крыльца çине хăпарнă чух ăна Демин кăшкăрса чарчĕ.

Хăйĕн хĕрсе кайнă лашине крыльца умнех чарса, полк командирĕ, чĕнпе туртса çыхнă пĕр темĕнле çыхă Чапаева тыттарчĕ.

— Казаксенчен пĕрин йĕнерĕ çумне çакса янăччĕ,—терĕ Демин.

— Мĕн вара кунта?—ыйтрĕ Василий Иванович.

Демин чĕркенĕ хутаç шăтăкĕнчен аллине чиксе, симĕсрех таса мар хут листисем туртса кăларчĕ:

— Листовкăсем... Шăпах ĕнер эпир Лоскутовпа сан патна илсе пыни пеккисем.

Чапаев допрос тума илсе каякан шурă казаксен офицерĕсем çине çаврăнса пăхрĕ.

— Ну, шурă погонлă господасем,—терĕ вăл куларах, куçне хĕссе,—кам кама тыткăна илчĕ? Эсир Чапаева-и е сире Чапаев-и?

Пăртак чĕнмесĕр тăнă хыççăн вăл, хĕçне авринчен çатăрласа тытса, çапла хушса хучĕ:

— Сирĕннисем валли часах... вĕри мунча пулать!

Чӳрече умĕнчи сайра çулçăллă пилеш çине, тӳпе тăрăх хăвăрттăн шуса иртекен шупка пĕлĕтсем çине пăхса илсе, Василий Иванович кĕтмен çĕртен кулса ячĕ:

— Çумăр чарăнать вĕт, Демин. Пăхсах паллă: лайăх çанталăк пуçланать!—терĕ.

* * *

Тепĕр темиçе кунтан 1-мĕш Самарски дивизин полкĕсем, вăхăтлăх çак дивизин командирĕ пулма уйăрса лартнă Чапаев ертсе пынипе, Орловская тата Ливенская патĕнче шурă казаксен çарне аркатса тăкрĕç. Атăл тăрăхĕнчи шурă гвардеецсен бандисемпе Уралти, Оренбург енчи тата Дон çинчи контрреволюцилле вăйсем пĕрлешес хăрушлăха пĕтерсе лартма хушса Сталин юлташ панă приказ пурнăçа кĕчĕ.





## КĂВАЙТ УМĔНЧЕ

Сентябрьти ĕнтĕрĕк хĕвĕрт хуралса-тĕттĕмленсе пычĕ. Тĕксĕмлененекен çӳлĕ тӳпере тĕл-тĕл çăлтăрсем те курăнма пуçларĕç ĕнтĕ.

Икĕ километра яхăн тăсăлакан Орловка ялĕн урамĕсенче шавлă та хаваслă.

Ывăннă пулин те савăнăçлă боецсем канма хатĕрленеççĕ: лашисене тăвараççĕ, винтовкисене пĕр çĕре тăратса хураççĕ, кăвайтсем чĕртеççĕ. Паллă купăсçă Серёжа Курочкин вара, хăйĕнчен ниçта та хăварман купăсне илчĕ те, вучах çывăхне ларса, ташă кĕвви калама пуçларĕ.

Курочкин патне пуçтарăннă чапаевецсене чылай кивелнĕ хут купăс пĕрмисем çинчи чечексем чăп-чăпар курăнса кайрĕç... Тахăшĕ ĕнтĕ савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ, йывăр аттисемпе çĕре тӳнклеттерсе, ура хуçса ташлама пуçларĕ.

Шурă гвардеецсен тыткăнĕнчен хăтăлнă хресченсем хĕрлĕармеецсене килĕсене чĕне-чĕне кĕреççĕ, подноссем çине çăкăр, арбузсем, дыньăсем хурса илсе тухаççĕ. Капăр тумлă, уçă саслă хĕрсем хапхасем умне пуçтарăнса юрăсем юрлаççĕ.

Халĕ кăна 4-мĕш çар командующийĕ патне, тăшмана аркатса тăкни çинчен донесени ăсатнă Чапаев канма вырнаçнă çар чаçĕсене тĕрĕслесе çӳрет, поварсене часрах каçхи апат хатĕрлеме васкатать, командирсемпе, боецсемпе калаçать. Ыттисемпе пĕрле кăвайт тавра вырнаçса тухнă ункăра хут купăссă ларнă тĕле Василий Иванович çитсе чаранна чух, чапаевецсем апат çиетчĕç.

— Ну, юлташсем, пурнăç епле пырать?— ыйтрĕ Чапаев, хĕрлĕармеецсене хавассăн пăхса илсе.

— Лайăх, Василий Иваныч!

— Шурă погонлисене вĕри мунча туса патăмăр-ха!

— Ларса çырткала, атту санăн ялан вăхăт çук!

Чапаев унка пырса ларчĕ. Тахăшĕ ăна кашăк пачĕ.

— Çемйунтен хыпар-хăнар пур-и, Иван?— ыйтрĕ вăл пысăк пуçлă лутака артиллеристран.

Боецăн сайра кăна шатраллă, çилпе куштăрканă пичĕ ăшă кулăпа çуталчĕ:

— Пур, Василь Иваныч, пулмасăр! Пурте сывă-ха!

— Ывăлу епле? Утма тытăнна-и?—çав-çавах тĕпчерĕ Чапаев.

— Мишка-и? Чупать!

Чапаев хăйпе юнашар ларакан шурă çӳçлĕ, кăвак куçлă вăтанакан йĕкĕт енне çаврăнчĕ.

— Сана амантнă пулас?—ыйтрĕ вăл йĕкĕтрен, унăн кивелнĕ гимнастеркин çанни çинче хытса ларнă юн курса.

Йӗкӗт хӗрӗмесленсе кайса пуҫне пӗкрӗ:

— Ирхине вӑл, ҫапӑҫура... пуля кӑштах алла чӗрсе кайрӗ.

— Суранна ҫыхтартӑн-и?

— Ҫук, ҫыхтарман... Йӑлтах иртрӗ ӗнтӗ вӑл, Чапаев юлташ!—хӗрсе калаҫма тытӑнчӗ хӑй ҫине Василий Иванович кӑмӑлсӑррӑн пӑхнине туйнӑ йӗкӗт.—Чӑнах та ыратмасть!

— Сусӑрланса каяс пулсан?.. Халех перевязкӑсем тӑвакан пункта кай.

Йӗкӗт кайрӗ.

Шатрарах артиллерист кашӑкне ҫуласа тасатрӗ те, халӗ те пӑтӑ савӑчӗпе тӗрмӗшекен Сережка Курочкин енне куҫ хӗссе, Чапаева ҫапла каларӗ:

— Пирӗн кунта, Василь Иваныч, Курочкин авланма хатӗрленет.

Чапаев хӑй кӑна сисмелле йӑл! кулчӗ:

— Мӗн калатӑн эсӗ? Илтмен!

— Мӗнле апла!—терӗ малалла артиллерист.— „Шуррисене аркатса тӑксанах авланатӑп", тет. Хӗрӗ Гусихӑра пурӑнать. Настаҫ ятлӑ...

Боецсем кулса ячӗҫ. Курочкин та йӑл! кулса тикӗс те юр пек шурӑ шӑлӗсене кӑтартрӗ.

— Эх, шухӑшласа кӑларан та вара эсӗ, Иван!— терӗ вӑл ҫиленмесӗр, артиллериста сарлака ҫурӑмӗнчен аллапипе ҫапса.

Лешӗ тата темскер каласа кӑтартасшӑнччӗ, анчах купӑсҫӑ ӑна пӳлчӗ:

— Тӑхта-ха, мыскараҫӑ! Манӑн Василь Иванычран ыйтмалли пур. Пӗлетӗн-и...

— Ну-ну, итлетӗп,—терӗ Чапаев. Вӑл Курочкина хӑюллӑ, яланах хаваслӑ пулнӑшӑн тата вырӑссен анлӑ та янӑравлӑ юррисене килӗштернӗшӗн юрататчӗ.

Курочкин чӗркуççийӗсене аллисемпе якатса илчӗ, вучах ытла вăйлă çутатнăран кусӗсене хӗссе, пӗтӗм пӗвӗпе Чапаев еннелле туртăнчӗ.

— Сăмахран, каласа пар-ха, Василь Иваныч,— тесе васкамасăр пуçларӗ вăл.—Сăмахран, калăпăр, çапла... Эпир мӗнпур тăшмансене—кунтисене те, ют çӗршывсенчен пирӗн пата хăйсен сăмсисене чикекеннисене те аркатса пӗтерӗпӗр, ун чух вара...

— Пăхатăп та, эсӗ виçӗмкун комиссар каланине начар итленӗ,—сăмах хушрӗ артиллерист.— Мӗн терӗ-ха вăл? Мӗнпур контрреволюцие аркатса тăкăпăр та мирлӗ пурнăç тума пуçлăпăр. Çуллен-çул пирӗн пурнăç çутăрах та хаваслăрах пулӗ. Комиссар çаплах каларӗ: „Çав çутă çулпа эпир, юлташсем, коммунизм патне çитӗпӗр!"— терӗ.

— Мӗн эсӗ мана калама памастăн!—çиленсе кайрӗ Курочкин.—Ун пирки эпӗ хам та лайăх каласа пама пултаратăп... Мана ак епле ыйту асаплантарать...—Купăсçă Чапаев куçӗсенчен пăхса илчӗ те, хăйӗн сарлака аллисене кăкăрӗ çумне тытрӗ:—Ăнлантарса пар-ха, Василь Иваныч! Акă эпир хамăр çӗр çинче коммунизмла çутă пурнăç туса хурăпăр, ытти çӗршывсенче епле вара? Унта буржуйсемпе харампырсем ӗлӗкхи пекех ӗççынnисен юнне ӗçӗç-шим?.. Е урăхла-и?

Чапаев хăйӗн çӳлӗ çӗлӗкне ӗнси çинелле шутарса лартрӗ те хăлхине хыçса илчӗ.

— Çук, ун пек пулма пултараймасть!—тесе татса каларӗ артиллерист.—Урăх çӗршывсенче те рабочисемпе хресченсем буржуйсене сирпӗтсе антараççех... Ун чух вара, атьсем, пӗтӗм халăхсемпе пӗрле мӗнпур çӗр çинче коммунизм туса хурăпăр! Тӗрӗс вӗт, Василь Иваныч?

Чапаев пуçне сулчӗ.

— Час пулĕ-и вăл, Василь Иваныч?—лăпланма пĕлмерĕ Курочкин.

— Мĕн—вăл?

— Ну, леш, ытти çĕршывсенче те рабочисемпе хресченсем совет влаçĕ туса хурасси...

Чапаев пуçне пăртак пăрса шухăша кайрĕ. Кăштах тăрсан вăл майĕпен каласа хучĕ:

— Лениначчĕ кунта, пирĕн патаччĕ ăна... Вăл пурин çинчен те каласа панă пулĕччĕ.

Василий Иванович, кĕтмен çĕртен тӳрленсе тăрса, пуçне каçăртарах, куçĕсене сарлакан уçса, сӳнме пуçланă кăвайт çулăмĕсем çийĕн çĕрлехи лăпкă инçете пăхрĕ.

— Ленин вăл, юлташсем, пĕр пин çул малаллине те витĕрех курса тăрать пулмалла,—терĕ вăл хумханса.

Ик-виçĕ боец хыçалалла çаврăнчĕç те, Чапаев пăхнă еннелле пăхса илчĕç: кăвайт патне Ленин килсе тухасса кĕтнĕ пекех пулса тухрĕ вĕсен.

Темиçе минут хушши пурте шăп пулчĕç. Пуринчен малтан лутака артиллерист калаçма пуçларĕ:

— Каçхине çапла выртатăн вара... темĕн çинчен те шухăшлатăн... хамăрăн пурнăçăмăр çинчен. Тепĕр чух вара, Василь Иваныч, чĕререн ярса илет... нивушлĕ эпĕ коммунизмра пурăнса курайăп-ши?—тесе шухăшлатăн. Вĕт эпĕ уншăн хамăн юнăма юхтаратăп!

Чапаев аллисене çĕклерĕ те, хăйпе юнашар ларакан боецсене ыталаса, чун-чĕререн каларĕ:

— Пурăнса çитĕпĕр, юлташсем! Унччен пурнатпăрах! Эпĕ сире тĕрĕссине калатăп... Ну, паллах ĕнтĕ, кăштах ватăлăпăр, кунсăр пулмастех ĕнтĕ... Çапла-и, Курочкин?

— Тĕрĕс, Василь Иваныч!—тесе кулса ячĕ те лешĕ, аллине хут купăсне тытрĕ: вăл кăшт пăхса илем пекки тусах Чапаева ăнлантарчĕ.

Василий Иванович мăйăхне шăлса илчĕ, çийĕнчи тумне тӳрлетрĕ, унтан янăравлă та илемлĕ тенорпа юрласа ячĕ:

Эс, хура çăхан, ан явăн
Манăн пуçăм тĕлĕнче...

Чапаевецсем вара, пурте пĕр харăс, хăйсен командирĕ юратнă юрра юрлама пуçларĕç.





# ÇУЛ ÇИНЧЕ

Çумăрпа йĕпеннĕ йывăç çулçисем çилпе татăлаççĕ те пылчăк çине вĕçсе ÿкеççĕ. Çĕр çийĕпе тенĕ пекех аялтан йывăр та сăрă пĕлĕтсем шуса иртеççĕ. Айлăмсенче тĕтре йăсăрланать.

Шофер машинăна сыхланарах, лакăм-тĕкĕмсемпе шыв лупашкисенчен аяккарах пăрса тытса пырать. Машинăн брезентран тунă тăррипе слюда чÿречисем шăтăк-шатăк пирки вĕсене шофер çĕклемерĕ. Нÿрĕ çил кабинăна кĕрет, пите сивĕ чĕпĕтет. Ирĕксĕрех иртсе кайнă çу кунĕсем аса килеççĕ.

Чапаев чĕркуççийĕ çине саралнă вĕрене çулçи пырса ÿкрĕ. Вăл пысăк та таса, ун çинче çумăр тумламĕсем йăлтăртатаççĕ.

Василий Иванович çулçă çине пăхса кулать. Унăн куçне кăн-кăвак тÿпе, пуç çийĕнчех вĕçсе иртекен кĕмĕл тĕслĕ эрешмен картисем, илемлĕ тĕспе капăрланнă вăрмансем, лăпкă кÿлĕсемпе унти мăнтăрланнă кăвакалсем курăнса кайрĕç.

Шофер Чапаев кулнине асăрхарĕ те, хăй те кулса илчĕ.

— Аван...—терĕ Василий Иванович, çулçа шинель çинчен силлесе пăрахрĕ...

„Чапай ăшă чунлă, простой çын",—тесе шухăшларĕ шофер, тумламсемпе чăпарланнă кантăк витĕр çул çине пăхса пынă май.

Аякра вăрман кати курăнса кайрĕ. Ун хыçĕнче ăшăк та кукăр-макăр юханшывăн çӳлĕ çыранĕ пуçланать.

— Ташлино патне çитрĕмĕр,—терĕ те Чапаев, нумай ларса пынипе ывăннă урисене хускаткаласа илчĕ.

— Авă пожарнăй каланчи те курăнма пуçларĕ,—терĕ шофер.—Часах яла çитетпĕр.

Пылчăклă, йывăр çул пуçланса кайрĕ. Кĕпер патĕнче çăрăлса тăракан хура пылчăк сарăлса выртать. Ун урлă машина хытă пынипе çеç каçса кайрĕ. Халĕ вăл кĕпер çине сиксе тухрĕ. Кивелнĕ карлăксем чĕтреме пуçларĕç, шофер машина хăвăртлăхне чакарчĕ. Çыран патне çитиччен икĕ метрсем юлнăччĕ, сасартăк кĕпер хăмисем шатăртатса илчĕç, автомобиль чалăшса кайрĕ те чарăнчĕ.

— Çитрĕмĕр!—терĕ шофер, ятлаçа-ятлаçа, кабинăран тухма пикенчĕ.

Чапаев та ун хыççăн тухрĕ.

Шофер машинăн малти урапisene пăхса илчĕ— вĕсем çĕмĕрĕлсе аннă хăма выранне хĕсĕнсе ларнă.

— Иккĕн нимех те тăваймăпăр, пит çирĕп кĕрсе ларнă,—терĕ вăл.

— Мана кĕтсе тăр, эпĕ исполкома каятăп,— терĕ те Чапаев, шинель аркисене çĕклесе, ялалла утса кайрĕ. Унăн урисем пылчăка путаççĕ, шуçса каяççĕ, час-часах пăтранчăк шыв кӳллисенчен пăрăнса иртме тивет.

... Вулăс исполкомĕн пӳлĕмĕсенче тĕттĕмрех, табак туртса тултарнă. Кĕнĕ çĕрте хресченсемпе боецсен арăмĕсем калаçса тăраççĕ.

Василий Ивановича пӳрте кĕрсенех курчĕç. Сасартăках нихçанхинчен те шăп пулчĕ. Тахăшĕ шăппăн ыйтрĕ:

— Кам пулчĕ ку, хĕрарăмсем?

Чапаев сывлăх сунчĕ те малти пӳлĕме кĕчĕ:

— Председатель сирĕн кам кунта?

— Эпĕ председатель.

Сак çинчен кăштах хăраса ӳкнĕ, сухаллă арçын тăчĕ.

— Калăр-ха, эсир мĕнле шутлатăр, вăрçă вăхăтĕнче çулсене юсани кирлĕ-и?

— Çулсем манăн юсавлă. — Аптраса ӳкнĕ председатель хăйĕн кĕске те мăнтăр пӳрнисемпе чиркӳре расходсемпе приходсене çырса пынă кĕнекерен татса илнĕ таса хут листисене чĕпĕткелесе илчĕ.

— Юсавлă эппин?—тепĕр хут ыйтрĕ Василий Иванович, куçне хĕссе.—Çырма урлă каçмалли кĕпер епле? Ăна мĕншĕн юсаман?

— Эпĕ... эпĕ тӳрлетме хушсаттăм... Башилов, çынсене ятăн-и?—ыйтрĕ председатель хăйĕн секретарĕнчен.

— Ятăм. Икĕ хутчен те ятăм,—тавăрчĕ секретарь, пуçне хучĕсем çинчен пăртак çĕклесе, — анчах халăх пулмарĕ,—терĕ те каллех пуçне хут çине пĕкрĕ вăл.

— Эсĕ япăх руководитель пулас, хăвна пăхăнакансенчен отчет ыйтмастăн.—Василий Иванович председатель çине сивĕрех куçпа пăхрĕ.— Пирĕн войскăсем Самаралла наступлени пуçласа ячĕç. Часах ак шурă гвардеецсен Самарти правительстви тĕп пулĕ!.. Ташлино урлă çар валли продуктсем тата боеприпассем турттараççĕ, эсĕ

пур, çулсем çине çавранса та пахмастан! Мён эсё апла, э?

Пўлём алакё патёнче кёпёрленсе таракан хресченсен хушшинче Чапаева ырлана сасасем илтёнсе кайрёç. Чапаев халах еннелле çавранчё те машинине кёпер çинчен туртса кaларма пулашма ыйтрё.

Таçтан кёреçесем, хамасем тупанчёç. Пёр ушкан хресчен, Василий Иванович ертсе пынипе, кёпер патнелле утрё.

Часах кивё машинана çул çине илсе тухрёç. Шофер унан моторне ёçлеттерме пуçларё. Василий Иванович, аттисем çумне сыпаçна пылчака кёреçепе хырса парахрё, унтан кабинана кёрсе ларчё. Председателе чёнсе илсе çапла каларё вал:

— Кёпере ыранах юса! Çулсене тўрлет. Хам килсе тёрёслетёп. Кун пек йёркесёрлёх тек ан пултар! Лайах çулсем яланах кирлё, халё вара — пушшех. Тёрёс калатап-и, юлташсем?

— Тёрёс, Чапаев юлташ!

— Ан та иккёлен, эпир кёпере те, çула та тўрлетсе хурапар! — темиçе сасапа кёрлесе илчё халах.

— Юрё, юрё, калаçса килёшрёмёр! — тесе кулчё те Чапаев, сывпуллашрё.

Автомобиль майёпен вырантан тапранчё. Ака машина паранса урах çулпа кайрё, куранми пулчё, хресченсем çав-çавах кёпер патёнче ун хыççан, вал çавранса килессе кётнё пек, пахса тарса юлчёç.

— Ака мёнле çын иккен вал — Чапаев! — тесе самах хускатрё курпунтарах та çўлё старик, хуран хуппинчен туна коробкаран шаршламалли табакне чёпётсе илсе. — Эпё çапла анланатап: ку çыншан тем пек пысак чармав та нимён те мар. Вал кирек хаçан та тёрёслёхе хўтёлесе хаварё!

— Мĕн каласси пур, тирпейлĕ те çирĕп, ăслă çын иккенĕ пĕрре пăхсах куранса тăрать,—терĕ тепĕр хыткан хресченĕ. — Эпир вара кунта çывăрса юлнă... Тĕрĕс каларĕ Василий Иванович— кĕпере халех тытăнса юсамалла. Халĕ ĕнтĕ ку— пысăк çул, çар çулĕ! Паянах юсама тытăнас!





## С Т Ё П К А

Чӳречене карса хунӑ ҫӗтӗк татӑкӑн пӗр хӗррине сирсе, Стёпка урамалла пӑхрӗ. Ҫул тӑрӑх пӗр пӑру сиккелесе чупса пырать. Ӑна хартлатса чупакан лаша ҫине утланнӑ хӗҫпӑшаллӑ юланут хӑвалать. Пӑрӑва хуса ҫитсен, вӑл пӗр самант юнашар ӗрӗхтерсе пычӗ, унтан, пӗшкӗнсе, хӗҫӗпе сулчӗ те пӑру пуҫне пӗрех касса татрӗ.

Тимӗр автан тӑрӑллӑ ҫӗнӗ ҫурт ҫумӗнчи килкарти хапхи уҫах тӑрать. Килкартинче хӑратса пӗтернӗ чӑхсем хыҫҫӑн салтаксем чупкаласҫӗ. Ҫенӗхӗнчен симӗс граммофон труби ҫӗклесе пӗр офицер тухрӗ.

— Анне, анне тетӗп?—чӗнчӗ шӑппӑн Стёпка.

Кӑмака ҫинче амӑшӗ йӑшӑлтатса илчӗ. Вӑл перӗннӗ ҫӑматӑ урайне лаплатса ӳкрӗ.

— Шуррисем Осин Макҫӑмӑн чӑххисене тытаҫҫӗ, пӳртӗнче такам кӑшкӑрать. Пашук инке пулмалла.

Амăшĕ йынăшма пуçларĕ, темĕн каласшăн пулчĕ, анчах ăна ӳслĕк кансĕрлерĕ. Стёпка, йыврăн сывласа илчĕ те, чӳрече патĕнчен пăрăнчĕ. Урама тухма хăрушă, килте ларма—кичем.

Сĕтел ещĕкĕнчен вăл вараланса пĕтнĕ тетрадьпе пĕчĕкçĕ кăна кăранташ татăкĕ туртса кăларчĕ, шухăша кайрĕ. Чапаевецсем пĕтĕм отрячĕпе шуррисем çине вĕçтерсе пынине, пуринчен малта, хĕрлĕ ялав айĕнче, Чапаев хăй ĕрĕхтерсе пынине ӳкерсен аванччĕ те.

Чапаева Стёпка ялйышсем каласа панă тăрăх çеç пĕлет. Вăл унăн сăнне темиçе хутчен те ӳкерме тытăнса пăхнă, анчах Чапаев яланах е ытла çамрăк, е ытла ватă пулса тухнă.

„Çук, нимĕн те тухмасть,—тарăхса шухăшланă Стёпка.—Кăштах мĕн те пулин çиесчĕ хуть“.

Вăл юлашки хут ĕнер ирхине çинине аса илет. Амăшĕ савăт-сапа тытакан шкапра йăваланса юлнă икĕ-виçĕ çăкăр хыттине вĕретнĕ шывпа ислетрĕ те, ăна çавăнтах çисе ячĕç. Халĕ ĕнтĕ нимĕн те çук.

Урамра лаша ури сасси тата хыттăн калаçни илтĕнсе кайрĕ. Ача хăраса ӳкрĕ. Чӳречерен пăхрĕ те çавăнтах тĕттĕм кĕтессе, кăмака хыçне чупса кайрĕ.

Çенĕх алăкне шаккарĕç. Амăшĕ пăшăрханса пуçне çĕклерĕ те:

— Стёпенька, кам унта?—терĕ.

— Шуррисем!—пăшăлтатрĕ Стёпка.

Çенĕх алăкĕ шатăртатса илчĕ. Урайне темскер, йывăр япала, кĕмсĕртетсе ӳкрĕ, такам хăрăлтатакан сасăпа çилĕллĕн ятлаçса илчĕ.

Пӳрте салтаксем кĕчĕç. Чи малта аллине чăпăркка тытнă хĕрлĕ питлĕ мăнтăр вахмистр пырать. Пукан çине такăнчĕ те вăл, кăшкăрашса вăрçма тытăнчĕ.

— Чӳречесене уҫӑр!

Хӗрлӗ галифе тӑхӑннӑ йӑрӑ йӗкӗт, чӳрече патне пырса, ӑна карса хунӑ ҫӗтӗк-ҫатӑка туртса антарчӗ. Пӳртре ҫутӑрах пулса кайрӗ.

— Ухтарӑр хӗрлӗ тухатмӑш-карчӑка! — команда пачӗ вахмистр; хӑй вӑл кӗске урисем ҫинче тайкаланарах, чӑпӑрккине сулкаласа тӑрать.

Стёпка кӑмака айне кӗрсе кайрӗ. Хӑрушӑ ют ҫынсем амӑшне урайне сӗтӗрсе антарчӗҫ. Вахмистр ӑна ҫапрӗ, амӑшӗ хуллен, хӑраса йынӑшса илчӗ.

Стёпка урӑх нимӗн те кураймарӗ. Кӑмрӑк корзини ҫине пичӗпе тӑрӑнса чӗтресе ӳкрӗ те вӑл, хӑйӗн аллине ҫырта-ҫырта пӗр сассӑр макӑрчӗ...

Салтаксем пур кӗтессене те ухтарса тухрӗҫ, пукансене ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, тахҫанах юхакан кивӗ сӑмавара таптаса лапчӑтса хӑварчӗҫ, хӑйсем ятлаҫса, ахӑлтатса кулса килкартине тухрӗҫ.

... Стёпка пуҫне ҫӗклесе итлесе пӑхрӗ. Пӳртре никам та ҫук. Стёпка сыхланса кӑмака айӗнчен тухрӗ те куҫӗсене хӗсрӗ. Ҫенӗхрен тӗтӗм кӗрет, алӑк янахӗсене ҫулӑм ҫулама пуҫланӑ. Ялкӑшса ҫунма пуҫланӑ пушар ҫути килкартине ҫутатрӗ. Тӗттӗм сарайӑн уҫӑ хапхинче, урисемпе ҫӗре ҫитеймесӗр, этем сулланса тӑрать.

Сарай еннелле ярса пусрӗ те Стёпка ҫивӗччӗн кӑшкӑрса ячӗ. Хӑранипе вырӑнтан хускалаймасӑр, чылайччен вӑл амӑшӗ ҫине, унӑн ҫара урисем ҫине пӑхса тӑчӗ, унтан ҫаврӑнса пӑхмасӑр укӑлча хапхи патнелле чупма пуҫларӗ.

* *
*

Вӑл ҫул хӗрринчи тӗмескепе юнашар, хӑмӑл хушшинче ҫывӑратчӗ. Ҫул тӑрӑх пӗр ватӑ старик шӑппӑн кӑна кӗлӗ юрласа пырать. Стёпка вӑранчӗ.

— Ара, кунта çын пулас?—терĕ те старик, Стĕпка патĕнче чарăнчĕ.

Вăл, аллине куçĕ умне тытса, çĕтĕк-çурăк тумланнă ача çине тинкерсе пăхрĕ.

— Эсĕ, ывăлăм, кунта мĕн тăватăн çак? Э?

— Нимĕн те тумастăп... ахаль кăна, — терĕ Стĕпка, аран-аран куççулĕсене чарса, тепĕр еннелле пăрăнчĕ, шупка-кăвакрах тĕтĕмпе хупланнă инçетелле тунсăхлăн пăхса илчĕ.

— Илтместĕп! — терĕ старик, патаккипе çĕре таклаттарса. — Ывăнтăм, вăйăм çук. Вилĕмĕм хăм хыçăмранах çӳрет пулас.

Ыйткалакан хул урлă çакса янă хутаççине хыврĕ те, эхлеткелесе, çул хĕрринчи типсе сарăхса кайнă тусанлă çул курăкĕ çине ларчĕ.

— Кунтарах лар, мăнукăм, турă мĕн панă, çавна çырткалар.

Стĕпкăн питĕ çиесси килетчĕ. Старик аллинче пĕр сăмса хура çăкăр курсан, вăл пуçне усрĕ, сĕлекине çăтса ячĕ.

— Акă ме, çи! Санăн мĕн, аçупа аннӳ пурăнаççĕ-и?

Стĕпка, ыйткалакана итлемесĕр, васкаса чăмлама пуçларĕ. Старик ача мĕн тери выçă иккенне ăнланчĕ пулас,—ăна тепĕр чĕлĕ пачĕ.

Стĕпка çисе тăрансан, ыйткалакан:—Ялта çăкăр параççĕ-и, ачам?—терĕ.

— Пĕлместĕп. Шуррисем унта, пурне те çаратаççĕ...

— Нумайăн-и вара вĕсем?

— Нумайăн!—терĕ Стĕпка шăппăн.—Аннене... Манăн аннене çакса вĕлерчĕç...

Вăл йĕпеннĕ куçĕсене шăлса илчĕ, анчах пурпĕрех тӳсеймерĕ — ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

— Ма-ха вара вĕсем, турă сыхлатăр, çав териех ураççĕ? Чăн-чăн тискер кайăксем!—терĕ старик.

— Манăн атте хĕрлисем патĕнчеччĕ...—терĕ ача ĕсĕклесе, чыхăна-чыхăна.—Вĕсем вара çавăншăн...

— Эх, тискер кайăксем!.. Эсĕ ĕнтĕ халĕ мĕн, сĕм пĕччен-и? Тăлăх турат-и? Э?

Стёпка тата хытăрах йĕрсе ячĕ, вараланнă пичĕ тăрăх куççулĕсене сăтăркаларĕ.

— Эсĕ, ачам, чарăн-ха, чарăн йĕме. Манпа пырас кăмăлу çук-и? Иккĕне кичем пулмĕ.— Старик çисе ярайман çăкăр татăкне хутаçне хучĕ те сăхсăхса илчĕ.—Старикпе ачана кам тивтĕр?

— Эпĕ нимех те мар...

— Пыратăн эппин?

— Пыратăп,—терĕ Стёпка аран-аран илтмелле.—Анчах пирĕн яла каяс мар. Унта мана пĕлеççĕ.

— Юрĕ. Курăнĕ унта,—терĕ те ыйткалакан, вырăнтан çĕкленме пуçларĕ.

Укăлчара вĕсене патруль тытса чарчĕ.

— Ирттерсе ярсамăр, ырă çынсем, турă ячĕпе пуçтарса çӳретпĕр,—мăкăртатма пуçларĕ старик, Стёпка хулĕ çине таянса.

— Иртсе кайччăр-и?—ыйтрĕ сарă сухаллă салтакĕ хăйĕн юлташĕнчен.

— Яр. Çĕр тĕпне кайччăр-и!—тесе сулчĕ леш аллипе.

Стёпкăна ыйткалакан хăйпе пĕрле яла илмерĕ—пахчасем хыçĕнчи пăрахăçа юлнă мунчана хăварчĕ.

— Пуçтарнă çăкăра хуралла та ниçта та ан кай,—тесе хушса хăварчĕ старик.

Вăл часах таврăнчĕ:—Ку ялта питех памаççĕ, малалла каяс пулать,—терĕ.

Тепĕр каçхине вĕсем хирте, кĕтӳçĕ хӳшшинче çĕр каçрĕç. Стёпкăна ачашшăн пуçĕнчен шăлса, старик çапла ыйтрĕ:

— Эпӗ вилес пулсан, эсӗ, тӑлӑхскер, ӑҫта кайӑн, епле пурӑнӑн? Э?

Ача кӑштах шухӑшларӗ те тем каласа тавӑрчӗ.

— Ӑҫта тетӗн, ӑҫта? — тепӗр хут ыйтрӗ старик.

— Чапаев патне каятӑп! — терӗ Стёпка хӗрӳллӗн, хӑлхаран пӑшӑлтатса.

Старик тарӑннӑн сывласа илчӗ:

— Мӗнпур чухӑн ҫынсем, кама кӑна тӑшмансем пурӑнма памаҫҫӗ, пурте Чапаев патне каяҫҫӗ... Эсӗ ҫывӑрах, ачам, ҫывӑр.

Ирхине Стёпка вӑраннӑ ҫӗре старик хӳшӗре ҫукчӗ ӗнтӗ. Ача палламан яла чупса кайрӗ, анчах унта та ыйткалакана тупаймарӗ.

* * *

Йӑлӑхтарса ҫитерекен кӗрхи ҫумӑр вӗттӗн пӗрӗхет. Штаб крыльцин тӑрри витӗр шыв каять, ҫавӑнпа та дневальнӑй шинелӗн ҫухавӗ ӑшне кашни тумлам ӳкмессерен ҫӳҫенсе илет.

Крыльца умне Стёпка пырса тухрӗ.

Унӑн ҫулне дневальнӑй пӳлчӗ:

— Ӑҫта?

Ача йӗпе те пылчӑклӑ пусмасем тӑрӑх ҫара урипе ҫатлаттарса пусса пурпӗрех крыльца ҫине хӑпарса ҫитрӗ те тин чарӑнчӗ:

— Кӗрт.

— Кам кирлӗ сана?

— Эпӗ Чапаев патне, — тавӑрчӗ Стёпка.

— Ха, мӗн шухӑшлать вӑл! — Дневальнӑй маларах ярса пусрӗ. — Анса кай крыльца ҫинчен, Чапаев ҫук.

Стёпка чапаевец ҫине кӳренӳллӗн пӑхса илчӗ:

— Сана мӗн, шел-им?

— Кай. Каланӑ сана, Чапаев ҫук!

— Эпĕ: кĕрт, тетĕп, Чапаев кунта!

Анчах дневальнăй халĕ ача çине пăхмасть те ĕнтĕ.

Штаб умне пылчăкпа вараланса пĕтнĕ автомобиль пырса чарăнчĕ. Кабининчен бурка тата çӳлĕ çĕлĕк тăхăннă çын васкавлăн тухрĕ. Стёпка ун çине пăхрĕ те кукленсех ларчĕ: „Чапаев!" Мĕншĕн бурка тăхăннă çар çынни Чапаев пулмаллине вăл хăй те путлĕн пĕлмен. Ун патне пырас тенĕччĕ, анчах хăрарĕ.

— Чапаев юлташ,—терĕ дневальнăй,—такам ачи килчĕ те сана ыйтать. Эпĕ ăна: Чапаев çук, тетĕп, вăл пур хăйĕннех перет—кĕресшĕн.

Василий Иванович Стёпка умне пырса чарăнчĕ те ăна урараи пуçласа пуç тӳпи таранах пăхса илчĕ.

— Каласа кăтарт, мĕн ĕçӳ пур вара манпа,—терĕ вăл ăна, çитĕннĕ çынна калană пек.

— Ĕçпе килтĕм,—терĕ ача та çирĕппĕн, пысăк çын пек курăнма тăрăшса.—Сан патна отряда çырăнма килтĕм.

— Отряда?—Чапаевăн куçхаршийĕсем çӳлелле çĕкленчĕç.—Мĕн тăвăн вара эсĕ отрядра?

— Разведчик пулăп.

— Вăйлă!.. Килӳнтен вара мĕншĕн пăрахса кайрăн?

— Манăн кил çук... Атте хĕрлисем патĕнче службăра тăратчĕ, ăна Самарта шуррисем вĕлерчĕç, аннене те çакса вĕлерчĕç. Халĕ эпĕ пĕчченех.

— Ăçтисем? Мĕн ятлă?

— Таволжанкăран. Стёпка ятлă, Лисухин Михалин ачи.

— Миçере вара ху?

— Çăварнире вунтăватта кайрăм.

Штабран илемлĕ çӳç-пуçлă хавасла çамрăк тухрĕ.

— Килтӗн-им, Василий Иваныч?—ыйтрӗ вӑл юлташла.

— Килтӗм, Петька,—тавӑрчӗ ӑна Чапаев та.

— Кампа калаҫатӑн вара эсӗ?.. Стёпка мар-и?—йӗкӗт ача патне чупса пычӗ те, ӑна аллисенчен ҫупӑрласа тытрӗ.

Ку сасса таҫта илтнӗ пек туйӑнчӗ Стёпкӑна, анчах ӑҫтине вӑл астуса илеймерӗ.

— Ыйткалакан старике астӑватӑн-и?

— Астӑватӑп...

— Вӑл эпӗ пулнӑ та ёнтӗ,—тесе кулса ячӗ те йӗкӗт Стёпкӑна ыталаса илчӗ.—Эпӗ разведка тунӑ хыҫҫӑн вӗсене лайӑхах ёнтрӗмӗр... Василь Иваныч, эпӗ ку ачана хваттере илсе каям. Юрать-и?

— Мӗншӗн эппин эсӗ ун чухне ху Чапаев отрядӗнчи ҫын иккенне каламарӑн? Эпӗ санпа килнӗ пулӑттӑм,—терӗ ача Петьӑна, кӑштах ӳкӗннӗ пек пулса.

— Юрамастчӗ ҫав калама, тусӑм, юрамастчӗ. Пит пысӑк ёҫ тума пынӑ пулнӑ.

* * *

Трубасӑр лампа хӑйӗн чӗтрекен ҫутипе пӳртӗн вӑтаҫӗрне аран ҫеҫ ҫутатать. Тӗттӗм кӗтессенче таракансем кӑштӑртатаҫҫӗ.

Чапаевецсем ҫӗр урайне сарнӑ шинельсем ҫине йӑванса кайса ҫывӑраҫҫӗ.

Вӗри хутнӑ паттупка кӑмаки патӗнче, пулеметчик Зимин коммунист тавра, темиҫе боец пуҫтарӑннӑ. Пулеметчик халап ярса парать:

— Каяҫҫӗ платникпе улпут вӑрмана, пӗр сӑмахпа—пӗрене касма. Ҫапла-а... Ҫитеҫҫӗ вӑрмана. Платник хайхи ҫӳрет вӑрманта — пуртӑ тӑршипе ҫапать те йывӑҫсене, хӑлхипе лӑпчӑнса итлесе пӑхать... Акӑ ҫапла ёнтӗ...

Зимин платник мĕнле тунине хăй туса кăтартрĕ. Стёпка пулеметчик хулĕ çумне таянчĕ, урисене сарчĕ.

— „Эсĕ мĕн тăватăн, мĕн итлетĕн?“—тесе ыйтать тет улпут платникрен. „Ытала та акă йывăçа, хăлхуна ун çумне лăпчăтса итле, эсĕ те илтĕн вара“, —тесе тавăрать платник. „Манăн аласем çитес çук, пултараймăп эпĕ“,—тет улпучĕ. „Вăл тем инкекех мар! Кўр эпĕ сана йывăç çумне çыхса хурам, эсĕ вара илтĕн“. Ну, улпут, пĕр сăмахпа, килĕшет. Çапла-а.—Зимин, кĕсйинчен чăпарлатса тĕрленĕ енчĕкне кăларса, цыгарка пĕтĕрме тытăнчĕ.—Платник улпута йывăç çумне çыхса хурать те—хайхине тилхепепе пĕçертме пуçлать! Çапать те хăй: „Итле, итле, кашкăр çури, итле йывăç мĕн каланине. Йывăçĕ вăл мастеровой çынна кўрентерме хушмасть“,—тет.

Пўртре ахăлтатсах кулса ячĕç. Повар вăранчĕ те, кулакансене ятласа, тепĕр аякки çине çаврăнса выртрĕ, пуçне шинель аркипе чĕркерĕ.

Стёпка чĕркуççи çине сиксе тăрса шăнса шуралнă чўречесем еннелле пăхрĕ.

— Переççĕ!—пăшăлтатса илчĕ вăл.

Шăплăхра калинкке сасси илтĕнчĕ.

Çенĕхре такам, алăк тыткине тупаймасăр, кăшкăрса ячĕ:

— Шуррисем!

Пăтрашу пуçланчĕ.

— Ан хыпăнса ўкĕр, юлташсем,—терĕ хуллен Зимин.—Çапăçма пуçлăпăр.

Чапаевецсем урама чупса тухаççĕ те, хўмесем çумне выртса, пеме пуçлаççĕ. Зиминпа Стёпка çул çине пулемет сĕтĕрсе тухрĕç. Стёпка лентине парса тăрать, пулеметчик тăшмансене çунтарать. Тахăшĕ хыçалти урампа кўршĕ яла вĕçтерчĕ—унта утлă çар полкĕ тăрать.

— Хамăрăннисем килсе çитиччен епле те пулин тытăнса тăратпăр,—тесе хавхалантарать ыттисене Зимин, пулеметне çĕнĕ лента майлаштарса лартнă май.

— Тытăнса тăратпăрах,—килĕшет унпа Стёпка, тăшман енне тинкерсе пăхса.

Сасартăк Зимин хыçалалла сулăнса кайрĕ, пуçне усрĕ те çĕре йăванчĕ. Стёпка ун çине пĕшкĕнчĕ.

Пулеметчик вилнĕ.

— Ур-ра!—илтĕнсе кайрĕç ўсĕр сасăсем.

Юр хĕве-хĕве кайнă урам тăрăх шурă казаксем вĕçтерсе пыраççĕ. Яланхинчен çутă уйăх çуттинче вĕсен, сывлăш çинче ярăнса пынă пек, чупакан лашисем те, юланучĕсен мĕлкисем те курăнса кайрĕç. Çўхе кăна хĕçĕсем хăрушшăн ялтăртатаççĕ.

Тăшман утлă çарĕ çывхарсах килет.

Чапаевецсем тăкăрлăксем тăрăх чупса каялла чакаççĕ.

Стёпка пулемет умне пĕшкĕнсе выртрĕ те гашетка çине пусрĕ.

Тўрех Стёпка çине вĕçтерсе пыракан юланутăн лаши сасартăк икĕ уран тăчĕ, унтан çынни-мĕнĕпех çул çине персе анчĕ.

Ун хыççăн тепĕр шурă казакĕ, пуля лекнипе, йĕнер çинчен сирпĕнчĕ, унăн урса кайнă лаши, вилнĕ çын ўтне сĕтĕрсе, аяккалла вĕçтерчĕ.

Лашасем, çынсем ўкеççĕ. Унтан шурă казаксем лашисене хăвăрт çавăрчĕç те каялла вĕçтерчĕç. Стёпка, вĕсене çав тери курайманскер, ыратакан пуличчен шăлне çыртса, лентине пĕтĕмпех пушатичченех печĕ. Пушă ещĕкре аллипе хыпашланă май, вăл итлесе пăхрĕ.

Таврара шăпах. Пĕтĕм вăйĕпе итлесе, Стёпка халĕ ĕнтĕ чи хăрушă та нимĕнле те тўрлетме

май çук ĕç пуласса кĕтсе, хускалмасăр выртать. Унăн çан-çурăмĕ сăрăлтатса кайрĕ, çӳçĕсем вирелле тăчĕç. Сивĕ каçăн хăрамалла тискер шăплăхĕнче лаша урисем тĕпĕртетнĕ сасă хытăрах та хытăрах илтĕнекен пулчĕ. Темĕнле никам çĕнейми хурçă çар йăтăнса килет, тейĕн.

Стёпка сиксе тăчĕ те, çатан хӳмесем урлă каçса, юр çинче пута-пута, çеçенхирелле кайса çухалчĕ.

* * *

Чапаев каланине итлесе пĕтернĕ хыççăн, Исаев командирăн ывăннă сăн-пичĕ çине пăхса илчĕ.

— Кайма юрать-и, Василий Иваныч?—ыйтрĕ ординарец.

— Кай. Стёпкăна хăвăртрах кунта ăсат, эпĕ ăна разведкăна ярасшăн. Хăюллă та пултаруллă ача. Лайăх разведчик пулĕ.

Чапаев пуçне сулчĕ, унтан умне уçса хунă тетрачĕ çине темĕн çырма пуçларĕ.

Стёпкăна ниçта та тупаймарĕç. Вăл ăçта кайса çухалнине никам та пĕлмест. Пурте: вăл ача çапăçура вилнĕ пулĕ, терĕç. Анчах виçĕ кун иртрĕ те, Овчинниково хуторĕнчен ачана лартса килни çинчен Василий Ивановича пĕлтерчĕç. Силантьев кун çинчен çапла каласа пачĕ:

— Эпир пĕр пуянăн килкартине ухтартăмăр, вăл хĕçпăшал пытарса усранă. Юнашарах ял хуралçин пӳрчĕ ларать. Хĕрлĕармеецсенчен пĕри пыр та пăх çав çурт чӳречинчен. Унта Стёпка иккен.

— Кунта илсе килĕр ăна,—приказ пачĕ Василий Иванович.

Стёпкăна илсе кĕчĕç.

Пуçне вăл кăкăрĕ çине уснă, хуралса пĕтнĕ аллинче—хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк.

— Кала, герой, хуторта мĕн тăваттăн!—Чапаев ача çине тинкерсе пăхрĕ, лешĕ пуçне тата аяларах усрĕ.—Ну, эпĕ итлетĕп.

— Ӳкерчĕк тăваттăм,—хăйăлти сасăпа пăшăлтатса илчĕ Стёпка.

— Мĕн, мĕн?

— Картина... ӳкереттĕм.

— Ӳкереттĕн!—Чапаев тăчĕ те мăйăхне турткаласа илчĕ.

— Лентăсем пĕтсессĕн,—хăйăклата-хăйăклата калама пуçларĕ Стёпка,—эпĕ поселокран тартăм—питĕ хăрарăм. Овчинниковкăна тартăм. Унта пирĕннисем казаксене аркататчĕç... Вилнĕ офицер сумкинчен эпĕ çуллă сăрсем илтĕм. Ӳкерес килсе кайрĕ. Эпĕ нихçан та сăрпа ӳкерсе курман. Илтĕм те эпĕ вĕсене—хуралçă мучи патне вĕçтертĕм.

Стёпка шинель тӳмисене вĕçертсе ячĕ, гимнастерка çинчен çыхнă пиçиххине салтрĕ те хĕвĕнчен чĕркенĕ пир татăкĕ кăларчĕ:

— Акă... картина.

Василий Иванович чĕркенĕ япалана салатрĕ. Ёрĕхсе пыракан лашасем çинче—юланутçăсем. Вĕсен пуçĕсем çинче хĕçсем йăлтăртатаççĕ. Юланутçăсенчен малта, хĕрлĕ ялав айĕнче, çил çинче хăйĕн буркине вĕçтерсе командир пырать. Унăн кăпăшка та вăрăм мăйăхĕсем хулпуççи таранах, çӳлĕ çĕлĕкĕ çинче—хĕрлĕ лента.

Картина айне: „Чапаев хăйĕн отрядĕнчи чапаевецсемпе атакăна каять“, тесе çырнă.

Василий Иванович картинăна чылай вăхăт пăхрĕ. Унăн шухăша кайнă сăнлă начарланнă пичĕ çинче темле çĕнĕ, халиччен пулман савăнăç çути çиçсе илчĕ.

Нумай япала çинчен шухăшлама ĕлкĕрчĕ çак минутсенче Чапаев. Часах вăрçă пĕтесси çинчен

те, ашшӗне ҫав тери сайра куракан хӑйӗн ачисем ҫинчен те, Стёпка ҫинчен те шухӑшларӗ. Ку ачан пуласлӑхӗ — пысӑк та хаваслӑ ҫутӑ пурнӑҫ.

Чапаев кулса илмесӗр тӳсеймерӗ:

— Маттур! Мӗнле лайӑх тунӑ!

Стёпка хӑюлланчӗ, пуҫне ҫӗклерӗ:

— Эпӗ икӗ кун ӳкертӗм, ҫӗрле те...

— Епле-ха кун пек талант тупрӑн эсӗ?

— Ялти учитель вӗрентрӗ. Мана хут паратчӗ, кӑранташсем...

— Лайӑх! — куҫӗсене хӗсрӗ Чапаев. — Анчах кӑштах суйнӑ эсӗ. Манӑн мӑйӑхсем пӗчӗкрех, тата чӗлпӗрӗн акӑ ҫак чӗнӗ вырӑнта мар.

Вӑл хуралса пӗтнӗ кивӗ диван ҫине ларчӗ, савӑнса ӳкнӗ Стёпкӑна хӑйпе юнашар лартрӗ.

— Вӑрҫӑ вӑрҫса пӗтерсессӗн, Стёпка, — терӗ вӑл аллисемпе чӗркуҫҫийӗсене чӑмӑртаса, — пурнӑҫ ҫав тери лайӑх пулӗ, эпир вара вӗренме кайӑпӑр. Академие: эпӗ — ҫар академине, эсӗ — ӳкерчӗксем тума вӗрентекеннине... Ун пек академи пулма кирлех!.. Кайӑпӑр-и?

— Кайӑпӑр! — пуҫне ухса илчӗ Стёпка. — Кайӑпӑр, Василь Иваныч!

Вӗсем иккӗшӗ те хаваслӑн кулса ячӗҫ.





## ХАКЛĂ ХĂНА

Халăх çурчĕн кăмакисене ирех хутса ячĕç. Шăнса ларнă стенисем шартлатса çурăлкалаççĕ, мачча хăмисем çинче ялтăртатса тăракан пас тытнă вырăнсем сахаллансах пычĕç. Симĕсрех тĕтĕм куçа çиет.

Тăвăр та мелсĕр сцена çинче репетици пырать. Драма кружокĕн руководителĕ, ватăлма пуçланă учительница Анна Ивановна, лайăх саваласа якатнă хыр хăмисенчен çапса тунă суфлĕр будки çине улăхса ларнă та, пуçне сулкаласа, кăмăлсăррăн:

— Каллех апла мар, Алексей Дмитриевич,— тет.

Учительница умĕнче халăх çурчĕн заведующийĕ Рублев тăрать. Вăл именерехсĕн, пуçне çĕрелле уснă та, аллисене чармакласа пĕрмай мăкăртатать:

— Тухмасть! Ну, нимӗнле те тухмасть! Мӗнле каламаллине пӗрмаях асра тытатӑп, анчах ҫав тӗле ҫитсен—хуть те мӗн ту!—хам майлӑ пулса тухать... Хӑтарӑр мана ку ӗҫрен, Анна Ивановна, эпӗ пултарусӑр ҫын.

Ҫак вӑхӑтра ҫенӗхрен кӗрекен алӑк уҫӑлчӗ,—ҫурта чаппан тӑхӑннӑ хресчен кӗрсе тӑчӗ. Чаппан ҫухине пас тытнӑ.

Алексей Дмитриевич сцена ҫинчен анчӗ те, уксахласарах утса, килнӗ ҫынна хирӗҫ васкарӗ.

— Ырӑ кун пултӑр, Лексей Митрич!—терӗ те хресчен, ҫӗлӗкне хыврӗ.—Паян яла Чапаев килмелле, сӑмах каламалла, теҫҫӗ.

— Ун ҫинчен крыльца ҫинче пӗлтерӳ ҫакӑнса тӑрать. Вуласа пӑх.

Рублев хресченпе пӗрле крыльца ҫине тухрӗ.

— Куратӑн-и,—терӗ вӑл стена ҫумне ҫыпӑҫтарса хунӑ сӑрӑрах тӗслӗ хулӑн хут листи ҫине тӗллесе.—Кашни ӗҫ йӗркеллӗхе юратать. Унсӑрӑн юрамасть.

Хресчен пӗр вырӑнта тӑпӑртаткаласа тӑчӗ, айӑпа кӗнӗ пек сывласа илчӗ:

— Хамӑн тӗттӗмлӗхе пула-ҫке, Лекҫей Митрич, эпӗ пачах та вӗренмен ҫав... Эсӗ каласа пар ӗнтӗ, мӗн тесе ҫырнӑ унта.

Заведующи крыльца карлӑкӗ патне пычӗ те, васкамасӑр, мӑнаҫлӑн ӳсӗркелесе илчӗ. Саспаллисем тӑрӑх чӗлӗм туртнипе сарӑхса ларнӑ пысӑк пӳрнипе шутарса пырса вӑл хуллен те йывӑррӑн вулама пуҫларӗ:

„Ялйыш, граждӑнсем! Паян каҫхине халӑх ҫуртӗнче герой Чапаев юлташ „Вӑрҫӑ хӑҫан пӗтет“ ятлӑ доклад туса парать. Доклад хыҫҫӑн спектакль пулать“. Хресчен енне ҫаврӑнчӗ те хушса хучӗ:

— Каҫхине, Иван, кил. Халӗ манӑн вӑхӑт ҫук.

Репетици тăватпăр. Манăн та кунта пĕр буржуя выляма лекет.

Алексей Дмитриевич кунĕпех ĕçлерĕ: декорацисем сăрларĕ, Селезниха ялне париксем илме кайса килчĕ, фельдшер патне хăйне валли çуртук тата „лĕпĕш пек“ галстук ыйтма кайрĕ.

Каçалапа вăл, ĕшеннĕскер, сцена çине хăпарчĕ те пĕр тикĕс йĕркелесе саксем лартса тухнă зал çине пăхса савăнчĕ.

— Халĕ ĕнтĕ хаклă хăнана кĕтсе илме пурте хатĕр пулас,—терĕ вăл.

Çуса тасатнă урайне саксен мĕлкисем ӳкеççĕ. Чӳречесен аялти кантăкĕсем хĕрлĕрех çемçе тĕспе çунса тăраççĕ.

Каçхине ултă сехет тĕлне халăх çуртне куракансем килсе тулчĕç. Залра часах пăчă пулса çитрĕ—стариксемпе хĕрарăмсем кĕрĕкĕсене хывма пуçларĕç. Пурте шăппăн калаçса лараççĕ.

Пуринчен ытла пĕр çӳлĕ те хыткан, çăмарта хуппи пек тăрăхларах та яка пуçлă старик кускалать. Вăл хăйĕн кӳршине, сарлака çурăмлă мужике, тăла тумтирĕн çаннинчен пĕррех туртать.

— Эсĕ, Петрович,—тет вăл,—çарта тахçанах службăра пулса курнă. Каласа пар-ха эсĕ пире—ĕлĕкхилле каласан ун генерал чинĕ-и, е пĕчĕкçĕрех-и?

Сцена патĕнчи кĕтесре капăр тумланнă çамрăк хĕрарăм, мăнтăркка шурă аллисене кăкăрĕ çине хĕреслесе хунă та, юрланă пекрех калаçать.

— Манăн аппана Андросово ялĕнчи платнике качча панă та...—Тăстарать вăл.—Пĕлтĕр, кĕркуннепе, унта Чапаев пулчĕ. Унта та сăмах каларĕ. Халăх çуртне пĕтĕм ял пуçтарăннă, халĕ эпир пухăннă пекех. Пурте хумханаççĕ...

Тахăшĕ Рублевран Василий Иванович ăна епле майпа сехет парса наградăлани çинчен каласа

кăтартма ыйтрĕ. Кун ҫинчен ялта темиҫе хутчен те илтнĕ пулин те, пурте Алексей Дмитриевичран ҫине тăрсах ыйтма пуҫларĕҫ.

Халăх ҫурчĕн заведующийĕ, ҫӳҫĕсене аллисемпе шăлса якатрĕ те, калама пуҫларĕ:

— Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, эпĕ Василий Иванович патĕнче ҫур ҫул ытла службăра пулнă, кун пирки эпĕ сăмах вакламăп та. Хам халĕ мĕншĕн ҫакăн пек пулса юлни ҫинчен сăнласа кăтартам,—терĕ Алексей Дмитриевич хăйĕн уксах ури ҫине кăтартса.—Василий Иваныч пĕррехинче мана разведкăна кайса килме хушрĕ. Питĕ сыхланса тумалли ĕҫчĕ. Тӳрех калатăп—йывăр ĕҫчĕ. Тăшман патнех ҫитсе килмеллеччĕ... Эпĕ йăлтах мĕнле хушнă, ҫавăн пек турăм. Анчах штаба таврăннă чухне шуррисем урараран амантрĕҫ, вара эпĕ пĕр виҫĕ ҫухрăма яхăн хырăмпа шурăм. Мана пирĕн разъезд тĕл пулса хăйпе пĕрле илчĕ. „Халех мана Чапаев патне илсе кайăр!“ тетĕп ҫак ачасене. Эпир пырса ҫитнĕ вăхăтра Василий Иваныч ҫывăратчĕ. Тăратрĕҫ те хайхи, эпĕ вара ăна питĕ кирлĕ хыпарсем пĕлтертĕм. Шурă казаксем ирхи шуҫăмпа пире хирĕҫ тухма хатĕрленни ҫинчен каласа патăм.

Алексей Дмитриевич суранлă пĕҫҫине аллипе сăтăркаларĕ те, хăйне лартса панă юман пукан ҫине ларчĕ.

— Каҫарма ыйтатăп,—терĕ вăл шăпланнă пек пулса,—ура сурма пуҫларĕ. Ҫанталăк пăсăлас умĕн вăл манăн яланах сурма пуҫлать... Хайхи вара, Чапаев мана итлерĕ те, ҫапла каларĕ: „Ну, Рублев, тĕрĕс каларăн пулсан—награда парăп, улталарăн пулсан—асту вара!“ терĕ. Хăй вара ҫавăнтах приказсем пама тытăнчĕ. Ман пата фельдшера чĕнтерчĕ. Вăл манăн урари пульăна кăларчĕ вара. Ҫапăҫу пĕтсессĕн, пирĕннисем шурă погон-

лисене аркатса тăкнă хыççăн, Василий Иваныч вĕçтерсе çитрĕ те кăшкăрать: „Маттур, Рублев, кӳр-ха эпĕ сана чуптăвам!“ тет. Чуптурĕ те мана питçăмартинчен,—Алексей Дмитриевич шăлавар кĕсйинчен сăмса тутри илсе куçĕсене шăлчĕ,—манăн алла кĕмĕл сехет тыттарать. „Тыт, ку сана награда“, тет. Эпĕ илместĕп, вăл итлесшĕн те мар. „Урунтан кăларнă пуля ăçта?“ тет. Кăтартрăм эпĕ пульлине—ăна фельдшер хамах парса хăварнăччĕ. Кулать Василий Иваныч. „Эсĕ ăна, Алексей Митрич, тет, сехет çумне çакса çӳремелле ту. Вăчăри те илемленет, асăнмалăх та пулать“, тет. Акă вăл, сехечĕ.

Заведующи вăчăри çумне пульă çакса янă сехете ывçи çине хурса, халăха кăтартрĕ.

— Чим-ха, хаклă парнене çывăхранах курма пар,—терĕ малти сак çинче ларакан çăм пусмаран çĕленĕ кĕпе тăхăннă курпун карчăк.

Вăхăт иртет, Чапаев çав-çавах çук-ха. „Артистсен“ гримĕ пичĕсем тăрăх юхса анать, залра сывлама та йывăр—пăчă. Вуннăллă лампăсем сиксе çунса тĕтĕм кăларма пуçларĕç.

Алексей Дмитриевич тăтăшах тула тухса пăхать—çул тăрăх лашасем вĕçтерсе килни илтĕнмест-и?

Анчах таврара шăпах. Чӳрече тул енче, сарăрах та вăйлах мар çутăра, кăпăшка та çемçе юр пĕрчисем вĕçкелеççĕ. Юнашар килкартинче, тăраннăн та йывăррăн ахлатса, ĕне сывлани илтĕнет.

Сцена хыçне таврăнать те заведующи, шанчăксăр сасăпа пĕлтерет:

— Çук. Пĕр-икĕ сехет маларах Марьинăран килмеллеччĕ, халĕ те çук.

Ĕшеннĕ „артистсем“ шарламаççĕ, тарланă пичĕсене вĕсем тек çĕр мамăк чăмăрккипе шăла-шăла илеççĕ. Учительница хĕрĕ çеç, спектакльте слу-

жанка рольне вылякан çивĕч куçлă, ларма-тăма пĕлмен Наташа çеç, костюмсем тăхăнмалли пӳлĕм тăрăх тахçанхи ĕлĕкхи пек çĕленĕ вăрăм юбкăпа вĕçтерсе çӳрет. Кашнинченех вăл:

— Эсир мĕнле шутлатăр, Чапаева килĕшĕп-ши эпĕ çакăн пек тумпа,—тесе ыйтать.

— Атьăр пуçлар,—сĕнчĕ Анна Ивановна.— Спектакль пĕтиччен, тен, пирĕн хăна та килсе çитĕ.

Кружокра учительница темиçе ĕç те тăвать— вăлах режиссĕр та, суфлĕр та, гримĕр та. Кункаçа вăл питĕ ывăннă, каçалапа унăн пуçĕ ыратма пуçларĕ. Хыçне плюш çĕленĕ пукан çине ларнă та вăл, йывăрланса, шуралса кайнăскер, тăнлавĕсене спиртпа сĕрет.

Рублев спектакле Василий Иванович килмесĕр пуçласшăн мар,—ăна хаклă хăна ячĕпе хатĕрленĕ. Анчах, кăштах турткаланса тăнă хыççăн, вăл килĕшрĕ.

Куракансем ларакан залри çутта сӳнтерчĕç.

— Граждансем, шăпланăр,—тесе пĕлтерчĕç сцена çинчен.—Чапаев юлташ тытăнса тăнă пирки, „Ирĕке кăларнă чурасем“ ятлă пьеса пуçлатпăр.

Тăкăска кантра тăрăх ункисемпе шуса, майĕпен чаршав уçăлчĕ.

Халăх куç илмесĕр сцена çине пăхать. Турилккесемпе вазăсем лартса тултарнă сĕтел хушшинче тăваткăл-тăваткăл тĕрĕллĕ жилет тăхăннă, хура галстук çыхнă самăр улпут ларать.

— Дунька! Тата пĕр чăх пар!—хулăн сасăпа кăшкăрса ячĕ вăл турилккине вилкăпа шаккаса.— Соусне те ытларах ярса пар, унпа çиме тутлăрах.

Чапаев килсе çитнĕ çĕре иккĕмĕш пайĕ пуçланнăччĕ. Тăлăпне çуни çине хывса пăрахса, вăл коридора чупса кĕчĕ те, тĕттĕмрех пирки асăрхансарах, куракансем ларакан залăн уçă алăкĕ патне шăппăн пычĕ.

Сцена çинче çӗтӗк сăхман тăхăннă мужиксем сӗнксе тăраççӗ, вӗсен умӗн, уксахларах, улпут ятлаçса çӳрет:

— Улпут çӗрне илесшӗн... Эпӗ сире халех кăтартăп!.. Староста! Пăлхавçăсене çаптарăр!

— Итлетӗп, ваше сиятельство!—тесе пырса тăчӗ хӗрлӗ сăмсаллă староста.

Чапаев урипе тăплаттарчӗ те сарлака утăмсемпе коридор тăрăх сцена хыçнелле кайрӗ. Тарăхса кайнăскер, вăл кӗрӗк тӳмисене вӗçертсе ярса сцена çине тухрӗ. Аллине малалла тăсса, мужикле тумланнă артистсене вăл:

— Мӗн пăхса тăратăр эсир?—тесе кăшкăрса ячӗ.—Вӗсем иккӗн, эсир пиллӗкӗн! Çыхса пăрахăр вӗсене, эрешменсене!

Пӗр самантлăха артистсем аптраса ӳкрӗç, пурте Василий Иванович çине пăхаççӗ. Анчах вăл хăйне çав тери татăклă та хăюллă тыткалани вӗсене те виçене кӗртрӗ. Вӗсем улпутпа старостăна ярса тытрӗç те сцена хыçнелле илсе тухса кайрӗç, пӗтӗм халăх ахăлтатса кулса ячӗ.

„Улпута“ турткаланă чух унăн тумтирӗ айӗнчен минтер тухса ӳкрӗ, вăл урайнех выртса юлчӗ. Ун урлах ярса пусса, Чапаев сцена хӗррине пырса тăчӗ.

Залра ларакансем алă çупса, „урра“ кăшкăрса ячӗç.

Василий Иванович хăйӗн çӳлӗ çӗлӗкне хыврӗ. Халăх шăплансан, вăл калама пуçларӗ:

— Кая юлса килнӗшӗн тата спектакле чарса лартнăшăн эсир мана, юлташсем, каçарăр. Николаевка витӗр килнӗ чухне унти мужиксем сăмах калама ыйтрӗç. Каласах пулчӗ вара. Сирӗн патран Пугачева васкамалла.

Залра каллех алă çупса ячӗç.

— Хăçан вăрçă пӗтет?—чăмăрӗпе сывлăша

çурса, калаçма пуçларĕ Чапаев.—Граждăнсем, хăçан та хăçан эсир, пурте пĕрлешсе, юнĕçенсемпе мулçăсене, урăхла каласан—шурă погонлисемпе ют çĕршывран килнĕ захватчиксене çĕнме Хĕрлĕ Çара пулăшатăр, çавăн чухне вăрçă та пĕтет. Хамăрăн совет влаçне сыхласа хăварсассăн вара, эпир çавăн пек пурнăç туса хурăпăр... мучисем те ташласа ярĕç!

Сăмах каласа пĕтернĕ хыççăн Чапаева спектакль курма юлмашкăн ўкĕтлерĕç. Ăна малтан пуçласах тепĕр хут кăтартрĕç. Виççĕмĕш, юлашки пайĕнче пăлхава çĕкленнĕ хресченсем, сенĕксемпе пуртăсем йăтса, улпут çуртне пырса кĕреççĕ. Хăраса ўкнĕ улпут сĕтел айне пытанать. Василий Иванович ларнă çĕртен сиксе тăчĕ те:

— Урисенчен сĕтĕрĕр ăна, шампа хырăма!— тесе хаваслăн кăшкăрса ячĕ.

Спектакль пĕтсен, Чапаев вылякансене тав турĕ.

— Лайăх вылятăр, чăн-чăн артистсем пекех!— тесе кашнин аллине чăмăртарĕ вăл.—Рублев тата, Рублев, пăхăр-ха епле ашкăнса кайнă вăл, вăт артист!

Василий Иванович, шăппăн кулкаласа тăракан Алексей Дмитриевича хулĕнчен лăпкаса, куççулĕ тухичченех кулчĕ.





## ХВАТТЕРТЕ ПУРӐНАКАН

Тахҫанах тул ҫутӑлнӑ, анчах урамра, пӗлӗтсем аялтан шунипе, ҫанталӑк тӗксӗм тӑрать.

Кухня чӳречи витӗр имшеркке ҫутӑ кӗрет. Кӑмакара йӑсӑрланса вутӑ ҫунать.

Наталья Власовна ылттӑн тӗслӗ пулса кайнӑ пысӑк кавӑна ҫурмаран касрӗ. Кавӑн варри кӑпӑшка та шывлӑ. Вӑл унтан йӑпӑлка шурӑ вӑррисене кӑларать те ҫатма ҫине хурать.

Урайӗнче шурӑ ҫӳҫлӗ хӗрача туратлӑ урай хӑмисем тӑрӑх упалене-упалене ҫӗрулми кустарать. Тӑватӑ ҫулти арҫын ачи йӑвантарса янӑ пукан ҫине утланса ларнӑ та ӑна пиҫиххипе ҫаптарать

— Но-но, хӑла!—тесе кӑшкӑркалать вӑл.— Наяна перетӗн, арҫури!

Алӑк уҫӑлчӗ те, шурӑ пӑспа пӗрле пӳрте ял Совечӗн председателӗ Терехинпа ҫамрӑк салтак кӗчӗҫ.

— Аван-и, Наталья Власовна!—юрлана пекрех каларĕ Терехин, сухалĕ ҫинчен пăрсене тасатса.

Кил хуҫи арăмĕ хыпăнса ӳкрĕ, хăнасене шалти пӳртне чĕнме пуҫларĕ.

— Эпир ĕҫпе килтĕмĕр,—терĕ председатель.— Каҫ выртма сан патна хваттере ҫын ярас тетпĕр.

Наталья Власовна йĕпе аллисене саппунĕпе шăлса типĕтрĕ те, малти пӳрт алăкне уҫрĕ:

— Кĕрĕр. Манăн кунта тасарах, йĕркеллĕрех,— терĕ.

Кĕске кĕрĕк тăхăннă йĕкĕт пӳлĕме тимлĕн пăхса илчĕ те ăна мухтарĕ.

— Ну, Власовна, эпир хваттерте пурăнас ҫынна илме каятпăр. Ҫапла-и, Исаев юлташ?—ыйтрĕ Терехин ҫар ҫыннинчен.

Лешĕ пуҫне сулчĕ те:

— Эпир хваттершĕн тӳлĕпĕр, ан пăшăрхан,— терĕ кил хуҫи арăмне.

— Кам вара вăл сирĕн, хваттере килекенĕ?

— Чапаев. Тен, илтнĕ пулĕ?

Кил хуҫи арăмĕ ахлатса ячĕ:

— Чапаев хăех-и вара? Ăна, тен, ман патăмра начар пек туйăнĕ, килĕшмĕ. Вăл пысăк ҫын...

— Килĕшĕ, инке,—кулса илчĕ Исаев, хăйĕн арпашăннă ҫӳҫĕсем ҫине ҫĕлĕкне пусса лартса.

Хăнасем тухса кайсанах, Наталья Власовна васкасах пӳртне тирпейлеме пуҫларĕ. Нихҫан та вăл ҫакăн пек хĕрсе тăрăшман темелле: йĕпе тутăр татăкĕпе сĕтеле, чӳрече янаххисене, алăксене сăтăрса иртрĕ, шалти пӳрчĕн урайне ҫурĕ, пуканĕсене йĕркелесе лартса тухрĕ. Наталья Власовна ун патĕнче Чапаева килĕштĕр тесе тăрăшрĕ.

Ачисене вăл кăмака ҫине хăпартса лартрĕ. Вĕсене пĕрер татăк кавăн тыттарчĕ те:

— Шăпăрт ларăр!—терĕ.

Килкартинче шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ, лашасем кĕçенсе ячĕç, Наталья Власовна вара, çара пуçăнах, хăнана кĕтсе илме тухрĕ.

Çуна çинчен Василий Иванович анчĕ. Çийĕнчи хура кĕрĕкне вăл чĕн пиçиххисемпе туртса çыхнă, çӳлĕ çĕлĕкĕн хĕрлĕ тăрри çинче юр пĕрчисем йăлтăртатса тăраççĕ.

— Аван-и, кил хуçи арăмĕ!—терĕ вăл.

— Акă Чапаева илсе те килтĕм,—терĕ те Исаев куçне хĕссе илчĕ.—Ну мĕнле, хаяр-и вăл пирĕн?

— Мĕн эс, йĕкĕт!—аллипе сулчĕ Наталья Власовна Чапаева питĕнчен пăхса.—Çынна ĕмĕрте пĕрремĕш хут куратăп пулин те, тăван килнĕ пек, кĕтсе илетĕп.

Сасартăк вăл хăй вăтанса ӳкрĕ, хĕрелсе кайрĕ.

Чапаев кулса ячĕ те, кĕрĕкĕ çумне çыпăçнă утă пĕрчисене силлесе, кил хуçи арăмĕ хыççăн пӳртелле утрĕ.

Малти пӳртре сăмавар чашкăрса ларать. Василий Ивановичпа ординарецĕ чей ĕçме ларчĕç. Наталья Власовна чей куркисем пачĕ, хăй сĕтел патĕнчен пăрăнса:

— Каçарăрах ĕнтĕ, пирĕн кишĕр чейĕ çав,—терĕ.

Чапаев хуçа арăмне сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ, анчах лешĕ именчĕ, кухньăна тухса кайрĕ. Чапаев ăна каялла чĕнсе кĕчĕ те хыççăр пукан çине лартрĕ:

— Ĕçсе çи, тăран, вара тухма та пултаран.

Вара вăл сахăр, çăкăр тата ăшаланă чăх какайĕ кăларса Власовна умне шутарса лартрĕ.

Калаçу пуçланчĕ. Хăюланса кайнă хĕрарăм йывăр пурнăç çинчен калама пуçларĕ. Упăшкине Уральскра вĕлернĕ, ачисем пĕчĕкçĕ, пулăшу çук. Вăрмантан вутă та хăйĕннех туртма тивет.

— Тепрер çул тӳс, вара йăлтах урăхланĕ. Лайăх пурнăç тăвăпăр — вилме те кирлĕ мар пулĕ! — йăпатрĕ Чапаев.

Кăмака çинче ачисем интересленсе пăхса ларççĕ. Василий Иванович курчĕ те çакна:

— Кӳр-ха вĕсене кунта, — терĕ. — Ăçта çав вĕсем?

Наталья Власовна ачисене антарчĕ.

— Мĕн ятлă?

— Ывăлăма — Ванюк, хĕрĕме — Наçтук, тесе чĕнетпĕр.

— Ăмăрткайăксем! — терĕ те Василий Иванович, таса хырса якатнă янахне сăтăркаласа илчĕ. — Пĕр сăмахпа каласан, пирĕн вырăна, ваттисем вырăнне ӳсĕç... Ну, Ванюк, атя чей ĕçер. — Вăтаннă ачана вăл хăйпе юнашар, хĕрне чĕркуççийĕ çине лартрĕ, сиктеркелесе, такмакласа илчĕ:

Пысăк мар кушак аçи,
Кăтра пуç — кил хуралçи,
Атя, кушак, тĕлĕрме,
Наçтук хĕре сиктерме...

— Авă мĕскер пĕлетĕн иккен эсĕ, Василий Иваныч! — кулса ячĕ Исаев.

— Пĕлмесĕр! Манăн килте хамăннисем виççĕн, вĕрентĕм. Курăпăр-ха, хăвăн та ывăл çуралсан епле юрлăн, — терĕ Чапаев.

Тĕттĕмленме пуçларĕ. Советран хыпарçă килчĕ.

— Чапаев юлташ, председатель сире калама хушрĕ: халăха пухăва клуба чĕнсе пухнă, — терĕ вăл.

Василий Иванович, Исаева çывăхри вăрмантан кил хуçи арăмĕ валли пĕр лав вутă турттарса килме хушрĕ те, тухса кайрĕ.

Хваттере вăл кая юлса таврăнчĕ. Наталья Власовна кăмака çинче чăлха çыхса ларать. Унпа

юнашар, ӳпӗнтернӗ кӑвас чӗресӗ ҫинче, шӑши куҫӗ пек лампа ҫунать.

— Ыран пире, инке, ҫутӑличченех вӑрат,— терӗ ӑна Чапаев малти пӳрте иртӳҫӗн.

— Ан пӑшӑрханӑр, вӑратӑп,—тесе шантарчӗ Наталья Власовна.

Василий Иванович часах ҫывӑрса каяймарӗ. Аллисене пуҫӗ хыҫне хурса, вӑл чылай вӑхӑт куҫӗсене хупмасӑр хӑй Академирен таврӑнни ҫинчен, Самарта 4-мӗш ҫар командующийӗпе Михаил Васильевич Фрунзепе тӗл пулни ҫинчен, вӑл ӑна Александрово-Гайски бригадӑн начальникӗ пулма уйӑрса лартни ҫинчен шухӑшларӗ. Уйрӑмах командующин юлашки, унпа уйӑлнӑ чух каланӑ сӑмахӗсене лайӑх астуса юлчӗ вӑл:

— Эпӗ сире, Чапаев юлташ, Сломихинская станицӑна йышӑнса малалла Лбищенск ҫинелле наступлени тумалли ответлӑ задачӑна пурнӑҫлама хушатӑп,—терӗ Фрунзе.—Шурӑ казаксен Уралти ҫарне пӗтермелле!

Фрунзе Чапаев аллине ҫирӗппӗн чӑмӑртарӗ.

Василий Иванович куҫӗ умне сасартӑк ҫак ҫирӗп, ҫапӑҫусенче пиҫнӗ большевикӑн, Ленин соратникӗн сӑнарӗ тухса тӑчӗ.

„Акӑ кам пек пулма тӑрӑшмалла—Фрунзе пек! Никам хуҫайми большевик! Вӑрҫӑ ӗҫне тата епле лайӑх пӗлет!“—шухӑшларӗ Василий Иванович.

Ҫывӑрса кайнӑ чух, Чапаев хӑйне ҫапла каларӗ: „Командующин приказне пурнӑҫлӑп. Мӗнле пулсан та пурнӑҫлатӑпах!“

Хваттере кӗнӗ ҫын ҫывӑрса кайсан, Наталья Власовна пукан ҫинчен унӑн гимнастеркине илчӗ те, кухньӑна тухса, ӑна пур енчен те ҫавӑркаласа пӑхма пуҫларӗ.

„Ялан вӑхӑта ӗҫре ирттерет,—шухӑшларӗ вӑл,—ун хыҫҫӑн пӑхакан та ҫук пулӗ-ха“.

Çухави патĕнче пĕр пĕрчĕ çип çинче çеç çакăнса юлнă каптăрма, тепĕр тĕлте—пысăк мар çĕтĕк тупрĕ Власовна. Çакна йăлтах юсаса çитерсен, гимнастеркине хăй вырăнне леçсе хучĕ те вăл, çутине сӳнтерсе, кăмака çине хăпарчĕ.

Ирхине вăл ирех вăранчĕ. Урамра кăвакрах йывăр юр выртать.

Урай тăрăх асăрханса утса, Власовна сăмавар лартса ячĕ. Шалти пӳртне вăл темиçе хутчен те кĕчĕ, çапах хваттере кĕнĕ çынна вăратма хăяймасăр тăчĕ. Лешĕ, тăнлавĕ айне аллине хунă та, питĕ тутлăн çывăрать.

— Ывăннă ĕнтĕ, ĕшеннĕ,—пăшăлтатрĕ те Власовна, аллипе куçĕсене шăлса илчĕ.—Чапаев юлташ, Чапаев юлташ, тетĕп...

— Мĕн, тул çутăлчĕ-и?—терĕ лешĕ, нафталин шăрши кĕрекен утиялăн хĕррине сирсе, чӳрече çинелле пăхса илчĕ.—Петька, тăр!—терĕ вăл арча çинче çывăракан Исаева.

Сĕтел çинче сăмавар чашкăрса ларать, анчах чей ĕçме вăхăт çук—лашасене кӳлсе тăратнă.

— Чипер юл, инке,—терĕ Чапаев тăлăпне тăхăннă май,—лайăх пăхнăшăн тавтапуç. Тен, хăçан та пулин татах тĕл пулăпăр-ха!

Кучер лашисене хуйхатрĕ те, çуна çăмăллăн, вĕтĕ юр тусанĕ пĕрĕхтерсе, малалла шуса кайрĕ.





## ТĔЛПУЛУ

Васька Ягодкин, аллисемпе сулкаласа, çĕлен пулă пек авкалана-авкалана, ура хуçса ташласа пӳрт тăрăх çаврăнма тытăнчĕ.

Федоров алă çупать, такмак калать:

Кăмаки сикет-ташлать,
Пӳрчĕ куçнă вырăнтан.
Кил хуçийĕ хуйхăрать—
Выртма вырăн та юлман...

Чĕриклетеççĕ те ахлатаççĕ кăна урай хăмисем, сентре çинче савăт-сапа чăнкăртатать.

Калинкке шашулкки шаклатнине, крыльца çине такам чупса хăпарса çенĕхре ури çинчи юрне шăлса тасатнине боецсем илтмерĕç. Алăк уçăлсассăн, пурте харăсах çаврăнса пăхрĕç.

Пӳрте взвод командирĕ Семĕн Кузнецов кĕчĕ. Çил çинче хĕрелсе кайнă питне, куçхаршисемпе

сайра та сарă сухалĕ çумне çыпăçнă юр пĕрчисенчен шăлса тасатмасăрах, малалла иртрĕ те вăл:

— Çĕнĕ хыпар илсе килтĕм, ачасем!—терĕ. Хăйĕн куçĕсенче пысăк савăнăç çиçсе тăрать.

Ун çине тинкерсе пăхакан хĕрлĕармеецсем те шăппăн кулса ячĕç, Васька вара тӳссе тăраймарĕ:

— Ан асаплантар, кала хăвăртрах!—терĕ.

— Мĕн тери савăнăç, юлташсем! Пирĕн пата Чапаев килет!

Пурте хутса янă кăмака умне çурма ункăн йĕркеленсе ларчĕç. Кузнецов калама пуçларĕ:

— Ăна пирĕн Александрово-Гайски бригадăн начальникĕ пулма уйăрса лартнă. Ыран ирхине килсе çитессе кĕтеççĕ.

Кузнецов, краççынланă çĕтĕк татăкĕ илчĕ те, тăрăшсах кĕмĕлпе эрешлесе илемлетнĕ хĕç йĕннине сăтăрма тытăнчĕ: хĕçне вăл нихçан та алран яман.

— Мĕн тери лайăх çын вăл—Чапаев!—терĕ вăл малалла.—Кашни боецпа тăван ашшĕ пек калаçать. Ĕçре, чăнах та, пит çирĕп тыткалать. Пĕлтĕр эпĕ унпа пĕрле çапăçрăм, пĕлетĕп.

Юлташĕсем Чапаев çинчен татах мĕн те пулин каласа пама ыйтрĕç.

Кузнецов, ахаль чухне чĕмсĕртерех те ытлашши калаçма юратсах кайманскер, халĕ килĕшмесĕр пултараймарĕ.

— Пĕррехинче çапла, пирĕн пата Василий Иваныч пычĕ,—шухăша кайнă пек пулса, хуллен пуçларĕ вăл,—Селезниха ялĕ таврашĕнчеччĕ пулас-ха,—пычĕ те командира калать: „Атя-ха, тет, хăвăн çарсем тăракан вырăнсене кăтарт". Командир, паллах, пире—вунă кавалериста, хăйпе пĕрле илет. Тапрантăмăр... Варсем, вăрмансем тăрăх вырăнпа паллашса иртетпĕр. Сасартăк тĕ-

меске хыçĕнчен шурă казаксен утлă разъезчĕ сиксе тухрĕ, пĕр хĕрĕх çын пулĕ...

— Хĕрĕх?—терĕ хăранă пек пулса Федоров.

— Унтан кая мар. Чапаев: „Атакăлар, ачасем!—тесе кăшкăрса ячĕ те казаксем çинелле вĕçтерчĕ. Эпир—ун хыççăн.—Кузнецов хĕçне йĕнничен кăларчĕ те унăн ялтăртатса тăракан çапçутă хурçине аркипе шăлса илчĕ.—Шуррисем малтанах хăраса ӳкрĕç пулас, каялла чакрĕç. Каярах хăйсем пирĕн çине тапăнчĕç. Пуçланчĕ касăлу. Эпĕ пĕрне, вăрăм кăтра çӳçлине, çывăхранах наганран персе ӳкертĕм, тепĕрне хĕçпе чашлаттартăм. Айккинелле çаврăнса пăхатăп та—куратăп: икĕ боецпа Василий Иванча пĕр вунпилĕк çын хупăрласа илнĕ. Çакна куратăп та хайхи—хамăн кӳрше: „Колька, ман хыççăн!“—тетĕп. Утсене шпорлатпăр та, пулăшма васкатпăр. Шуррисенчен пĕри çавăнтах персе анчĕ, теприне аллинчи хĕçне çапса ӳкертĕмĕр. „Çапла вĕсене, Сĕмка!“—кăшкăрать Чапаев, хăй лашине сылтăмалла та сулахаялла пăркалать, хĕрсе кайса хĕçпе турать...

— Вăт ку вăйлă!—тӳсеймесĕр кăшкăрса ячĕ Ягодкин. Аллинче тытса ларса ăшăтнă хыр тураттине вăл кăмакана пăрахрĕ.

— Питĕ вĕри çапăçу пулчĕ, анчах тăшмана эпир пурпĕрех аркатрăмăр. Пĕр вуннăшне тыткăна илтĕмĕр, нумайăшне касса тăкрăмăр, хамăрăн вара пӳрне те суранланман. Чапаев хаваслă, кулать: „Чапая тыткăна илесшĕн-ха тата! Аçтан илейĕç, ирсĕрсем!“—тет.

Кузнецов шăпланчĕ, урайне ӳкекен çутăсем çине тинкерчĕ. Унăн куçĕ умне хăй çуралнă вырăнсем, тусанлă хирсенчи ялсем, чĕриклетекен тарасаллă пусăсем, кукăр-макăр та чăнкă çыранлă Иргиз тухса тăчĕ.

— Эсĕ, Семĕн, хĕçне Чапайран мĕнле илтĕн вара?—ыйтрĕ боецсенчен пĕри.

— Осиновка патĕнче хĕрӳллĕ çапăçу пулса иртрĕ. Çапăçу хыççăн Чапаев мана хăй патне чĕнсе илчĕ те: „Ил манăн хĕçе. Ку сана манран парне“,—терĕ.

Федоров пĕр ывçи çинчен теприн çине вĕри çĕрулмине сиктерсе:

— Пиçнĕ!—тесе кăшкăрса ячĕ.

Каçхи апат хыççăн боецсем çывăрма выртрĕç, Кузнецов вара сĕтел хушшине сухал хырма ларчĕ. Тĕксĕмленсе кайнă куçкĕски катăкĕ çине пăхса, пăшăрханса илчĕ вăл: „Кĕркунне Уральск хулишĕн çапăçнăранпа тĕл пулма май килмерĕ. Унтан вăл академие кайрĕ... Тăвата уйăх иртрĕ... Манмарĕ-ши?“

Кузнецов кая юлса выртрĕ, вăл пĕр вĕçĕмсĕр тĕлпулу çинчен шухăшларĕ, тăван Гусихи ун асĕнчен тухма пĕлмерĕ...

Ир енне тин çывăрса кайрĕ.

* * *

Хытă çывăракан командира Федоров хĕрлĕармеец вăратрĕ.

— Семĕн, Семĕн тетĕп!—силлерĕ вăл Кузнецова хулĕнчен.—Вăран, Чапаев килсе çитрĕ!

Кузнецов хăвăрт, анчах та питĕ тирпейлĕн пуçтарăнчĕ. Тасатнă шинелĕ ăна питĕ килĕшет, аттисем ялтăртатса тăраççĕ.

Бригада штабĕн крыльци умĕнче пĕр ушкăн боец тăрать. Вĕсем хĕрсех калаçаççĕ, тӳсейми темĕн кĕтсе алăк çине пăхкаласа илеççĕ.

„Чăнах та манчех-шим?—пăшăрханса шухăшларĕ Кузнецов, шăнма пуçланă пӳрнисемпе портупея тăхине йăвалакаласа.—Эпир, боецсем, ну-

майăн пулнă, вăл—пĕччен, пурне те астуса пĕтереймĕн... Çук! Василий Иваныч ун пек çын мар. Астăвех. Хамăрăннисене пĕлет вăл“.

Сасартăк пурте кăшкăрса ячĕç:

— Чапаева—„Урра-а!“

Крыльца çинчен васкаса Василий Иваныч анать. Вăл кулать, саламлăн аллипе сĕлтет.

Семĕнăн пырĕ типсе ларчĕ, сывлăш пӳлĕнчĕ. Çынсене сире-сире, вăл çуна патнелле утакан Чапаев хыççăн чупрĕ:

— Василий Иваныч!..

Чапаев çаврăнса пăхрĕ. Хыпăнса ӳкнĕ Кузнецов çине пăхрĕ те вăл, унăн симĕсрех те çивĕч куçĕсем ăшă кулăпа çиçсе илчĕç:

— Кузнецов?.. Семĕн-и?..

— Шăпах çавă, Василий Иваныч!—Взвод командирĕ хăйĕн тĕреклĕ аллине Чапаева тăсрĕ.

— У, Сĕмка!—терĕ те Чапаев Кузнецова ыталаса чăмăртарĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне чуптурĕç.

— Йăлтах вĕренсе пĕтертĕн-и, Василий Иваныч?

— Халлĕхе—пĕтертĕм. Пирĕн республикăра ĕççем çакăн пек пынă чухне эпĕ лăпланса ларайман: пур енчен те тăшмансем сĕкĕнеççĕ,—терĕ хупăрах сасăпа Чапаев.—Вĕренни вара, Семĕн, кирлех... Ну, епле пурăнатпăр?

— Пурăнатпăр!

— Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн çапăçăпăр-ха, çапла-и, Семĕн?

— Çапла, Василий Иваныч, çапăçăпăр-ха!

Чапаев, çуна çине ларчĕ те, Казаксен Таловки ятлă ялалла кайрĕ.

Кузнецова хĕрлĕармеецсем хупăрласа илчĕç. Пиншакĕ çинчен тăлăп тăхăнса янă пирки хулăммăн курăнакан пысăк мар мужик, обозра тăраканскер пулас, хăлхи хыçне хыçса илчĕ:

— Мĕн вăл, санпа тăванлă-хурăнташлă-им?— тесе ыйтрĕ.

Кузнецов шăнса кӳтнĕ аллисене кĕсйисене чикрĕ те, çуркаланнă тутисемпе кăштах кулса, хыттăн каларĕ:

— Çук, аттеçĕм. Эпĕ Чапаев полкĕнче рядовойра службăра тăнă.





## РАЗВЕДКӐНА

Мӗн иртен пуçласах хӗвел çав тери хытӑ хӗртме пуçларӗ,—июньри шӑрӑх кунӑн вӗçӗ те пулас çук пек туйӑнать. Анчах кӑнтӑрла тӗлне тӳпене сасартӑк пысӑк хура пӗлӗт карса илчӗ, сивӗ çил вӗрме тытӑнчӗ, чӗреслетсе пӑтранчӑк çумӑр çума пуçларӗ.

Тепӗр хӗрӗх минутранах пӗлӗт тухăçалла шуса кайрӗ, каллех хӗвел курӑнчӗ,—çапла пулин те сывлӑш уçӑлса юлчӗ, сывлама çӑмӑлланчӗ.

Çӗр çиййӗпе, улӑм витнӗ пӳртсемпе витесен тӑррисенчен, темӗнле, сӑмсана кӑтӑклантаракан пӑс йӑсӑрланма пуçларӗ, Хӗрлӗ Çыран ялӗпе юнашар вӑрман енчен çӗр çырли шӑрши илӗртет.

Шур Атӑл çинче кӗмӗл тӗслӗ çӑмӑлкка тӗтре тӑрать.

Ялти анлӑ площадь, ытти чух пӗр çынсӑр, шӑпах тӑраканскер, халӗ лавсемпе, тачанкӑсемпе,

каллĕ-маллĕ хĕвĕшсе çӳрекен боецсемпе лăках тулса ларнă. Шăпах çакăнтан ĕнтĕ, 25-мĕш дивизи Ĕпхӳве—шурă бандит Колчакăн юлашки тĕрекĕ пулса тăракан хулана штурмлама хатĕрленнĕ.

Ĕпхӳпе Шур Атăла хăй аллинче сыхласа хăварассине Колчак пит пысăк вырăна хунă. Тăшман хăйĕн мĕнпур вăй-хăватне çавăнта пуçтарнă. Колчаковецсем юханшывăн сылтăм енне вăйлăн çирĕпленсе ларнă.

Хĕвелтухăç фрончĕн Кăнтăр группинчи çарсен командующийĕ Михаил Васильевич Фрунзе Ĕпхӳве йышăнма хушса приказ кăларнă. Шур Атăла штурмлама икĕ ударнăй группа тунă. Чапаев ертсе пыракан 25-мĕш дивизие çак группăсенчен пĕрне кĕртнĕ.

Площадь варрине Чапаев тухрĕ. Йĕри-тавра пăхса илчĕ те вăл, кирпĕчрен тунă çӳлĕ мар чиркӳ патнелле утрĕ. Унта кĕçех Пугачевски полкăн митингĕ пуçланмалла.

Пĕр эрне каярах çак полкăн комиссарĕ Волков вилнĕ. Вăл акă мĕнле пулнă. Пирĕннисемпе шурă казаксем хушшинче хĕрӳ çапăçу пынă вăхăтра рота командирне амантнă. Волков, командование хăй çине илсе, чапаевецсене тăшмана штыкпа атакăлама ертсе кайнă. Тăшмана ирсе тăкнă, лайăх позицисенчен кăларса ывăтнă. Çав çапăçура вилнĕ те ĕнтĕ харсăр комиссар.

Волков вырăнне полка Самарти çамрăк рабочие—Бурматова янă. Дивизи комиссарĕ Фурманов унччен юнашар дивизин политпайĕнче ĕçленĕ Бурматов çинчен ырласа калаçатчĕ. Анчах çак эрнере Василий Иванович Пугачевски полк комиссарне икĕ хутчен çеç курнăччĕ, çавăнпа халь ăна хăй лайăх пĕлсе çитейменшĕн пăшăрханать.

„Пулас операци—çăмăл мар,—шухăшларĕ Василий Иванович, васкарах утса.—Шуррисем хăйсен

мӗнпур вӑйӗсене Ӗпхӳ патне пуçтарнӑ. Çапах та паян çӗрле пирӗн разведка Шур Атӑл леш енче пулмалла... Бурматов халӑхпа тӗл пулса лайӑхрах паллашайрӗ-ши? Боецсене çапӑçӑва кӗме хатӗрлейрӗ-ши?"

Чапаев чиркӳ патне çитнӗ çӗре митинг пуçланнӑ та-мӗн. Хӑй кунтине палӑртас мар тесе, Василий Иванович боецсем хыçне чарӑнса тӑчӗ.

Чиркӗвӗн шурӑ чултан тунӑ крыльци çинче Бурматов тӑрать. Вӑл çӳлӗ те кӗрнеклӗ, уçӑ сӑн-сӑпатлӑ, тимӗрçӗнни пек çирӗп алӑллӑ çамрӑк çын.

— Красноармеец юлташсем!—хыттӑн калаçать комиссар, хӑй хумханать пулас—аллинчи тетрадьне труба пек туса чӗркенӗ.—Умра—татӑклӑ çапӑçусем. Анчах чапаевецсем яланах хӑюллӑ та паттӑр пулнӑ. Чапаевецсем шурӑ погонлисене яланах аркатнӑ. Колчакӑн пӗрре мар тустарнӑ çарне хальхинче те вӗсем тӗппипех çӗмӗрсе-аркатса тӑкӗç.

Василий Иванович умӗнче тӑракан хӗрлӗармеец хӑйӗн юлташне чавсипе тӗртрӗ те, хӑрӑлтатарах, çурма сасӑпа каласа хучӗ:

— Ку комиссар та вара çавӑн пекрех...—Вӑл, пиçиххине тӳрлетрӗ те, хушса хучӗ:—Пултаруллӑ çын. Хамӑр йышшисенчен; унашкал çынпа вутта та, шыва та кӗме пулать.

— Пирӗн пата килни мӗнпурӗ те пӗр эрне çеç-ха, çапах ӑна пурте пӗлеççӗ ӗнтӗ,—килӗшрӗ тепӗр боецӗ.—Калаçать те, канашсем те парать, тӗрлӗ пӗлӳсем паракан кружок занятийӗсене те йӗркелесе ячӗ... Чӑн-чӑн большевик пулни курӑнать!

Хӗрлӗармеецсене кӳршисем хӑтӑрчӗç те, вӗсем шӑпланчӗç.

Бурматов хӑйӗн кӗске сӑмахне каласа пӗтерчӗ, унтан кӗсйинчен кӗске кӑна кӑранташ татӑкӗ кӑларса, çӗрле хӑрушӑ разведкӑна каяс текенсене çырса илме хатӗрленчӗ.

Пĕрремĕш ĕретре тăракан çӳлĕ боец, сап-сарă уссиллĕскер, хулĕсене сарса тӳрлетрĕ те, хĕреслетсе пулемет лентисем çакса янă кăкăрне чăмăрĕпе çапса, вăраххăн та хулăннăн каларĕ:

— Пуçламăшне мана çыр... Порфирий Лаптев!

Çав вăхăтрах пур енчен те сасăсем илтĕнме пуçларĕç:

— Герасим Сидорыч Ширкунова çыр!

— Петрова!

— Валеткин Ивана!..

Комиссар çырма аран ĕлкĕрет. Виçĕ страница çырса тултарчĕ ĕнтĕ вăл, хăйĕн ирĕкĕпе разведкăна каяс текенсем çав-çавах нумай-ха.

Хĕçне аллине тытса, Василий Иванович чиркӳ патнелле хăвăрт та çăмăллăн утса кайрĕ.

Чул пусмасем тăрăх вăл крыльца çине чупса хăпарчĕ те, Бурматова юлташла сывлăх сунчĕ:

— Маттур, комиссар, салтаксен чунĕсене яриех уçрăн!

Хăйсен юратнă командирне курсан, пугачевецсем пĕр харăс „урра“ кăшкăрса ячĕç.

Василий Иванович аллине çĕклерĕ. Полк шăпах пулчĕ.

Пĕр минут хушши вăл хĕрлĕармеецсем çине пăхса илчĕ. Вĕсен типшĕм пичĕсем çилпе хĕвел çинче пиçсе хуралнă, гимнастеркисем тĕссĕрленсе кайнă, хăйсем те, нумай вăхăт походсемпе çапăçусенче пулса, ĕшеннĕ. Анчах вĕсем каллех, приказ парсанах, тăшмана хирĕç харсăррăн çапăçма хатĕр,—кăна Василий Иванович лайăх пĕлсе тăрать.

— Эпир Шур Атăл леш енне каçаймасан, эсир чапаевецсем мар, эпĕ Чапаев мар. Анчах эпĕ шанатăп... Ĕпхӳ пирĕн пулать! Комиссар кунта тĕрĕс каларĕ—колчаковецсем тĕп пуласси инçе мар! Пĕр вĕсем çеç те мар тĕп пулĕç. Эпир революцин мĕнпур тăшманĕсене аркатса тăкăпăр!

Каллех ёретсем тăрăх хăватлă „урра“ кĕрлесе кайрĕ.

— Çитĕ, тек ан çыр,—терĕ Василий Иванович комиссар енне çавăнса, унтан тетрадьне илме аллине тăсрĕ.

— Пĕр самант çеç!—терĕ те комиссар, уйрăмах васкаса, юлашки хушамата çырса хучĕ.

Чапаев списока васкамасăр пăхса тухрĕ.

— Хĕрĕх сакăр çын. Çитет,—терĕ вăл тепĕр хут список вĕçне пăхса илсе.—Эсĕ те каясшăн-и вара, Бурматов?

— Так точно, Чапаев юлташ,—татса каларĕ комиссар. Пăртак тăхтасан, вăл малалла каларĕ:— Эпĕ, Василий Иваныч, çапла шухăшлатăп: эпĕ хĕрлĕармеецсене чĕнетĕп пулсан, хам та вĕсемпе пĕрле пулмалла. Çавăншăн эпĕ коммунист. Пирĕн çарти коммунистсем çапăçава кайнă чух яланах малта пыраççĕ.

— Вăт ку тĕрĕс,—пуçĕпе сулчĕ Василий Иванович. Хавхаланса кайнă Бурматовăн хĕвелпе пиçнĕ пичĕ çине пăхса, вăл ăна хулĕнчен тытса лăпкарĕ те, çапла хушса хучĕ:—Пур ĕçре те Фурманов пек пулма тăрăш. Унтан лайăх комиссар пурри не пĕлместĕп!





## ПИАНИНО

Минтерĕн пĕр хĕррине хĕвел çути ӳкрĕ. Шупка-хĕрлĕ минтер пичĕ тăрăх хуллен шуса пырса çывăракан çын патне çывхарчĕ вăл, унăн хăлхи çине ӳкрĕ, унтан çилпе пиçсе кирпĕч тĕслĕ пулса кайнă питçăмартийĕ урлă каçрĕ те хупă куçĕсенчен пăхрĕ. Çамкине картлантарса, Чапаев вăранчĕ.

Минтер çинчен пуçне çĕклерĕ те вăл, ытла çутă пулнипе куçне хĕссе, урисене çĕрелле усса ларчĕ.

Кантăк çинче типеймесĕр юлнă пĕр сывлăм пĕрчи чĕтренсе тăрать. Çатан карта çийĕн тӳпенелле хĕвел хăпарать.

Кухньăран шăппăнрах калаçнă сасăсем илтĕнчĕç:

— Кĕрт ĕнтĕ, кама калаççĕ!

— Çывăрать! Ăнланатăн-и?

Тем кăштăртатни, тĕрткелешни илтĕнчĕ. Сасартăк алăк уçăлса кайрĕ, шалти пӳрте пăлхансапăшăрханса ӳкнĕ хĕрарăм чупса кĕчĕ.

Василий Иванович, васкасах утиялĕпе пĕркенчĕ те, ун çине шиклĕн пăхса илчĕ.

Чапаева курсан, хĕрарăм икĕ аллине сарса кăшкăрса ячĕ:

— Чапаев юлташ! Эпĕ вĕсене юрамасть тетĕп, вĕсем хăйсеннех—сĕтĕреççĕ... Эпĕ вĕсене пуç урлă тыттаратăп, вĕсем çав-çавах сĕтĕреççĕ! Пĕтĕмпех эсрелленсе кайнă. Пулăшăр, Чапаев юлташ!

— Мĕн пулчĕ? Кам, мĕн сĕтĕрет?—ыйтрĕ Василий Иванович.

— Ара, пирĕн мужиксем. Купца çуртĕнчи музыкăна сĕтĕрсе тухса çĕмĕресшĕн. Вăл хаклă япала пуль вĕт-ха, кирлĕ пулма пултарĕ...

* * *

Хĕрарăм малтан чупать, Чапаев ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пырать. Вĕсем Пантелеев купца çуртне пырса кĕнине никам та асăрхамарĕ.

Залăн уçă алăкĕ умĕнче Василий Иванович чарăнса тăчĕ.

Виçĕ хресчен пӳлĕмрен пианино сĕтĕрсе тухасшăн тĕрмешеççĕ. Пурте тарланă хăйсем, пашкаççĕ, ятлаçаççĕ. Пуринчен ытларах çӳлех мар, лутака та вăйлă, кĕреçе сухаллă çын кускалать. Ялтăртатса тăракан хура сăрлă пианино, хура мрамор купи пек йывăрскер, алăкра хĕсĕнсе ларнă.

— Виттине çапса салатас унне, çĕрçăтманнăнне!—тесе урипе тапрĕ çиленсе кайнă кĕреçе сухал.—Туртса хăпăтар виттине, мужиксем. Атту эпир унпа ĕмĕр асапланăпăр.

Чапаев ӳсĕрсе илчĕ те, алăкран кĕчĕ.

— Сывă-и, юлташсем!—терĕ вăл.

Хресченсем çаврăнса пăхрĕç, тӳрленсе тăчĕç:

— Сывӑ-ха, Чапаев юлташ!

— Йӑлтах ывӑнса ҫитрӗмӗр!—терӗ чӑнах та ӗшеннӗ кӗреҫе сухал, ҫавӑнтах Чапаева ертсе килнӗ хӗрарӑма курса, лач сурчӗ:—Эх, ытла та йӑра иккен эсӗ, Клавти!

— Пианинӑна ӑҫта илсе каясшӑн? Халӑх ҫуртне-и?

— Ҫавӑнта пуль, председатель хушрӗ,—терӗ хресченсенчен пӗри.

Анчах кӗреҫе сухалли ун ҫине кӳренсереххӗн пӑхса илчӗ:

— Мӗн ҫылӑха пытарса тӑмалли пур, Чапаев юлташ! Тӳрех калас пулать—ку япалана ҫӗмӗрсе тӑкасшӑнччӗ эпир.

— Мӗншӗн тата?

Мужиксем, кулянн̆а пек, ассӑн сывласа илчӗҫ.

— Тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парас пулсан, Чапаев юлташ, вӑхӑт нумай сая каять,—терӗ те сухалли, тутисене ҫуласа илсе, хӑйӗн кӗреҫе сухалне шӑлса якатрӗ.—Эпӗ ҫав юнӗҫен Пантелеев патӗнче пилӗк ҫул тарҫӑра пурӑнтӑм. Вунулттӑмӗш ҫулта ун патӗнчен кайма тӑтӑм та, вӑл мана шӗшлӗ аври тыттарчӗ, ҫийӗнчен, „хӑвӑнтан тухать“, тесе мӑшкӑлларӗ. Хӑйне валли мул пухас тесе, чӗрри-вилли мӗнне пӑхмасӑрах ҫарататчӗ, тӑранман хырӑм! Хӗрне валли—музыка, тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑрсем...

Вӑл шӑпланчӗ, пианино ҫине ҫиллессӗн пӑхса илчӗ.

Чапаев кӗреҫе сухала чавсинчен ярса тытрӗ те:

— Эх, эсӗ те ҫав, „виттине ҫапса салатас“,— терӗ ҫемҫен.—Ку пианинӑшӑн эсӗ юн юхтарса, тар кӑларса ӗҫленӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑл санӑн пулса тӑчӗ.—Василий Иванович саппунӗпе пианино ҫинчи тусана шӑлакан хӗрарӑм ҫине пӑхса илчӗ.— Халь вӑл пирӗн, пӗрлешӳллӗ пурлӑх. Ӗнер кулак

хĕрĕ пианино каланă, ыран вара... ыран сирĕн ачăрсем калĕç. Калаççех! Тĕрĕс калатăп-и эпĕ?

Мужик айăпа кĕнĕ чухнехи пек кулса илчĕ:

— Манăн халĕ хамăн та чĕре темле çемçелсе кайрĕ. Тĕрĕс калатăн çав, Чапаев юлташ.

Купца çуртĕнчен Чапаев ял Советне кайрĕ.

Председатель, пианинăна упрама пулса, комдива пама хут çырчĕ.

— Пулчĕ пулас,—терĕ те вăл, сывлăш çавăрса илсе, хăй çырнине сасăпа вулама пуçларĕ.

Василий Иванович тимлĕн итлерĕ.

— Тата хуш,—терĕ вăл:—„Кăткăс инструмента, пианино ятлăскере, пăсас е çĕмĕрес пулсан, мана ним тăхтаса тăмасăрах ревтрибунал айăплама тивĕç".

Председатель хирĕçлесшĕнччĕ, анчах, Чапаев çине пăхса, пĕр сăмах чĕнмесĕр хушса çырчĕ.

— Халĕ пулчĕ-и ĕнтĕ?

— Пулчĕ. Алă пус. Çапла. Кӳр кунта.—Комдив распискăна çурмалла хутласа хăйĕн планшеткине чиксе хучĕ.

* * *

Тӳпере татăк-татăк çумăр пĕлĕчĕсем шуса иртеççĕ. Сивĕ çил вĕрсе çул тăрăх тусан вĕçтерет.

Лбищенска çитсе кĕчĕç.

Акă каллех хуралса кайнă стеналлă, пысăк çурт—казак çурчĕ. Лутра мачча айĕнче лампа çакăнса тăрать, малти кĕтесре—хăрăмланса ларнă турăшсем, вĕсен айĕнче—„Нива" журналтан касса илнĕ, халĕ шăнасем вараласа пĕтернĕ картинăсем.

Тĕксĕм сăнлă Чапаев кĕтесрен кĕтесе уткаласа çӳрет. Çамкине картлантарать, унтан, чӳрече умне чарăнса, çинçе пӳрнисемпе рамăна шакăртаттарать. Урамăн пĕр тĕслĕ сăрă сăн-сăпачĕ чуна

салхуллантарать. Василий Иванович каллех пӳрт тӑрӑх каллӗ-маллӗ ҫӳреме пуҫларӗ.

Тиф чирӗ боецсене пӗр хӗрхенӳсӗр урараң ӳкерет, ҫарсем малалла пит вӑрахпа куҫаҫҫӗ. Обоз кая тӑрса юлать.

Белебей, Чишма, Ӗпхӳ, Уральск хулисем хыҫа юлчӗҫ. Мӗн чухлӗ ҫапӑҫу пулнӑ! Мӗн тери хаваслӑ е хурлӑхлӑ минутсем тӳссе ирттернӗ!

Василий Иванович кукленсе ларчӗ те, кравать айӗнчен хӑйӗн саквояжне илчӗ. Кӗпе-тум айӗнче тӗрлӗ хутсемпе документсен пысӑк мар ҫыххи выртать. Ҫыхха салтса, саралса кайнӑ лӳчӗркеннӗ хутсене пӑхкалама пуҫларӗ вӑл. Ури айне ҫурмалла хутлатнӑ пӗчӗк хут тухса ӳкрӗ. Василий Иванович ӑна илчӗ те саркаласа пӑхрӗ:

„РАСПИСКА

Василий Иванович Чапаев, 25-мӗш Чапаевски дивизин командирне ҫак хута парса, эп, Вырӑс Кандыз ял Совечӗн председателӗ Ермолин Николай Александрович, ӗлӗкхи кулак Пантелеевӑн музыкине, ялти ачасем ӑна калама вӗренччӗр тесе, шкула пама пулатӑп тата ӑна, куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек, упрама пулатӑп.

Кӑткӑс инструмента, пианино ятлӑскере, пӑсас е ҫӗмӗрес пулсан, мана ним тӑхтаса тӑмасӑрах ревтрибунал айӑплама тивӗҫ.

Совет председателӗ *Ермолин*".

Василий Ивановичӑн пичӗ ҫак хута вуланӑҫемӗн ҫуталса пычӗ. Вырӑс Кандыз ялӗ, кӗреҫе сухаллӑ мужик, ялтӑраса тӑракан хура пианино, пӑлханса-пӑшӑрханса ӳкнӗ хӗрарӑм асне килчӗҫ.

Тетрадӗнчен пӗр листине татса кӑларса, Чапаев ҫыру ҫырчӗ. Ҫырнине вуласа тухрӗ те, кӑмӑлӗ тулчӗ. Йӑл! кулса илнӗ май, сылтӑм куҫне кӑштах хӗссе, конвертне ҫыпӑҫтарчӗ те вӑл, Исаева чӗнсе илчӗ:

— Яр ҫакна, Петька!—терӗ.

Исаев тухса кайрӗ.

Чапаев каллех салхулланчӗ. Нумай пулмасть урӑх ӗҫе яма чӗнсе илнӗ Фурманов комиссара — хӑйӗн чи ҫывӑх тусне, вӗрентекенне тата пулӑшаканне аса илчӗ те вӑл, ӑна пушшех те кичемрех пулса кайрӗ.

Ӗҫлессе те вӗсем ҫур ҫул ҫеҫ пӗрле ӗҫленӗ, ҫапах та пӗтӗм пурнӑҫӗ унпа пӗрле, юнашар, пӗрре те уйӑрӑлмасӑр иртнӗ пек туйӑнать.

Мӗне кӑна вӗренмерӗ пулӗ Чапаев Фурмановран — большевикла хӗрӳллӗ сӑмахпа ҫынсен чӗрисене чӗртсе яма пӗлнӗ чӑн-чӑн коммунистран! Хӑюллӑ та харсӑрскер, вӑл яланах, хӑйӗн пурнӑҫне шеллемесӗр, чапаевецсемпе пӗрле атакӑна каятчӗ. Хӗллехи миҫе вӑрӑм каҫа пӗрле шӑкӑлтатса каласса ирттермен-ши вӗсем! Фурмановпа ҫапла каласнӑ хыҫҫӑн кашнинчех Чапаев умӗнче ҫав тери анлӑ, чикӗсӗр инҫет уҫӑлатчӗ.

Василий Иванович ури ҫине тӑчӗ. Урӑх вӑл пӗччен юлма пултараймарӗ. Хулпуҫҫи ҫине шинель уртса ячӗ те вӑл пускиле, дивизин ҫӗнӗ комиссарӗ Батурин чарӑннӑ ҫурта кайрӗ.

* * *

Пин те тӑхӑрҫӗр вӑтӑр улттӑмӗш ҫул, июнь уйӑхӗ. Курӑксем чечекре, тырӑсем ӗлкӗреҫҫӗ.

Пӗррехинче эпӗ, каҫалапа, Красная станицӑна пырса ҫитрӗм. Ку ял — Уральск хулинчен хӗрӗх пилӗк километртра вырнаҫса ларнӑ.

Станица Совечӗн анлӑ ҫуртӗнче сивӗрех, пӗр сас-чӗв те ҫук.

Председатель сӗтелӗ умӗнче шӑмӑ куҫлӑхлӑ ҫамрӑк ҫын ларать, шлепкине чӗркуҫҫи ҫине хунӑ.

Манӑн документа вуласа тухнӑ хыҫҫӑн, председатель кулса илчӗ.

— Эсир пирӗн патра иккӗмӗш ҫын, — терӗ

вăл.—Ак çак юлташ та Чапаев пирки. Пал лашăр-ха.

Эпир паллашрăмăр. Куçлăхлă çын композитор иккен. Краснăйра икĕ кун пурăнчĕ те вăл Уральска тухса кайрĕ.

— Пĕлетĕр-и?—терĕ вăл мана каяс умĕн, хавхаланса.—Эпĕ кунта Василий Ивановичăн хăй виличчен нумаях та мар маларах Вырăс Кандыз ялне янă çыруне тупрăм. Çырăвĕ унта çитеймен, темле майпа ял Совет архивĕнче юлнă. Акă курăр-ха.

Çыруне шкул ачисенни пек тетрадьрен татса илнĕ хут çине çырнă. Чернилĕ тĕссĕрленсе хăмăрланса ларнă, хучĕ сарăхса кайнă, сылтăм кĕтесĕ симĕсленсе пăнтăхма пуçланă.

Хăйĕн çырăвĕнче Чапаев пианино епле упранни çинчен пĕлтерме ыйтнă, шкул ачисем музыкăна мĕнле вĕренни çинчен пĕлесшĕн пулнă. Вăл улпут инструменчĕпе калама вĕреннĕ музыкантсене итлеме хăçан та пулин килсе курма сăмах панă.

Çырăва эпĕ композитора тавăрса патăм. Вăл ăна тирпейлĕн хуçлатса портфельне хучĕ.

— Эпĕ Вырăс Кандыз ялĕнче çуралнă вĕт. Ун чухне, вунтăххăрмĕш çулта, вунпĕрте пулнă, виççĕмĕш класра вĕреннĕ. Музыкăна эпĕ çав пианинăпа каласа вĕрентĕм,—терĕ композитор малтанхи пекех хавхаланулла сасăпа.





## А Т А Ш

Губашин полковник, пуçне яп-яка хырса янă çӳлĕ те типшĕм çын, чĕнмесĕр çӳрерĕ, шухăшлă пулчĕ. Пăрахут палуби тăрăх вăл тарăхса утса çӳрет; ăна сентябрь хĕвелĕн çуттинче йăлтăртатса выртакан лăпкă Атăл та, тĕл-тĕл саррăн, ылттăн тĕслĕ курăнма пуçланă Жигули тăвĕсем те интереслентермеççĕ тейĕн.

Полковникпа юнашар пыракан Алексей Алексеевич Соловьев, хăйĕн отпускне Атăл тăрăх çӳресе ирттерсе халĕ тăван Горький хулине таврăнакан рабочи, Губашин паллайми улшăннине асăрхарĕ.

Вĕсем Астраханьтенех пĕрле килеççĕ те çул çинче туслашрĕç: тăтăшах пĕрле каласса лараççĕ е шахматла выляççĕ. Иккĕшĕ те аллăсенчен иртнĕскерсем, кашнийĕнех каласа кăтартмаллисем сахал мар.

Паян Губашин Соловьевран пăрăнма тăрăшнă пек туйăнать. Соловьев ним интересленмесĕр шыв çине пăхса пыракан полковник патне сывхарсанах, лешĕ бортран пăрăнса е пăрахут хӳри çине, е сăмси патнелле—ăçта çын çук, çавăнталла каять.

Алексей Алексеич полковник патне пырса тӳрех вăл мĕншĕн салхулланни çинчен ыйтма именет.

Каç пулас умĕн Соловьев, палуба çинчи сĕтел çине чавсаланса, Толстойăн „Война и мир" кĕнекинчи хăй юратнă вырăнсене тепĕр хут вуласа пычĕ. Кĕтмен çĕртенех полковник унпа юнашар пырса ларчĕ. Хăйĕн ывăç тупанĕпе унăн аллине сĕртĕнсе Губашин, кăштах айăпа кĕнĕ пек, лăпкă сасăпа калаçма пуçларĕ:

— Эсир мана çиленместĕр пулĕ, Алексей Алексеич?—Кăшт тăхтасан, тарăннăн сывларĕ те, малалла каларĕ:—Паян сентябрĕн пиллĕкмĕшĕ... çапла, пиллĕкмĕшĕ. Вунтăххăрмĕш çулта çак кун Василий Иванович Чапаев вилчĕ.

Темиçе минут иккĕш те чĕнмерĕç.

— Эсир мĕн вара, Чапаева çывăх пĕлнĕ-им?—асăрханарах ыйтрĕ юлашкинчен Соловьев.

Полковник чĕлĕмне кăларчĕ, унтан ăна, кăштах аллинче тытса тăнă хыççăн, каллех кĕсйине чикрĕ те, йывăррăн каласа хучĕ.

— Пĕрле çапăçнă. Ку йăлтах, тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ, вăтăр çул ĕлĕкрех пулнă, пурпĕрех... йăлтах куç умĕнче тăрать!

Губашин ӳсĕрчĕ те пуçне аяккалла пăрчĕ.

— Пĕрремĕш хут Василий Ивановича эпĕ вунсаккăрмĕш çулта çулла куртăм,—терĕ вăл кăштах тăрсан,—унăн отрячĕсем ун чух Уральск походĕнчен таврăнатчĕç. Çурăм хыçне хутаç çакса янăскер, эпĕ Чапаев штабĕ вырнаçнă Порубежка ялне пытăм. Чапаев отрядне çырăнас текенсем

эпир нумайӑн пухӑнтӑмӑр. Унта ман пек тар шӑршласа курман ҫамрӑксем те, пурнӑҫра чылай куркаланӑ шурӑ ҫӳҫлӗ стариксем те пурччӗ. Анчах пурте пӗр пекех пӑшӑрханаттӑмӑр. Чапаев хӑйӗн отрядне пыракан ҫынсене пит тимлӗн суйласа илетчӗ.

Василий Иванович крыльца ҫине тухрӗ те, пуҫтарӑннӑ ҫынсене витӗр шӑтарасла куҫпа хӑвӑрттӑн пӑхса илчӗ:

„Мӗн ӗҫпе килтӗр, граждӑнсем!"—тесе кӑшкӑрчӗ вӑл, аллисене ҫурӑмӗ хыҫне пытарса.

Эпӗ крыльца пусмисемпе юнашарах тӑраттӑм та, пуринчен малтан ӑна:

„Чапаев юлташ, хӑвӑн отрядна ил мана",—терӗм.

Василий Иванович ман пата пӗшкӗнчӗ те, куҫне хӗссе:

„Ӑҫта сана? Эс кам пулатӑн?"—терӗ ҫиллессӗн.

Эпӗ ҫухалса кайрӑм, вӑл ыйтнисене йӑлтах каласа патӑм.

Чапаев мана ҫӗнӗрен йӗркеленекен ротӑна илме хушрӗ. Юлашкинчен Василий Иванович эпӗ мӗн ятлине ыйтрӗ.

„Губашин манӑн хушамат,—терӗм эпӗ.—Атте Иван ятлӑ, мана Василий тесе чӗнеҫҫӗ".

Вӑл йӑл кулса илчӗ:

„Эппин эсӗ манӑн аташ,—терӗ.—Ну-ну! Халӗ, каннӑ вӑхӑтра, ҫине тӑрсах пӑшал пеме вӗрен".

Ҫур уйӑхра эпир, ҫӗнӗ салтаксем, стройра ҫӳреме, винтовкӑна вӗрентӗмӗр, ҫарти тӗрлӗ ӗҫсене хӑнӑхса ҫитрӗмӗр. Хамӑра эпир харсӑр та хӑюллӑ тесе шутланӑ, часрах вӑрҫа каясшӑн ҫунаттӑмӑр.

Николаевск хулине (халӗ Пугачев) тӑшман тытса илнӗ кун Порубежкӑра ҫапӑҫу пулчӗ. Та-

волжанкăна йышăннă тăшман, Мăн Иргиз урлă каçмалли кĕпере пиртен туртса илчĕ те, Пугачевски полка Порубежкăран хăваласа ярасшăн пулчĕ.

Çавăн чух вара манăн пĕр мыскара курма тĕл килсе тухрĕ те.

Вăл ĕç кăнтăрла тĕлнелле пулса иртрĕ. Эпир атака пуçласа ятăмăр. Анчах лайăх вырнаçса çирĕпленнĕ тăшман пире каялла хуса ячĕ. Тавралăх пĕр вăхăтлăха шăпланчĕ. Çак вăхăтра позицисем патне Василий Иванович вĕçтерсе çитрĕ. Пире вăл хăй атакăна ертсе кайрĕ. Кĕпере туртса илтĕмĕр, тăшмана хăйне те хăвалама пуçларăмăр. Çавăн чух Чапаев мана курчĕ те пĕрре пăхсах палларĕ.

„Аташ,—тесе сулчĕ пуçĕпе,—аван-и!.. Ординарец халĕ манпа мар,—терĕ вăл малалла,—манпа пĕрле эсĕ пулăн".

Пысăк мар васана антăмăр, чарăнтăмăр.

„Эсĕ мана çакăнта кĕтсе тăр, эпĕ часах таврăнатăп",—терĕ те Василий Иванович, ĕрĕхтерсе катана кĕрсе кайрĕ.

Таврара темле çав тери хăрушла шăп пулса кайрĕ. Сасартăк тĕмеске хыçĕнчен, тăшман енчен, пирĕн пехотинец чупса тухать. Винтовки те çук, картузне те çухатнă. Хăй кăшкăрать:

„Пулеметлă машина! Пурне те касса тăкать!"

Манăн чĕркуççисем чĕтресе кайрĕç. Лашана çавăртăм та хамăр еннелле—тара патăм. Йĕпе çине сапа тенĕ пек, хам тата йĕнер çинчен ўкрĕм. Сулахай алла ыраттартăм. Сиксе тăратăп та—каллех йĕнер çине. Пуçран картуз хывăнса ўкрĕ—илсе тăмарăм.

Каçхине, çапăçу хыççăн, Чапаев ман пата пырса тухрĕ, аллинче хăй манăн картуза тытса тăрать.

„Лекет ĕнтĕ халь мана!"—шухăшларăм эпĕ.

Василий Иванович манăн шыçăнса кайнă алă çине пăхса илчĕ.

„Амантрĕç-им?“—терĕ вăл.

„Çук, Чапаев юлташ,—тетĕп,—эпĕ паçăр лаша çинчен ӳкрĕм“.

„Акă ил. Паллатăн-и?“—терĕ те вăл картуза мана пачĕ.

„Паллатăп“,—тетĕп, хам çав вăхăтра çĕр тĕпне анса кайăттăм—калама çук намăс пулчĕ.

Василий Иванович чĕнмесĕр тăчĕ-тăчĕ те:

„Урăхран джигитланса ан çӳре,—терĕ.—Эпĕ йăлтах курса тăтăм вĕт. Апла пуçна та пĕр усăсăрах çапса çурăн, маншăн кашни çынах хаклă, уйрăмах унран чăн-чăн боец пулма пултарать пулсан“, терĕ.

Тепĕр кун боецсем мана пухура „тăн кĕртрĕç“. Эх, лекрĕ те вара ун чух мана! Ĕмĕрлĕхе асра юлчĕ. Ун пек мыскарасем манăн ĕмĕр тăршшĕнче те урăх пулман. Службăра хăюллă та харсăр пулнăшăн Василий Иванович мана икĕ хутчен наградăларĕ...

Полковник шăпланса, куçне хĕсрĕ.

— Шурă казаксем Лбищенск çине тапăнсан эпĕ Чапаевпа пĕрле çапăçрăм,—терĕ те вăл темле урăхла, ют сасăпа, шăпланчĕ.—Урал шывĕ патнелле чакнă чух,—терĕ унтан полковник,—Чапаева аллинчен амантрĕç. Анчах вăл хăй аманнине палăртмарĕ те. Урал шывĕ патне çитме нумай та юлманччĕ, хаярланса кайнă шурă казаксем, пирĕн вăй сахаллине сисрĕç те, тата хытăрах хĕсме пуçларĕç. Тăшман аллине чĕрĕлле лекиччен, шыва сикесси çеç юлнăччĕ.

Вунă хăлаç çӳлĕш çырантан анма тытăнтăмăр. Тăм та хăйăр, пусмассерен ишĕлсе анать... Аманнă боецсене бандитсем пăшал приклачĕсемпе çапа-çапа вĕлереççĕ...

Василий Иванович боецсен пĕр ушкăнĕпе тăшмана чарса тăрать.

„Ишĕр, ачасем, ишĕр!"—тесе хыттăн кăшкăрса юханшыв урлă ишсе каçакан боецсене хавхалантарать вăл.

Манăн патронсем пĕтрĕç, аманнă Чапаева хăварас килмерĕ, анчах вăл, камăн урăх пемелли юлман, çавсене пурне те хăй патĕнчен юханшыв тепĕр енне хăваларĕ.

Эпĕ Василий Иванович çине юлашки хут çаврăнса пăхрăм. Ун çийĕнчи аялти кĕпи çурăкчĕ, аллине çыхнă татăк витĕр юн сăрхăнса тухнăччĕ. Манăн куç хуралса килчĕ... Сивĕ те пăтранчăк шыва епле сикнине те астумастăп.

Шурă казаксем шывалла пулеметсемпе пĕр вĕçĕмсĕр переççĕ. Пульăсем маларах та, хыçаларах та, айккинерех те шеплетсе ӳкеççĕ. Нумайăшне тепĕр çыран патне çитес чух вилĕм хуса çитрĕ.

Çав тери ывăнса çитнĕскер, эпĕ юлашкинчен хăмăшсем патне ишсе çитрĕм те тăна çухатнă. Тăна кĕрсен, малтанах леш еннелле пăхрăм. Çӳлĕ çыранта никам та çук.

„Василий Иванович ăçта-ши?"—пăшăрханса пăхма пуçларăм эпĕ шыв çине.

Урал юханшывĕн лăпкă юхăмĕ мана тăхлан пек йывăррăн, хĕллехи ваккуçĕнчи пек сиввĕн курăнса кайрĕ...

Эпĕ пырса çитнĕ вăрманта çичĕ чапаевец тумтирĕсене типĕтеççĕ, пурте вĕсем командир вилни çинчен кала-кала параççĕ.

Эпĕ çакна ĕненмерĕм:

„Василий Иванович вилме пултараймасть!—терĕм.—Вăл лайăх ишетчĕ... Шуррисене парăнас çук вăл".

Анчах ачасем хăйсем те комдив вилнипе вилменнине тĕплĕн пĕлмен.

Эпир кунĕпех çыранта пултăмăр, Василий Ивановича шыраса мĕнпур хăмăшлăха ухтарса тухрăмăр. Каçхине ачасем Бударино ялне кайрĕç, эпĕ юлтăм. Манăн чĕремре кăштах шанчăк пурччĕ.

„Каçхине Василий Иванович Урал урлă ишсе каçĕ,—шухăшларăм эпĕ.—Кăнтăрла вăл ăçта та пулин пытаннă пулĕ-ха, каçхине тăшман ăна кураймасть. Пирĕн Чапай пултаруллă, хăюллă çын. Шуррисем ăна улталаймĕç!“

Каç пулчĕ, сивĕ те тĕттĕм каç.

Çыран хĕрринче вăрăммăн шăхăрса хăмăш кашлать. Эпĕ тăмлă тĕмеске çине хăпартăм. Типсе хытнă курăк урана чикет. Çĕрĕпех çавăнта ним курăнми тĕттĕмелле тинкерсе тăтăм.

Пĕр-икĕ хутчен çыран хĕрринче пулă шампăлтатса илчĕ,—кашнинчех эпĕ, çын ишсе килет пулĕ тесе, хăмăшсем патне чупса пыраттăм.

Мана пĕрмай, Василий Иванович шывран тухать те, эпĕ ăна хирĕç чупса пыратăп; унтан вăл çĕр çине ларса мана юлташла: „Ывăнтăм пăртак, аташ“,—теессĕн туйăнатчĕ.

Пĕрер сехет шыв хĕрринче кĕтсе тăнă хыççăн, эпĕ каллех тĕмеске çине таврăнса, сивве те, ывăннине те пăхмасăр, хуралти пек тăтăм.

Курăк хушшинче шыв чăххисем ĕсĕклесе макăрса илеççĕ,—вĕсем кăшкăрнине илтсен, çав тери чун йывăрланса килет, ыратса каять...

Йывăр хуйхă пуснипе çав тери салхулланса, ирхине эпĕ Бударино ялне утрăм. Нумай вăхăт эпĕ комдив вилнине хам ăшăмра ĕненмесĕр пурăнтăм, ун пек инкекпе ниепле те килĕшеймерĕм...

Губашин шăпах пулчĕ. Пĕр-ик минутран вăл, тем çинчен аса илнĕ пек, кĕсйинчен чĕлĕмне кăларчĕ, ăна васкасах табак тултарса туртса ячĕ.

Чĕркуççисене аллипе чăмăртаса ларакан Соловьев хĕвел аннă вăхăтри хĕрлĕрех сăнлă Атăл çине куç илмесĕр пăхса пычĕ.

Пăрахут хыттăн та вăрăммăн кăшкăрса ярсан тин Алексей Алексеевич хускалчĕ.

Пăрахут пристань патне çывхарать. Çăраланса кайнă пек ерипен хумханакан шыв çийĕн тĕлĕнмелле илемлĕ симĕс те çап-çамрăк çулçăллă юман туратти юхса иртет.

— Акă мĕнле вăл... пирĕн Чапаев, — терĕ Губашин, шухăша кайса. — Ĕмĕрне те манмĕ ăна совет халăхĕ. Нихçан та!





## ЮМАХ

Каç пулчĕ те, ял шăпланчĕ. Çуллахи вăхăтра ялсенче сайра хутран çеç çутă çутаççĕ: çитĕннисем хирти стансенчех çĕр каçаççĕ, ача-пăчасемпе карчăксем—ир выртаççĕ. Ял Совечĕпе колхоз правленийĕн чӳречисем кăна çутă.

Эпĕ халĕ анчах хиртен таврăнтăм та, хваттере кĕмесĕрех, колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермине шырама кайрăм. Мана хирĕç вăрăм çӳçлĕ питĕ çивĕч ача пырать. Вăл мана выльăх-чĕрлĕх фермине ăсатса хăварма пулчĕ.

— Унта сана кам кирлĕ вара?—ыйтрĕ вăл пĕрмай анса ларакан шалпар та вăрăм—ура кĕли таран çитекен йĕмне çĕкле-çĕкле.—Тен, Бузаев конюх кирлĕ пулĕ?

Эпĕ чăнах та Бузаев патне каятăп, терĕм.

Ача аллисемпе шаплаттарса çапса илчĕ те хаваслăн каласа хучĕ:

— Калатăп çапла тесе! Бузаев вăл манăн асатте. Вот! Вăл Чапаев патĕнче службăра тăнă. Ун аллинче тупăсем пулнă, хăй те тупăпа пенĕ. Ĕненместĕн?

Ача ман çине хаяррăн пăхрĕ.

— Ĕненетĕп-çке! Атя паллашар. Эсĕ мĕн ятлă?—терĕм эпĕ, ăна ачашшăн хулĕнчен тытса.

Манăн çĕнĕ тус самантрах çемçелчĕ те савăнсах хăйĕн ятне пĕлтерчĕ:

— Колька!—терĕ.

Тепĕр минутран вăл хăйĕн мĕнпур вăрттăн шухăшĕсене каласа пама пуçларĕ:

— Вунă çул вĕренмелли шкула пĕтеретĕп те, артиллери шкулне каятăп. Командир пулма вĕренетĕп. Çарта мĕн чухлĕ кăна тупă пур, çавсемпе пуринпе те хам командовать тăватăп. Чапаев пек!

Колька мана унăн аслашшĕ Чапаев çинчен çав тери хитре юмах пĕлнине, анчах та ăна вăл сайра хутра çеç каланине тата кашни çыннах каласа паманнине „вăрттăн“ пĕлтерчĕ.

Тĕттĕмленсен выльăх-чĕрлĕх фермине çитрĕмĕр. Карта леш енче тихасем кĕçенни, тулхăрни илтĕнет. Витен уçă алăкĕнчен тĕксĕм хунар çути курăнать.

Колька, хытă кăшкăрса, аслашшĕне чĕнчĕ.

Федор Борисович васкамасăр, çирĕп утăмпа утса пычĕ.

Пĕр-пĕрне сывлăх сунтăмăр, эпĕ хам мĕншĕн килни çинчен каласа патăм. Колька „летучая мышь“ хунар илсе килчĕ те, эпир виççĕмĕр никĕс тăпри çине кайса лартăмăр.

Федор Борисович çамрăк сăнлă-ха. Унăн куçĕсем çивĕч те хаваслă пăхаççĕ, сухалĕ пысăк та çăра, тĕллĕн-тĕллĕн çеç кăвакарнă пĕрчĕсем курăнкалаççĕ. Калаçма вăл вашават—илемлĕ те кулăшларах калаçать.

Вăл Чапаев çинчен аса илнисене çырса илнĕ хыççăн, эпĕ хайхи юмаха каласа кăтартма ыйтрăм. Бузаев чылайччен турткалашса тăчĕ. Колька та вара, ман хута кĕрсе, ăна ÿкĕтлеме пуçларĕ.

Юлашкинчен лешĕ килĕшрĕ.

— Ну, итле эппин,—терĕ Федор Борисович кулкаласа.—Анчах асту, мĕнле каласа паратăп, çавăн пекех çырса ил.

Унтан вăл Чапаев çинчен юмах ярса пачĕ.

* * *

Урал шывĕнче путман Чапай, çук, ăна çынсем çапла шухăшласа кăларнă. Урал урлă ишсе каçнă вăл, ахальтен мар ĕнтĕ ăна лайăх ишекенсен шутне кĕртнĕ. Ишсе каçать те, хайхи, ăна шурă казаксем хăвалама тытăнаççĕ.

Çивĕч çын пулнă Чапай!

Шуррисем ун хыççăн—юланутпа, вăл вĕсенчен—çуран, чупать те чупать вăрманпа. Ун пуçĕ çийĕн пульăсем шăхăра-шăхăра иртеççĕ, вăл пĕрре пĕшкĕнет, тепре кукленет, унтан каллех малалла чупать. Кĕçех Чапая хăваласа çитетчĕç. Анчах вăл чее тунă: упа шăтăкне кĕнĕ те пытанса ларнă. Шурă казаксем юнашарах вĕçтерсе иртсе каяççĕ— ăна асăрхамаççĕ те, вăл малалла тарнă пуль, тенĕ вĕсем. Чапай çав вăхăтра тухать те упа шăтăкĕнчен—вĕтлĕхри вăрттăн сукмакпа айккинелле вĕçтере парать. Тавра—сĕм вăрман. Нумай чупнă-и Чапай, сахал-и—калама хĕн... Анчах вăл вăрман хĕррине тухсан, хĕвел çеçенхир хыçне анса пытанма пуçланă.

Ун-кун пăхса илет те Чапай, курах каять— сылтăм енче юрта тăрать, инçех те мар лашасем çÿреççĕ. Вăл юрта патне пырать.

— Хуçи пур-и?—кăшкăрать вăл.

Никам та сасă памасть. Йĕри-тавра шăпах. Курăк чăштăртатни тата тӳпере тăрисем юрлани çеç илтĕнет.

Чапай каллех ыйтать:

— Кам кунта хуçи? Тух!

Юртăра кăшăртатни илтĕнсе каять, унтан ватă казах мĕкĕлтетсе тухать. Тухать те:

— Мĕн кирлĕ сана, çамрăк паттăр?—тет.

Чапай ăна хăй кам пулни çинчен каласа парать.

— Эпĕ—Чапаев, Василий Иванович,—тет вăл,—шуррисене хирĕç, ĕçхалăхĕ валли ирĕклĕ пурнăç тăвассишĕн кĕрешетĕп.

— Илтнĕ сан çинчен, илтнĕ,—тет старик.—Пысăк паттăр эсĕ, пĕтĕм тĕнче сана пĕлет. Чухăн çынсем пурте юратаççĕ сана—вырăссем те, казахсем те, тутарсем те, чăвашсем те.

Сасартăк старик пĕшкĕнсе хăлхипе çĕр çумне лăпчăнать те итлет. Унăн сăн-питĕнче вăл пăшăрханни палăрчĕ.

— Çапла-а,—тет вăл,—сана хăваласа килеççĕ... çывăхрах ĕнтĕ...

Старик юртине кĕрсе унтан пĕр катăк чăкăт, пĕр кăкшăм кăмăс илсе тухрĕ.

— Çи, ĕç хăвăртрах,—тет,—малалла мĕн тăвасси курăнĕ унта.

Çиет, ĕçет те Чапай, măйăхне шăлса илет, старик тата мĕн каласса кĕтет.

Старикĕ каллех çĕр çумне лăпчăнса выртать те итлеме пуçлать.

— Халĕ хаяр тăшмансем çывăхрах ĕнтĕ, часах вăрмантан вĕçтерсе тухĕç,—тет...—Лашисем вĕсен хытă чупаççĕ—пăлансем пек, пирĕн лашасем вара вĕсеннисенчен те хытăрах вĕçтереççĕ—кăйкăрсем пек!

Хăйĕн ватă урисем çине тăрать те хайхи старик, хы-ытă шăхăрса ярать, пĕтĕм çеçенхир янăраса каять. Пăхать Чапай—кĕтӳрен пĕр ăйăр вĕçтерсе килет, вăл ăйăр мĕн тери чаплă иккенне каласа пама та пĕлес çук. Çунса çеç тăрать, ăмăрĕ çинче—шурă çăлтăр, куçĕсем ăслă-ăслă—этемĕнни пек.

— Акă сана урхамах,—тет старик,—вăл сана пур инкекрен те хăтарĕ. Акă сана тата кĕмĕл хĕç, акă ылттăнланă пăшал—ил, вĕсем санăн чи çывăх тусусем пулĕç.

Çапла калать те старик, Чапая кĕмĕл хĕçпе ылттăнланă пăшал тыттарать.

— Утлан та—вăрман хĕррипе, пĕрмай сылтăмалла та сылтăмалла вĕçтер. Пилĕк каç, пилĕк кун вĕçтерсе пырăн, унтан Ту Ăмăрткайăкĕ ятлă çӳлĕ ту патне çитсе тухăн. Вăл ту çинчен никам та пĕлмест, эсĕ çавăнта пурăнăн. Чухăн халăха буржуйсем кӳрентерме пуçласан, ăна хĕн-хуртан хăтарăн.—Старик Чапая пырса виçĕ хутчен чуптăвать те:—Вĕçсе кай, ман çутă кăйкăрăм, тăшманусем çитсе килеççĕ!—тет.

Чапай хаклă йĕнер çине утланса ларса чĕлпĕрĕсене ярса тытать çеç—урхамахĕ, çиçĕм пек, вăрман хĕррипе вĕçтерет, çĕр çинче пĕлĕт пек тусан çеç çĕкленсе юлать.

Çав вăхăтра вăрмантан шурă казаксем тухаççĕ те тӳрех старик патне пыраççĕ:

— Ăçта кунта Чапай пытаннă?—теççĕ.

— Пĕлместĕп, ун пек çынна курман,—тет старик.

— Мĕнле вăл курман?!—кăшкăрса пăрахаççĕ шуррисем.—Ăçта кайса кĕчĕ вăл?

Йĕри-тавра йăлтах ухтарса тухаççĕ—юртине те, вăрмана та, анлă çеçенхире те, Чапая пурпĕр тупаймаççĕ. Офицерĕ вара хăйĕн салтакĕсене çапла хушать:

— Старике ӑвӑс ҫине ҫакса вӗлерӗр!—тет.

Ҫакаҫҫӗ те вӗлереҫҫӗ старике ӑвӑс ҫине, юртине ҫунтарса яраҫҫӗ. Хӑйсен генералӗ патне таврӑнсан вара: Чапай Урал шывӗнче путса вилнӗ, тесе пӗлтереҫҫӗ.

Чапай мӗнле паттӑрла ӗҫсем тунине Урал ҫеҫенхирӗсем ҫеҫ пӗлеҫҫӗ.

Тепӗр чух акӑ отряда тӑшмансем пӗтерсе тӑкаҫҫӗ тейӗн: вӑйӗ те чакса пырать унӑн, патронсем те пӗтнӗ,—сасартӑк Чапай вӗҫтерсе ҫитет. Хӑйӗн вутлӑ-ҫулӑмлӑ урхамахӗпе, кайӑк ҫинче вӗҫсе ҫитнӗ пек, пырса тухать те вӑл кӗмӗл хӗҫӗпе енчен енне сулма пуҫлать, бурки ҫеҫ вӗлкӗшсе вӗҫсе пырать.

— Ман хыҫҫӑн, боецсем!—тесе кӑшкӑрать те, тӑшман ҫине ҫӗмӗрен пек кӗрсе каять.

Хӗрлӗармеецсен шикленесси пӗтет, чӗрисене вут тивсе илнӗ тейӗн—вӗсем пурте пӗр ҫын пек, Чапай хыҫҫӑн атакӑна кӗрсе каяҫҫӗ. Эх, тураҫҫӗ вара, эх, тураҫҫӗ—тӑшмана пӗр сывӑ чун юлмиччен аркатаҫҫӗ.

Кайран, ҫапӑҫу пӗтсен, пӑхаҫҫӗ—Чапай ҫук та. Пулнӑ-и вӑл кунта чӑннипе—хӑйсем те пӗлмеҫҫӗ. Ҫапах нумайӑшӗ: Чапая куртӑмӑр, тесе ӗнентереҫҫӗ. Кӑкӑрӗ ҫинче унӑн халӗ пӗр орден мар—виҫҫӗ ӗнтӗ, теҫҫӗ.



1

Цена 2 руб.

В. БАНЫКИН

РАССКАЗЫ О ЧАПАЕВЕ

На чувашском языке

Чувашгосиздат — 1953